Л. Акаккăв



Ч..ВАШ...АЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР
Абонем. ащ. № 25.

Тăвашистат 1932 Шупашкар.

Леонит Акаккăв

# ХĂВАТ

(ҪĔРĔ ҪĔРЕСЕМ)

Сакăр карттинлă пйессă

ЧУВАШ ...АЯ
КН..ЖНАЯ ...ЛА.А
г. Чебо..сари Чуваш ...ой АССР
Абӧвем. ящ. № 25.

Ҫăвашсен патшалăх Истаттĕлстви
Шупашкар 1932

Автор Леонид Яковлевич Агаков.
Редактор Н. Васянка.
Техредактор В. Степанов (Ахтубей).
Послано в производство 22 мая 1932 г.
Сдано в набор 8 июня.
Подписано к печати 28 июня 1932 г.

Отпечатано в типографии № 2
Чувашгиза
в городе Алатыре, ЧАССР.

Чувашлит № 1444.

Тираж 3100 экз. Заказ № 1733.

# ПЙЕССĂРИ ÇЫНСЕМ

1. САВАРИН, АЛЕÇЕЙ ИВАНЂ—комунис, строиттĕлствă пуçлăхĕ.
2. УЛАНКАЙ МĔТРИ—çамрăк иншенер, комунис.
3. ВИКТĂРĂВ, АНАТТОЛИ ВИКТĂРĂВИЂ—аслă иншенер.
4. МАРИНĔН, КУÇМА ПЕТРОВĔЂ—иншенер, ватăрах.
5. ЛЕНА—унăн арăмĕ.
6. ТУПĂВ парт"йађейккă çекреттарĕ.
7. ЛУККИН—проф-ĕçлевçĕ.
8. ПЕТРОВ—комсомол орканисаттăрĕ.
9. АННА—савăтри клуп пуçлăхĕ.
10. ЛЕРМĂНТТАВ—кĕнђелерçĕ.
11. МАЊА—унăн тӳрри. Ленă йăмăкĕ.
12. ПРОНИН—квалификатсиллĕ рапођђи.
13. УÇĂН—теçетнĕк.
14. МИРОН—ватăрах рапођђи.
15. ИЛЛЕ ПИЂЂЕ
16. ВĔШЛЕ
17. ВАЊКА
18. ХУМА
19. АНФИС
20. МАРУК

(15–20) савăта колхосран пынисем.

21. АХМЕТ—тутар çамрăкĕ.
22. ТЕРЕНТТИ—Тутаркас йенђен пынă çамрăк.
23. ВЕНИАМИН—пуп ађи, савăта суйа хутсемпе кĕнĕскер.
24. МАТАПАЙККĂ
25. ЊОХ-ЊОХ

(24–25) кивĕлле шухăшлă „çесонисем“.

ЧУВАШ...АЯ КН...ЖНАЯ ПАЛАТА г. Чебоксары Чувашской АССР ... 25.

## 1.

# ÇУЛ ÇИНЂЕ

Тĕттĕм. Стантсăна ђасах пуйăс килессине пĕлтерекен ђан сасси илтĕнет. Паусă. Инçетре—пуйăс çывхарнă сасă. Вăл вăйлансӑх, çывхарсах пырат̆, унтан паравус кăшкăртса йарат̆ те, шăп пулат̆. Стсенă çутăлат̆.

Икке уйăрнă вакун. Икĕ йенђе те алăксем, пĕрер ђӳређе. Хыçалта—шав. Вăхăт—ир йенне. Ђӳређерен хаљ çеç тухакан хĕвел çутти ӳкет.

Сылтăма С а в а р и н портфĕлпе, сулахайа У л а н к а й инçетри çула кайакан çын пек ђăматансемпе кĕрсе вырнаçççĕ. Паусă. С а в а р и н ђӳређерен пăхса илет, унтан алăка уçса У л а н к а й çине пăхат̆. У л а н к а й ăна хирĕç пахат̆..

**Саварин.** Мит̆ук!

**Уланкай** (с и к с е т ă ђ ĕ). Алексей Иванђ!

**Саварин** (ђ у п с а т у х с а У л а н к а й ă н а л л и н е ђ ă м ă р т а т̆). Ăçта çăвара çухалса пурăнатăн есĕ?

**Уланкай.** Ниçта та çухалманçке...

**Саварин.** А ăçта пурăнтăн?

**Уланкай.** Ленинкратра вĕренсе пурăнтăм.

**Саварин.** Мĕнле шкулта? Пĕтертĕни?

**Уланкай** (к у л а р а х). Пĕтертĕм пулмалла...

**Саварин.** Хаљ ăçта кайатăн тата? Кӳрха, лар тавай, каласа кăтарт тĕпĕ-йĕрĕпе... Епĕ сана, мур ађине, пĕр пилĕк çул курманха вĕт. (П и р у с к ă л а р с а). Туртатăни?

**Уланкай.** Турткалатăп (ђ ĕ р т р ĕ ç).

**Саварин.** Ну, кала тавай. Мĕнле, ăçта çӳрерĕн есĕ... Мĕн турăн. Çирĕм улттăмĕш çулхипе танаштарсан—паллама та çук сана,—пађах улшăнса кайнă есĕ. Совççем урăх Мит̆ук пулса тăнă.

**Уланкай** (и м е н е р е х). Пулĕ, пулĕ... Ђылай вăхăт иртрĕ вĕт... Волкомра ĕçлеме пăрахнă хыççăн епĕ

топроводӡнӑ. Хӗрлӗ ҫарта пултӑм, унтан ҫур ҫул Шупашкарта ӗҫлерӗм, кайран инҫтиттута кӗтӗм Вӗренсе тухсан тепӗ рҫур ҫул практӗкра ӗҫлерӗм. Ӡылай вӑхӑт кирлӗ вӗт кӑна ваӡӡи... Хаӡ акӑ пуҫпех ӗҫлеме кайатӑп... (Хут кӑларса тыттарат).

**Саварин** (вулат). Пред'явитель сего... инженер-строитель... (Вулама пӑрахрӗ). Ах, вон йепле! Ну, Митук... (Вулат). Улангай Дмитрий Петрович, окончивший Ленинградский институт... направляется на работу..- (Картах сиксе илет). Митук! (Хут ҫине пӑхса илӡӗ). А ма тӳрех каламастӑн?

**Уланкай.** Мӗн?

**Саварин.** Ара, ман пата пыратӑн вӗт есӗ.

**Уланкай.** Мӗнле сан пата?

**Саварин.** Такки, ман пата. Вӗт кунта есӗ Сӑрсавӑтне тунӑ ҫӗре кайатӑн, тенӗ.

**Уланкай** (ӑнланмаст). Ҫапла. Мӗнех вара?

**Саварин.** А епӗ унта ӗҫлетӗп.

**Уланкай.** Ӡӑнахи? Кам унта есӗ?

**Саварин.** Асли, асли...

**Уланкай** (хавассӑн). Вот, сторӑвӑ. Пӗлмен епӗ! ЦСНХ-ра ыйтма та ӑс ҫитмерӗ пулас.. Еппин каллех пӗрле ӗҫлетпӗр?

**Саварин.** Ҫапла курӑнат. Тӗлӗнмелле... Есӗ нумай та пулмаст аӡаӡӡӗха вӗт. Так, пӗр шӗвӗрскер ӡупса ҫӳреттӗн... И вот... пошалттӗ—иншенер пулса тӑнӑ. Матур хаӡхи ҫамрӑксем. Премӑ матур... (Паусӑ). Волкомра ӗҫленӗ вӑхӑтсене астӑватӑн пуӡ?

**Уланкай.** Паллах, астӑватӑп. Ӑна манма та май ҫук. Нимрен ытла Ваҫкассинӡи ҫпеккуӡантсем ҫине оплавӑ тунине... Вилсен те виҫ кун астӑвӑн!

**Саварин.** Хӑшне калӑтӑн есӗ?

**Уланкай.** Леш... Астумастăним, çур йенне... Хамăра кулаксем çунтарса йама тăнине...

**Саварин.** А... Астурăм! Есĕ вĕçерĕнсе тарса милитсисем илсе пыман пулсан—тем те пулма пултаратђĕ çав. Сана пула çеç çăлăнтăмăр.

**Уланкай.** Вĕри, ой, вĕри кунсем пулђĕç...

**Саварин** (т ă ђ ĕ). Кунĕсем, Митук, халĕ те сивĕ мар. Тен, ун ђухнехинђен те вĕрирех. Стройккăна çитсен курăнха акă. Тепĕр ђухне, асăрханмасан, пиçсе кайма та пулат... (С а с а р т ă к ђ ў р е ђ е р е н п ă х а т). Митук! Пăравус ку стантсăра шыв илет, ытла ђас каймаст пулмалла. Вĕри шыв илсе килес мари?

**Уланкай.** Йуратђĕ пуљ вăл. Ђейнĕк пури санăн? (Т ă ђ ĕ).

**Саварин.** Çиђђас кайса килетĕп! (Ђ ă м а т а н ĕ н ђ е н ђ е й н ĕ к к ă л а р с а т у х с а ђ у п а т).

**Ађа сасси** (х ы ç а л т а). Хаçат кама кирлĕ? „Правда“, „Известия“, „Канаш“...

**Уланкай** (т у л а л л а). Пионер! Кўрха кунта, „Правда“ пар, Канаш... (Х а ç а т и л е т т е, в ĕ с е н е, п ă х к а л а м а т ы т ă н а т).

**Арçын сасси.** Акку вакун саççом пушă, краштанккă Кĕрери?

**Хĕрарăм сасси.** Йурĕ, кĕр. Анђах та, асăрханарах кĕр тархасшăн, ђăматана ватма пултаратăн...

**Уланкай** (с а с а р т ă к с а с ă й е н е л л е ç а в ă р ă н с а). Мĕн ку?

(Сылтăмри пайа ђăмантансем çĕкленĕ поççилшђĕк тата Л е н ă кĕреççĕ).

**Поççилшђĕк.** Каларăм вĕт пушă тесе! Хураси йапаласене?

**Лэнă.** Леререх иртха, 'кунта ыгла алăк патĕнђе аван мар.

(Сулахайалла тухаççĕ, Ленăна курсан Уланкай сиксе тăрат, Ленă ђакса ђăматанне ўкерет).

**Уланкай** (пĕр утăм малалла утса). Ленă..• Ăçтан килсе лекрĕн ес кунта?

**Лэнă** (калама тăрат, калаймаст, ђăматанне пĕшкĕнсе илет те, ноççилшђĕке çурăмĕнђен тĕртет). Ирг малалла... тепĕр вакуна... Кунта пире вађђи вырăн çук! (Кайаççĕ).

**Уланкай** (пĕр вăхăт ним те ђĕнмест, унтан йўççĕн кулса илет) Вырăн çук... Куратăн—тăвăр... Ха! (Паусă). Анђах та, мĕнле, ăçтан лекнĕ вăл кунта? (Тăсса). Орикиналлă пулђĕ. Театăрти пекех! (Шухăша кайат).

(Хыпкаланса Саварин ђупса кĕрет. Пăравус кăшкăртат те, урапа сассисем илтĕнеççĕ).

**Саварин** (ђейнĕке лартса ђўређерен пăхса илет). Карăмăр, Мигук! (Çимелл исене хатĕрлет)• Аран ĕлкĕртĕм, ђутах йулаттăмђђĕ пĕр усал карђăка пула. Çăмарта илтĕм те пĕр теçаткă, нимпе те кайалла памаст... Ну, кил çиме. Çăкăрĕ типерех панă та, пырĕ. (Уланкай çине пăхса). Мĕн пулђĕ сана? Пуç ырататим?

**Уланкай** (пырат). Çук, ыратмаст.

**Саварин.** Мĕн тага? Ыйхăларăни? Ак, çикелесен—выртса канăпăр, пĕр виç сехет йахăн каймаллаха пирĕн.

**Уланкай.** Пĕр хĕрарăм кĕрсе тухса карĕ кунта...

**Саварин.** Мĕнле хĕрарăм? Ăçта вăл?

**Уланкай.** Тахçан палланăскер... Çамрăк ђух.

**Саварин.** Вара ђеру тўрех ирĕлсе карĕ-и?

**Уланкай.** Çук! (Аллипе сулат). Кайран, хăçан та пулин каласа кăтартăпха тен. (Çиме тытăнат).

**Саварин.** Тĕлĕнетĕп епĕ. Кăҫухне хăщĕсем романсемпе трамăсем пит нумай тăваççĕ! Усси пилĕк пуслăх çук, а ĕçлеме кансĕрлет. Паҫах кирлĕ мар теместĕп ĕнтĕ, анҫах тĕприсем—ытлашши те... Ман шутпа, вăхăт çитсен—лайăхрах йулташ тупмалла та, пĕрлешмелле.

**Уланкай.** Тĕрĕс те пулĕ, Алекçей Иванҫ.

**Саварин.** А тĕрĕс пулмасăр! (К у л а т). Ну, вăл-ку çăва патнеха... (Паусă). Стройккăра пирĕн ĕçсем ытлах та ырламаллах марха, Митук.

**Уланкай.** Мĕнле апла?

**Саварин.** Çапла. Прорыв. Маттерйалсем çитмеççĕ. Çынсем çителĕклĕ мар. Ҫирлĕ шухăшсем пур. Хăшпĕрисем нумайрах илесшĕн—сахалтарах парасшăн. Пĕлетĕн ĕнтĕ—„çесоннĕксем"! Кивви туртат. Актив сахал, политтĕк, культçут ĕçĕ çукпа пĕрех.

**Уланкай.** Нимĕн те туманим вара ку таранҫҫен? Ун пекех пулсан, вăл пит те наҫарçке?

**Саварин.** А ес мĕн... Сотсиалисăма тумаллаха вĕт ăна, вăл çўлтен ўкекен йапала мар. Çĕнтерес пулат. (Паусă). Ес каланинҫе те тĕрĕсси пур. Ман умĕнхисене çавăнпа хăвалана та унтан...

**Уланкай.** Мĕншĕн? (Ç и м е п ă р а х с а ҫ ў р е ҫ е п а т н е п ы р с а т ă ҫ ĕ).

**Саварин** (ç и м е л л и с е н е п у ç т а р а т). Оппортунис лаҫакине кĕрсе ўкнĕ. Витĕш—çĕнтерейме вĕсем. Савăт хăйне хăй пуласса кĕтнĕ!

(Паусă).

**Уланкай.** Пĕр сăмахпа, Алекçей Иванҫ, ĕç нумай пулат, тетĕн еппин?

**Саварин** (т у м т и р н е с а р с а в ы р т а т). Сахал мар, Митук, сахал мар. Çак пилĕк-ултă кун хушшинҫе ĕçсем татах наҫарланман пулсан пыратха... Но—ниҫҫово.

Пољшевиксем илме пултарайман креппăçсем çук, тесе ахаљ каламастпăр вĕт. Акă, массăна ура çине вирлĕрех тăрататпăр та, пĕрлешӳллĕ вăйсемпе наступлени пуçласа йарса—пур йăвăрлăхсене те çавăрса çапатпăр.

**Уланкай.** Ну, а кăмантирсем мĕнле санăн унта?

**Саварин.** Пĕтĕмĕшпе илсен—пырат̆ темелле, анђах та... Ытлах та мар çав. Сăмахран, манăн самаçтиттĕл кирлĕ пекех вашават мар. Ĕçлессе ĕçлет ĕнтĕ, анђах ăна оркаписаттăр марри кансĕрлет..

**Уланкай** (л а р а т̆) Кам вăл?

**Саварин.** Ватăрах иншенер, Маринĕн йатлăскер.

**Уланкай** (т ă р у к). Маринĕн?

**Саварин.** Пĕлетĕним?

**Уланкай** (л ă п л а н м а т ă р ă ш с а). Таçта... илтнĕђђĕ... (А й а к а л л а). Авă мĕншĕн Ленă кунта иккен!

**Саварин** (в ы р т р ĕ). Ыттисем—пултараççĕ, темелле. Çамрăксем пыђĕçха йулашки вăхăтра. Вăйĕ вĕсен—ђакармаллăх та пур,'тĕрĕс йертсе пыр кăна... Ну, кан пăртак. Вырăна çитсен пĕтĕмпех курăнха.

**Уланкай.** Йурĕ еппин. Пĕтĕмпех курăпăр... (В ы р т а т̆).

(Пăравус кăшкăртрĕ те, ђарăнђĕ).

## СЫЛТĂМРА

**Вĕшле** (с ы л т ă м р и п а й а ђ у п с а к ĕ ђ ĕ, с а к с е м ç и н е п ă х к а л а с а и л ђ ĕ т е, т у л а л л а к ă ш к ă р ђ ĕ). Ађа-пђа-а! Кĕрĕр кунта, пĕр ђун та çук, вакун пуш-пушах!

(В а ђ к к а, Х у м а, И л л е п и ђ ђ е, А н ф и с, М а р у к тата 2-3 çамрăк кутамккасемпе, арђасемпе кереççĕ. Пуртасаксем çине вырнаçма тытăнаççĕ, тĕрткеленеççе, шавлаççе).

**Марук** (п ĕ р а й а л т и с а к н е й ы ш ă н с а). Анфис, кунта кил...

**Вађкка.** Мана йышăнмастăни? Арăмĕпе упăшки пек пулар!

**Марук.** Йышăнатăп. Ак, кĕрсе вырт! (С а к а й н е л л е к ă т а р т а т).

**Темиçен.** Ха-ха-ха!

**Ваљкка.** Ну уш, унта есĕ ху выртса ыр кур.

**Анфис.** Ес килĕшместĕни?

**Ваљкка.** Килĕшместĕп

**Марук.** Но-о? Атту килĕш...

**Ваљкка.** Ес мана ухмах тĕрĕним?

**Вĕшле** (ç и й е л т и с а к ç и н ђ е н). Аес ăслăи вара?

**Ваљкка.** Сан пек мар ĕнтĕ...

**Вĕшле.** Тухтăртан илнĕ справккă пури?

**Ваљкка.** Мĕнле справккă?

**Марук.** Ес ухмах марри çинђен ĕнентерекенни.

**Илле пиђђе** (т е п ĕ р с а к ç и н ђ е н). Çук унăн нимĕн тĕ!

**Пурте.** Ха-ха-ха.

**Хума** (ç ÿ л т и с а к ç и н ђ е н). Кил хам хыçа, Ваљкка.

**Вĕшле.** Пымаст унта вăл.

**Хума.** Ма?

**Вĕшле.** Аслашшĕ хыçĕнђе выртса та йăлăхрăм, тет...

**Пурте.** Ха ха-ха!

**Илле пиђђе** (ђ ÿ р е ђ е п а т ĕ н ђ и с а к ç и н ђ е н). Пĕтереççĕçке сана, Ваљкка.

**Ваљкка** (п у ç н е х ы ç а т). Ан та кала, Илле пиђђу.

**Илле пиђђе.** Кил хам пата. Сана ваљљи ĕç пур манăн. Шутла!

**Ваљкка.** Мĕн шутламалла? (П ы р с а л ă р а т).

**Илле пиђђе.** Прикатă расхуђĕнене. Ме сана хут, акă кăранташ. Еп каласа пыратăп. (В а ђ к к ĕ ш ĕ ĕ ç е т ы т ă н а ç ç ĕ).

**Вĕшле** (у р и с е м п е м а ђ ђ а н а т а п т а р с а). Ну, епĕ кун пек вырнаçнипе таçта хăйамата та çитме пултаратăп-

**Хума** (тепӗр йенҙен). Епӗ те санран йулмастӑп пулҙ, Вӗшле.

**Марук** (ҫӳлелле) Есӗр унта пӗр пӗринҙен иртме хӑтланса пирӗн пуҫ ҫине татӑлса ан анӑр тата!

**Вӗшле** (айалалла). Ҫук, Марйе Петровҙҙӑ, ун пек йапала пулассӑн туйӑнмаст. Ес пӗҙҙен пулсан—татах та шанма ҫук, а иккӗнлӗ ҫӗре—шапаш!

**Марук.** Килӗшместӗни?

**Вӗшле.** Ҫук.

**Марук.** Но-о? Атту килӗш!

**Вӗшле.** Ҫук! (Ҫаврӑнса выртат). Спаҫҫипӑ!

(Пӑравус кӑшкӑртат).

**Ваҥкка** (сиксе тӑрса ҙӳреҙерен тулалла пӑхрӗ). Ка-рӑмӑр, аҙа-пӑҙа!

**Илле пиҙҙе.** Ҙӑнахта ҫке!

**Ваҥкка** (тулаллах). Ой, ой! Пӑхха, Илле пиҙҙе, пӑхха... Пӑхха тетӗп, леш хайхи стантсӑра пӗр автан ҫисе йараканни ҙупат... Е-ей, тете-пиҙҙе, кунта кил! Ҙуп ҙасрах!

**Вӗшле** (вӑрахӑн йурласа йарат). Наш паравоз, летит впере-ед...

**Хума** (хутшӑнат). Комунра ҙарӑнатпӑр...

**Вӗшле.** Иного нет унас пути...

**Хума.** Аллӑмӑрта вингтовккӑ-ӑ!

**Ваҥкка** (тулаллах). Тыт тавай, тыт! Во-во-во... Пулҙӗ, пулҙӗ, пулҙӗ...

(Алӑкран хашкаса, арҙа ҫӗкленӗ Терентти кӗрсе тарат. Пурте ун ҫине пӑхаҫҫе).

**Терентти** (тавралла пӑхса). Кӗрме йораҙҙи ара конта?

**Вӗшле** (кулараx). Йо раҙҙӗ!

**Хума.** Кӗрҙҙӗ!

**Вĕшле.** Ларҫҫĕ!

**Пурте.** Ха-ха-ха!

**Терентти.** Ара, ме колаттăр сер?

**Хума** (йулташĕсем çине пăхкаласа илет). Сер-пер колмаспăр çке...

**Пурте.** Ха-ха-ха!

**Терентти.** Лепле колмастăр?

**Ваҫкка.** Сер хусамăр...

**Илле пиҫҫе** (Ваҫккана). Ҫарăн ĕнтĕ! (Теренттийе). Ăçта кайатăн есĕ, йулташ?

**Терентти.** Сăр саăтне тун çĕре ĕçлеме кайап.

**Ваҫкка.** Ăçтисем?

**Терентти.** Кĕçнерни панҫисам. Тотаркас районҫ еппин.

**Илле пиҫҫе.** Хăш йал?

**Терентти.** „Шуçăм колхосран. Сер хур ста кайаҫҫĕ тата?

**Ваҫкка.** Перте...

**Илле пиҫҫе.** Ҫарăн! (Теренттийĕ). Епĕр те çавăнтах кайатпăр.

**Терентти** (ларат). Портеи?

**Илле пиҫҫе.** Пурте.

**Терентти.** Стисам ара?

**Илле пиҫҫе.** Епĕр те сан пекех. Çак вăрман хыçĕнҫе „Октапĕр“ колхос пур.

**Терентти.** Мана та колхос йарҫĕ.

**Илле пиҫҫе** (Теренттийе хулпуççинҫен йулташла çапса илет). Апла пулсан, пĕрле пулатпăр! Ес мĕн йатлăха?

**Терентти.** Терентти теҫҫĕ мана. Вамили—Петтох.

**Хума.** Мĕскер тетĕн?

**Терентти** (ç ӳ л е л л е п ă х с а). Петтох! Ара, илменђи сер ун пек вамили? Ђăвашла каласан автан полат, вурсла—петтох ..

**Пурте** (а й к к а л а п ă р ă н с а к у л с а и л е ç ç ĕ).

**Илле пиђђе** (к ă м ă л л ă н к у л с а). Çапла, Терентти йулташ. Кăмăлу пулсан—пирĕнпе пĕрлешме пултаратăн: епĕр хамăр прикатă пулса ĕçлес, тетпĕр.

**Терентти**. Мана çоротно. Илетĕр пулсан кĕрме килĕшетĕп,—колхосранах мана çапла хошса йарса. Тођккă, пĕлимеспха вăл йĕркине...

**Илле пиђђе**. Йĕрки пит аван вăл! (Т е р е н т т и й е ă н л а н т а р м а т ы т ă н а т).

**Вађкка** (ђ ӳ р е ђ е р е н т у л а л л а п ă х а т). Ехе хей, уткăнђĕ те пирĕн пуйăс... Çунатлă `урхамах та хуса çитес çук!

**Вĕшле**. Тавай йурлатпăр, ађа пăђа!

**Хума**. Тавай! (А й а л а л л а). Хĕрсем, йурлатпăри?

**Анфис**. Пуçла, пирĕн ĕç ђарăнса тăмĕ.

**Вĕшле** (й у р ă п у ç л а т). — Юной армии бойцы
Новой жизни кузнецы...

**Пурте** (х у т ш ă н а ç ç ĕ).—Эй, эй веселей, веселей,
Мы с заводов и полей.
Долю новую куем,
Старый мир в штыки берем...
Эй, эй...
Мы на старый мир пойдем,
Эту песню запоем...
Эй, эй...

## СУЛАХАЙРА

**Саварин** (т ă р с а п и р у с т и в е р т е т т е, У л а н к а й а в ă р а т а т). Митук, тăр.

**Уланкай** (т ă р с а). Çитрĕмĕрим, Алекçей Иванђ?

**Саварин**. Ђас çитетпĕр ĕнтĕ.

**Уланкай** (с ы л т ă м а л л а к ă т а р т с а). Кунта камсем?

**Саварин**. Молотош! Çамрăксемсĕр пуçне вакунсем

çинђе камсем контсерт туса çӳрĕç ĕнтĕ? Хаваслăх вĕрет, çавăнпа йурлаççĕ те. Илтетĕни сăмаххисене...

**Уланкай.** Тĕрĕс. Ăçта кайаççĕ вĕсем—пĕлмерĕни есĕ?

**Саварин** Ыйхă тĕлĕшпе илтрĕм—таçта ĕçлеме кайаççĕ тет, анђах ђухласа илеймерĕм. Калаçса пăх, интересленетĕн пулсан,—хамăр халăх. Манăн темшĕн пушмак хĕсетха пăртак... (Пушмакне хыват).

**Уланкай.** Ђăнах, тухса паллашамха. Кам пĕлет, тен пирĕн пата! (Тухат).

## СЫЛТĂМРА

**Уланкай.** Сторовă, йулташсем!

**Илле пиђђе.** Сторовă, йулташ...

**Вĕшле.** Ђăн калатăн пулсан.

**Уланкай.** Таçта ĕçлеме кайаттăрим капла?

**Хума.** Ĕçлеме кайатпăр.

**Уланкай.** Ăçта çитиђђен?

**Хума.** Инçе мар—Сăр савăтне тунă çĕре.

**Уланкай.** Вон што! Пурте-и?

**Илле пиђђе.** Пурте çавăнта. А ес унти мар пуђске?

**Уланкай.** Унтийех мар та, унта кайатăп. Унти пулатăп ĕнтĕ—ĕçлеме йађĕç.

**Торэнгти** Лепле ĕçе? Писсăра штођ?

**Уланкай.** Çук, происвотствă тĕлĕшпе...

**Илле пиђђе.** Технĕк йыщши-и?

**Уланкай.** Çавăн пекки.

**Илле пиђђе.** Ларха еппин, апла пулсан, калаçăпăр. Пĕрешкел ĕç мар пулин те, тен пĕрле ĕçлемелле пулат, е?

**Уланкай.** Паллах ĕнтĕ, пĕрле.. (Ларат).

## СУЛАХАЙРА

**Виктăрăв** (хулпуççи урлă алшăлли çакса ђупса кĕрет, Саварина курнипе ђарăнат). Страстĕ, Алексей Иванăвиђ! (Кайма тăрат).

**Саварин** (т ă ҫ ĕ). Страстĕ... Ҫимха! Есĕ мĕншĕн кунта? Еп ăнланаймастăп...

**Виктăрăв.** Мĕне ăнланаймастăр?

**Саварин.** Есĕ ăҫта кайнă? Санăн савăтра пулмаллаҫке?

**Виктăрăв** (н и м л е м а р п у л с а, к у л м а т ă р ă ш с а). Епĕ... епĕ, Алекҫей Иванҫ.. Хамăн ĕҫсемпе пĕр кунлăх Хусана карăм.. Калама ҫук ĕҫ ҫас тумалли пурҫҫĕ.

**Саварин** (х ы т ă р а х). Кам отпăск паҫĕ сана?

**Виктăрăв.** Никам та паман, но...

**Саварин.** Еп нимĕн те ăнланаймастăп, Анаттоли Виктăрăвиҫ. Как еп ик-виҫ кунлăх ăҫта та пулин кайатăп—есĕ те йалан кайатăн. Мĕнле йăла вăл санăн? Вĕт есĕ происвотстăра ҫи кирлĕ ҫын...

**Виктăрăв.** Пĕлетĕп, Алекҫей Иванҫ... Но... сăлтавсене пĕлсен есĕр, паллах, мана пĕр сивĕ сăмах та калас ҫук... Епĕ сире кайран пĕтĕмпех каласа парăпха. (С ы л т ă м а л л а у т к ă н а т̆).

**Саварин** (п у ш м а к н е х ă в ă р т т ă х ă н а т̆). Тĕлĕнмелле ответсăр халăх! Йури тăваҫҫĕ тейĕн. Безобразие!

## СЫЛТĂМРА

**Уланкай** (а л ă к -у ҫ с а с ы л т ă м а л л а). Алекҫей Иванҫ, тухха кунта! (С а в а р и н т у х а т̆). Ку йулташсем ҫăнах та пирĕн савăта ĕҫлеме пыраҫҫĕ. Паллашăр, йулташсем. Ку—Сăр кăмпинат строиттĕлствин пуҫлăхĕ, Алекҫей Иванҫ Саварин,—а кăсем, Алекҫей Иванҫ—„Октапĕр“ колхосран пирĕн стройккăна йанă прикатă. Вĕсем тӳрех ҫĕнĕ майсемпе ĕҫлеме шутлаҫҫĕ!

**Саварин.** Питĕ аван, питĕ аван ку. Епĕр унта ҫакăн пек орканисатсиленнĕ рапоҫҫисене тахҫанах кĕтетпĕр, тахҫанах.

**Уланкай** (Илле пиђђе ҫине кăтартат̆). Ку йулташ—вĕсен аслийĕ, малтан парттисан пулнă, кайран колхос орканисаттăрĕсенђен пĕри.

**Саварин** (Илле пиђђене алă парат̆). Ун пек пулсан—питĕ хавас епĕ. Еҫлетпĕр еппин, ҫанăсене тавăрсах?

**Илле пиђђе**. Ĕҫлес тесе пыратпăр ҫав. Колхосра урхи ĕҫсене тирпелерĕмĕр те, сирĕн пата ĕҫлеме пырас терĕмĕр.

**Саварин**. Йакши, йакши, йулташсем... Епĕ есĕр йурланине илтсенех кăсем „простой“ халăх мар пулђ, терĕм.

**Илле пиђђе**. Е-е, йурлас тесен пирĕн ађасем ăста. Колхосра пирĕн тселăй хор ĕҫлет. Ĕҫрен тавăрăннă ђух тăсса йараҫҫĕ те вара, итлесе килленетĕн.

**Саварин**. Апла пулсан—ĕҫре те парăнмаҫҫĕ ĕнтĕ вĕсем...

**Илле пиђђе**. Парăнас шухăшсем ҫуккăха... (Калаҫаҫҫĕ).

**Вађкка** (ђӳређерен пăхса). Ађа-пăђа! Стантсă курăнат̆!

**Саварин**. Ҫитрĕмĕр еппин? Ат̆а, Мит̆ук. Ат̆ăр, йулташсем, карăмăр.

**Вађкка**. Ат̆ăр, йапаласене пуҫтарăр, ађа-пăђа!

Хăпăл-хапăл кайма хатĕрленеҫҫĕ, пăравуç кăшкăртат. Вурте сулахайри алăкпа тухма пĕрин хыҫҫăн тепри тăраççĕ. Илле пиђђе ђăн кайра, сылтăмри пайра тăрат. Пĕри хуллен „Молодая гвардия“ ĭурра пуҫлаç нарат. Сылтăмри алăкран Виктăрăв ђупса кĕрет, анђах ĕрт се кайма ҫукхипе ђарăнса тăрат. Илле ун ҫине питĕ хытă пăхма тытăнат.

**Виктăрăв** (Иллене). Ма пит пăхан? Палласа йулас тетĕним?

**Илле**. Так, пăхас килђĕ. Паллană пек туйăнђĕ.

**Виктăрăв.** Ман çире карттин çук, палласса та шансах каймастăп. (Хĕсĕнкелесе малалла хăвăрт иртсе кайат).

**Илле** (халăх йенелле). Тупата, таçта курнă епĕ ку çынна!.. Анђах ăçта курнине хаљ нийепле те аса илейместĕп...

(Самантлăх шухăша кайат, унтан ыттисем хыçне тăрса вырăнта утма пуçлат. Йурă вăйлансах пырат. „Мы, молодая гвардия, рабочих и крестьян“—тенĕ сăмахсемпе çирĕппĕн утса тухма пуçлаççĕ).

(Ђ А Р Ш А В).

## II.

## ПРОРЫВ, ПРОРЫВ!..

Строиттĕлства пуçлăхĕн капинеҫĕ. Икĕ ҫӳреҫе. Сĕтел. Телефон. Темиçе пукан. Револютси çулпуçĕсен санĕсем, савăт ӳкерҫĕкĕсем. Инçетре, вăрман ăшĕнҫе, тума пуçланă савăтăн корпăсĕсем курăнаççĕ.

Каçалапа. Сĕтел хушшинҫе Лермăнттăв хаçат тытса ларат.

**Лермăнттăв** (х а ç а т а  п ă р а х а т). Промфинплан та прорыв, ăмăрту та лотăрниҫҫĕства, колхэс та клас кĕрешĕвĕ... Пĕр сăмахпа каласан, култтурнăй етеме вуламалли те çук. Ех! (Т ă р с а  у т к а л а т,  т ă н л а в ĕ с е н е  с ă т ă р с а  и л е т). Çук! Йалăхтарса çитерҫĕ мана ку пурнăç... Таç та, пысăкрах хуласене туртăнас пулат пулмалла.

(Телефон ҫăнкăртатат).

**Лермăнттăв** (т р у п к ă н а  и л е т). Да. Итлетĕп. Çук, вăл мар. Лермăнттăв, Икнатти Çеменҫ калаçат. Мĕн? Калана сана—Саварин çук, комантировккăран тавăрăнман. Ну? Ертел ĕçлеме пăрахрĕ? Хак хуштарасшăн? Хм! Сталă пыт йӳнĕ тӳлетĕр, çавăнпа хуштарасшăн. Мĕн-мĕн? Ҫипертерех калаç! Санăн хăвăн пуç вырăнне арпус пулĕ. Манăн покка... Ху ухмах! (Т р у п к ă н а  п а р а х а т). Ҫорт! Кашни упăте хăратма хăтланат. Ертел ĕçлеме пăрахнă! Маншăн пулсан, хут те çак самантра мĕн пур рапоҫҫисем ĕçлеме пăрахҫăр! (К ă с й и н ҫ е н  т ĕ к ĕ р  к ă л а р с а  ç ӳ ç н е  й а к а т а т).

(Телефон ҫăнкăртатат).

**Лерм.** Каллех! (Т р у п к ă н а). Кантур итлет. Çуквăл. А? Кирпĕҫ пĕтрĕ, тегĕн? А вара мĕнха? Пĕтнĕ тĕк—

кĕтнĕ ĕнтĕ, кĕнђелер пуçлăхĕ Икнатти Çеменђ Лер мăнттăв кирпĕђ çуратма пултараймасŤ. Çук, çук... Пађ ђалнĕке кĕтĕр. Мойа хаттă с крайă!..

(Петров ђупса кĕрсе лараŤ).

**Петров.** Прорап ăçта?

**Лерм.** Çук вăл.

**Петров.** Çуккине хам та пĕлетĕп епĕ, ев мана вăл ăçтине кала.

**Лерм.** Отпускра.

**Петров.** Мĕнле отпуск пулма пултараŤ халђхи вăхăтра?

**Лерм.** Тусассăн—пулаŤ! Своя рука—владыка.

**Петров** (т а р х ă п а). Йумах йарса ан лар есĕ. Ес лĕпĕртетнине итлесе тăма вăхăт çук манăн. Тӳррипе кала—ăçта прорап?

**Лерм.** (т ă ђ ĕ). Во первых—еп хăравçă етем мар. Во вторых—санăн ман çине кăшкăрма пăртаккăх ӳсес пулатха. Ну, а в третьих...

**Петров.** Мĕн?

**Лерм.** Прорап Виктăрв темĕнле сăлтавпа Хусана кайнă, хăйĕн вырăнне Маринĕна хăварнă, а унăн пайав шăл ыратаŤ. Çитрĕ-и?

**Петров.** Ђорт пĕлет кунти ĕçсене. Плотнĕксен ертелĕ растсенкăсене йуратманнипе ĕçе пăрахнă, хăмаа çуракан тсеха тунă çĕрте пĕр кирпĕђ те йулман, ирушђĕксен пĕр ертелĕ ĕнертенпех ӳсĕр, тепĕр ертелĕ халђ киле кайма тытăннă.

**Лерманттăв** (а л л и п е в ы ђ а т с а и л ђ ĕ). Трудности роста, Петров йулташ! Пĕр философăф калашле—не об'ять необ'ятного. Пулă хӳринђен пĕçернĕ йашкапа хăвăртлăхсем тума питĕ йăвăр...

**Петров** (т и н к ĕ р с е п ă х р ĕ). Сволăђ есĕ! (Т у х с а к а р ĕ).

**Лёрм.** (сиксе тăђĕ). Ка-ам? Мĕншĕн? Ах, ты...
(Телефон ђăнкăртатрĕ).

**Лерм.** (трупкăна). Мĕн тата? Кам калаçат? Пристăнђ? Виçĕ паршă стройматтерйал килђĕ, тетĕн? Килђĕç тĕк—килнĕ пултăр! Мĕн? Пушатакан çук? А ен ăçтан тупам? Нађђалнĕксене кĕтĕр! Пĕлместĕп! (Трупкăна пăрахрĕ). К ђортту, кайатăп кунган! (Уткалама пуçларĕ). Мĕн еп, каттăршнĕк штолĕ çак сĕм вăрманта асапланса purăнма? Çитменнине тата сан çине çапни сопљак кăшкăрат. Çук, спаççипă. Лермăнттăв—суђттурнăй çын.

(Ђўређерен Маңђă пуçĕ курăнат).

**Маңђă.** Икнатти Çеменђ, кампа вăрçатăр есĕр?

**Лерм.** А-а, Муççă! (Аллине йарса тытрĕ). Ырă кун пултăр, саркайăк.

**Маңђă.** Есĕр такампа йатлаçнă пек туйăнђĕ мана, Икнатти Çеменђ.

**Лерм.** Çук, никампах та йатлаçманçке... (Еçлĕ çын пек). Телефонпа калаçса ăнран карăм. Понимайĕттĕ, епĕ халђ нађђалнĕкшĕн те, прорапшăн та, тем шуйттанĕшĕн те ĕçлетĕп!

**Маңђă** (тĕлĕнсе) Ну-у?.

**Лерм.** Да-да! Простă, савотит тунă мехханисăм пек каратăп телефонпа распорешенисем парса. Мансăр ниçта та ĕç тухмаст. Ђăнах та ĕнтĕ, вăл ман ĕç мар,'еп—кĕнђелер.. айккалла пăхса илђĕ) тиректăрĕ кăна, анђах та—кун ђăтмаст .Строиттĕлствăшăн ђĕренепама хатĕр вĕт епĕ!

**Маңђă.** Ђĕрене?

**Лерм.** Та, ђĕрене...

**Маңђă.** А мĕнле вăл? Стройттĕлствăна ђĕрене мĕнле пама пулат? Çын мар вĕт вăл? Ман шутпа, арçын хăйĕн вĕрине хĕрарăма çеç пама пултарат.

**Лерм.** Ку та тĕрĕс... Анҫах манăн ҫĕрере хĕрарăм валҌи тевырăн пур. Ăна епĕ... (Хыҫалалла пăхса илҫĕ). Ăна епĕ... Сана валҌи усратăп, Муҫҫă!

**Манҫă.** Ну, есĕр тем те калăр. Ĕненес килмест манăн...

**Лерм.** Ҫĕререн калатăп, Муҫҫă, пĕтĕм ҫунран.

(Телефон ҫанкăртатрĕ).

**Лерм.** (кайалла). Каллех, ҫорт воҫми! (Трункăна илет те, кăсйине ҫиксе хурат).

**Манҫă.** Епĕ, Икнатти Ҫеменҫ, сирĕнпе калаҫса татăлма килнĕҫҫĕ...

**Лерм.** Мĕн ҫинҫен, ҫунăм? Итлетĕп.

**Манҫă.** Каҫхине есĕр пушă пулатăри?

**Лерм.** Мĕн вăхăтра? (Ҫӳреҫерен тулалла уртăнса калаҫат).

(Тупăвпа Анна кĕҫĕҫ)

**Анна** (Тупăва ҫарса). Есĕ капла калани, Тупăв йулташ—ҫесоннĕксем хушшинҫи куҌтҫут ĕҫне хак паманни пулат вăл, урăх нимĕн те мар.

**Тупăв** (ларат). Акиттатси кирлĕ мар, Анна. Хамах пит лайăх пĕлетĕп ăна. КуҌтҫут ĕҫĕ кирлĕ, ăна тумалла, анҫах та епĕр пайанхи кун урлă сиксе каҫма пултараймастпăр. Мĕнле ăнланмастăн есĕ.

**Лерм.** (Манҫăпа сывпуллашат). Каҫҫен, Муҫҫă! (Тупăвпа Анна патнелле ҫаврăнса тăрат).

**Анна** (Тупăва). Вара хăҫанҫҫен кĕтмелле пулатха ĕнтĕ вăл клупа туса ҫитерессине? Пĕр уйăх-и, иккĕ-и, тен ҫулталăк...

**Тупăв.** Калăн есĕ! Нумай мар. Ну, тепĕр ерне... ХаҌ пуҫ ҫине капланса килнĕ ĕҫсене майлаштаратпăр та— ăна тăватпăр. Ху та пĕлетĕн вĕт халҌхи вăхăтра пирĕн умра мĕнле ĕҫсем тăнине.

**Анна** (папкине сулкаласа шухăшласа тăрат). Шуйттанла вăраха карĕ вăл ĕç...

**Лерм** Страстĕ, йулташсем.

**Анна.** Сторовă, поет... Лермăнтăв.

**Тупав.** (Аннапа Лермăнттăв çине пăхса илет) .Ку сторăвă! Хушамат ђăнах та пит хăватлă санăн, йулташ! (Кулат).

**Анна.** Мĕн каламалли пур! Анђах есĕ, Тупăв йулташ, вăл унăн йăхри хушамат тесе ан шухăшла тата,— малтан вăл Орттамăв хушаматлă пулнă, но... Кулђ-турнăй çынна Орттам хушаматпа çÿреме намăс пирки...

**Лерм.** (Аннана ђарат). Сăиран ыйтмаççĕ, вăл манăн лиђнăй ĕç...

**Анна** (сĕтел патнерех пырат). Ан хăра санăн лиђнăй ĕçÿсем мана ним тума та кирлĕ мар. Подумаешь герой любовник. (Тăрук). Ку мĕне пĕлтерет? Телефон трупкине мĕншĕн кăсйене ђиксе ларатăн есĕ?

**Тупăв** Мĕ-ён? (сиксе тăрат).

**Лерм.** (трупкăна сĕтел çине пăрахат). Пăнимайĕттĕ, пĕрмай ĕçлеме кансĕрлеççĕ те...

**Тупăв.** Ах, вон што! (Йÿççĕн). Аван, аван! Еппин, хут те темле ыйту пулсан та управленипе калаçма йурамаст? Ах ты...

**Анна.** Прохвост!

**Тупăв.** Пур çĕрте те прорыв, пур çĕрте те кашни минутрах пулăшу кирлĕ, а есĕ вăн мĕскер хăтланса ларатăн! Куншăн сана...

**Анна.** Простă, халех хăваласа йарас пулат.

**Лерм.** (хăраса ÿкнипе ним тума аптăрарĕ). Мĕн... мĕн турăм епĕ?.. Мĕншĕн есĕр ман çине ун пекех наппатат тăватăр?

(Уçăп ђупса кĕрет).

**Уçăп.** Пуçлăхсенђен кам пур кунта?

**Тупăв.** Кам кирлĕ сана? Мĕн пирки есĕ?

**Уçăп.** Пăрахатăп ĕçлеме! Пулмаст тек асапланса. Тĕлĕнсе каймалла! Савăтсенђе тăват-пилĕк çул ĕçлетĕп епĕ, анђах кун пеккине ниçта та курман. Нађђалнĕксенђен никкаккуй пулăшу та çук, а теçетски пĕђђен мĕн тума пултарат?

**Тупăв.** Ес ĕç çинђен калаха, мĕн пулђĕ.

**Уçăп.** А еп сана çăмарта хăпартни çинђен калатăп штођ? Калатăп, ўсĕр крушђĕксем ђутах хĕнесе тăкађђĕç.

**Тупăв.** Мĕншĕн?

**Уçăп.** Ерех ыйтаççĕ! Халех пĕр витре лартса памастăн тăк—виç кун ĕçлеместпĕр теме тапратрĕç пĕрисем...

**Тупăв.** Ăçта вăл, хăш тĕлте? Камсем?

**Уçăп.** Крушђĕксем, пристăђре! Тĕлĕнсе каймалла! Савăтсенђе епĕ тăват-пилĕк çул ĕçлетĕп ĕнтĕ, анђах кун пеккине ниçта та курман... Нађђалнĕкĕсенђен никаккуй пулăшу та çук, а теçетски пĕђђен мĕн тума пултарат?

**Тупăв** (*хăвăрт пирус тивертрĕ*). Ата, халех кайатпăр вĕсем патне.

**Анна.** Есĕ асăрханарах, Тупăв йулташ...

**Тупăв.** Мĕн?

**Анна.** Пĕрте-пĕр, вĕсем ытлашши ўсĕр пулсан...

**Тупăв.** А-а, ђĕпуха! Кун пеккине мар курнă. (*Уçăпа*). Карăмăр. (*Тухса карĕç. Анна та кайма тăђĕ*).

**Лерм** Йулташ Іђурă..

**Анна** (*саварăнса тăђĕ*). Мĕн кирлĕ?

**Лерм.** Епĕ тĕлĕнетĕп сиртен... Нивушлĕ кăшт çемçерех пулма май çук?..

**Анна.** Ес каллех йурату çинђен калатăни? Луђђă ан кала, йăлăхтарђĕ вăл мана.

**Лерм.** Çук, çук, епĕ ун çинђен мар... (Пауса). Мĕн çунă еп сире? Ма хăвалаттарса йарасшăн есĕр мана? Хĕрхенĕр, вĕт епĕ... епĕ...

**Анна.** Мĕн?

**Лерм.** Вĕт епĕ, йулташ Ђурă...

**Анна.** (йўççĕн). Ех, шапа! (Тухса карĕ).

**Лерм.** (çилĕпе). Вăн йепле! (Ђышкипе йунарĕ) Покоти еп сире! Манăн алла та лекĕрха. Епĕ вĕсене... (Ђарăнса). Мĕн епĕ вĕсене? Шуйттан пĕлет!

(Телефон ђанкăртатрĕ).

**Лерм.** (трупкăна) Кам? Мĕн? Кам кирлĕ? Лермăнтгăв, Икнатти Çеменђ! (Сасартăк çемçелђĕ). А-ах, есĕ-и ку, Муççĕђккă? Ну, ну... Итлетĕп. Какшĕ, какшĕ. Ну, каларăм вĕт сана. Пыратăп, о-пе-саттĕлнă пыратăп, ђунăм...

(Маринĕн кĕђĕ. Питне тутăрпа çыхнă).

**Маринĕн** (тўрех питне тытса уткалама тытăнђĕ). Йепле, шăллăм, мĕнле çĕнĕ хыпарсем пур? Пĕлместĕни—Алексей Иванђ хăçан килет. Килмеллеђ-ђĕçке вăл ку таранђђен. Ну, шăлсем тўсме çук ыратаççĕ..

**Лерм.** (трупкăна хуђĕ). Пĕлместĕп! Пĕлме те кăмăл çук.

**Маринĕн.** Ай! Мĕн пулђĕ тата сана?

**Лерм.** Скорă кайатăп кунтан. Йăлăхтарђĕ. Çитет. Тĕрĕссипе--еп вĕт тошĕ култтурнăй çын, тискер кайăк мар

**Маринĕн** (ђарăнса). Хăçан кулђттурланса карăн ара есĕ? Темле, епĕ сисеймерĕмçке ăна, шăллăм.

**Лерм.** Есĕ çав тери хулăн тирлĕ еппин. Асту—хăвăн çумăнта выртакан арăмна вăрласа кайнине сисмесĕр ан йул! (Алăк патне çитсе тăђĕ).

**Маринĕн.** Мĕн тетĕн есĕ?

**Лерм.** Арăмна лайăхрах сыхла, терĕм. Сывпул! (Тухса карĕ).

**Миринĕн** (тĕлĕнсе унталла кунталла пăхса тăрат). Ак тата! Ку пулманђђĕ! Мĕнле ăчланмалла кăна?

(Саварин, Уланкай Петров кĕђĕç).

**Петров** (пĕрмайах Саварин çулне картлат) Ĕçсем нађарлансах пыраççĕ, Алексей Иванђ. Темле, строиттĕлствăн хуçи çухалнă пек, рапођђисем кĕтÿççĕр кĕтÿ пулма пуçланă пек те туйăна пуçларĕ. Пайан епĕ иртенпех ђупатăп, анђах ниçта та кирлĕ çынсене тупмалла мар!

**Саварин** Илтрĕм, Петук, илтрĕм. Çитĕ. (Маринĕна алă парат). Страствуй, Куçма Петровђă. (Сĕтел хушшине ларат). Ну, мĕнле... Мĕн пулђĕ сана? (Сĕтелне уçса пăхат, хутсене тыткалат). Шăлсем? Ыратнă йенне ăшă компрес хур Иртсе кайат. (тарăнăн сывласа илђĕ) Так. (Уланкайа пăхса) Куçма Петровиђ, паллаш, ку пирĕн çĕнĕ иншенер Тимитри Петровиђ Уланкай.

**Маринĕн** (Уланкайа алă парат). Маринĕн.

**Уланкай**. Питĕ хавас. Уланкай.

**Саварин** (Уланкайа). Тавай, лар, Митук, сывлăш çавăр пăртак (Маринĕна). Ну, ĕçсем çинђен кала. Маттерйалсем мĕнле? Çавăнтан пуçла.

**Маринĕн**. Маттерйалсем килеççĕ. Каçхине тăватă паршă килђĕ. Пайан виççĕ, терĕç Унта кирпĕђ хăйăр, крави. Анђах, темшĕн, тсемĕнтпа исвĕç çаплах çук. Тем тумалла, нимĕн те шухăшласа тупаймастăп.

**Саварин.** Илсе килнисене пушатаççĕ-и, кунталла турттараççĕ-и?

**Маринĕн**. Питех те мар... Ĕнер, тем пирки кăнтăрлах ĕçлеме пăрахнă, терĕç. Шăл пирки кайаймарăм хам.

**Саварин.** Так. Тсемёнт çук, тетён еппин. Ниђђево. Скипитар савăтёнђен кивçен илёпёр. Вёсен халлёхе ытлашшипех пурха. Кайран паратпăр. Нађђалнёкне телефонпа ђёнсе калаçас пулат̆ кёçёр. Ну, а тимёр конструксисем мёнле? Хыпар пури?

**Маринён.** Нимён те çук, Алексей Иванђ.

**Саварин.** Йапăх! Питё йапăх! Ёç тухмаст̆, санăн ыранах Метталснапа тухса кайас пулат̆. Ку таранђђен вёсем пирён сайавккăсем çине мёншён ответ памаççё? Халех тийеттермелле. Татах вăраха йарсан—пёгетпёр.

**Маринён.** Йурё, кайăп.

(Т у п ă в кёрет).

**Тупăв.** Сторовă, Алексей Иванђ (а л п а р а т̆). Мёнле кайса килтён?

**Саварин.** Ёпе лайăх кайса килтём, анђах сирён кунта ёçсем питех мар пуласха.

**Тупăв.** Çапларах çав, Алексей Иванђ. Акă халђ çеç епё пристăне кайса килтём, унта крушђёксем пăтранма тапратнă.

**Саварин.** Мёнщён?

**Тупăв.** Пустуйшăн!

**Петров** (У л а н к а й п а л а р а к а н с к е р, с и к с е т ă р а т̆). Крушђёксем хушшинђе унта контр-револђутсионерсем нумай, ман шутпа.

**Тупăв.** Аплах каламалла мар та, ăрвађ йышшисем сахал мар, курăнат̆. Икё ертеле ёçе тытăнтартăм, а пёрисемпе ёç тухмарё—ытлашширех хёрнё, нимёнпе те килёшмеççё, растсенккă нађартарах! Хут̆ те мён ту вёсене!

**Саварин.** Так, так... (Петрова). Ну, а санăн ёç мёнле? Иксёмёр калаçнине астăватăни? Турăни есё мён те пулин?

**Петров.** Кунĕн-çĕрĕн ђупатăп, **Алексей Иванђ.**

**Саварин.** Ђупни мана кирлĕ мар вăл, есĕ мĕн туни çинђен кала.

**Петров.** Ĕç... Комсомолĕссене те нийепле те пурне палăртса çитерме çук. Пĕтĕмпе те пĕр вăтăр ытларах çеç тупрăмха.

**Саварин** Сахал! Ун ђухлĕ çеç пулма пултараймастӑ. Ак, халђ пирĕнпе пĕрле пĕр колхосран прикатипех килђĕç. Кĕçĕрех çавсене тупса калаç.

**Петров** Йурĕ.

**Маринĕн** (у т к а л а т). Ух, шуйттаи шăлĕсем...

**Саварин** (Т у п ă в а У л а н к а й й е н е л л е п у ç ĕ п е с у л с а). Паллашăр, пирĕн çĕнĕ иншенер—Уланкай, халђ çеç вусран... (У л а н к а й а). Ку пирĕн парторк, Тупăв, т е м с к е р ç ы р а т).

**Тупăв** (У л а н к а й й е н е л л е). Пирĕн пата килнĕ-и?

**Уланкай.** Сирĕн пата йађĕç... (А л ă п а р с а, к а л а ç н ă п е к т у с а т ă р а ç ç ĕ).

**Саварин** (М а р и н ĕ н а). Ну, Куçма Петровĕђ, командировккăна хăçан тухса кайма пултаратăн есĕ? Хăвăртрах кайсан авантарах пулатђĕ.

**Маринĕн.** Ыранах кайма пулат.

**Саварин.** Апла пулсан, хатĕрлен. Епĕ кирлĕ хутсене хатĕрлеттерĕп.

**Тупăв.** Питĕ лайăх, питĕ лайăх...

**Саварин** (ç ы р м а п ă р а х р ĕ). Халĕ ĕнтĕ... Есĕ, Петук, Уланкай йулташа паллашмалла, строиттĕлствă тăрăх илсе çӳрекелеха. Хамăн та каймалла та, пит ђас тумалли ĕç пур. Леш, колхосран килнисене те курма тăрăш.

**Петров.** Йурат, **Алексей Иванђ.** (**У л а н к а й а**). Кайатпăри?

**Уланкай.** Кайăпăр.

**Маринĕн** (ç а п л а х у т к а л а т). Ну, кун пек ыратĕ нине курман епĕ!

**Саварин** (Т у п ă в а). А есĕ йулха ваҕҕас. Калаçса илес пулат пирĕн.

(У л а н к а й п а П е т р о в алăк патне çитеççĕ те, вĕсене хирĕç Л е н ă керет. У л а н к а й та, Л е н ă та кайалла ҕакаççĕ. У л а н к а й П е т р о в а тĕртсе, хăвăрт тухат).

**Ленă** (У л а н к а й х ы ç ç ă н п ă х с а й у л а т, п ă л - х а н а т, а н ҕ а х п а л ă р т а с ш ă н м а р, в ы љ а т). Мĕншĕн хăрарĕ маиран ку çамрăк çын? Интереснă! Ха! (С а в а р и н п а Т у п ă в а). Ырă кун пултăр.

**Саварин** (п ă х м а с ă р а х). Страстĕ. (Т у п ă в а т е м ĕ н л е х у т с е м к ă т а р т а т).

**Ленă** (М а р и н ĕ н а). Старик, епĕ сана ҕĕнме килтĕм. Есĕ йерçетĕни? Ҕей ĕçмелле...

**Маринĕн.** Йерçетĕп. Атаха, ăшă компрес хур шăл çине... Атту, тупата, вилетĕп. (М а р и н ĕ н т у х а т, Л е н ă а л ă к р а ҕ а р ă н а т, С а в а р и н п а т н е п ы м а т ă р а т, а н ҕ а х, х ă й а й м а н н и п е, т у х с а к а й а т).

**Саварин** (ҕ ĕ л ĕ м т и в е р т с е). Çапла, Ваççук. Çак виç тăват кун хушшинҕе пирĕн пур йенҕен те татăклă улшăну тăвас пулат. Рапоҕҕисем йухăннине ҕармалла, маттерйалсем килсе тăрассине йĕркелемелле, .вĕсене вырăна çитермелле, ĕçĕн çĕнĕ формисем çине куçассине пуçламалла... Йепле шухăшлатăн есĕ?

**Тупăв.** Сан пекех шухăшлатăп. Сатаҕсем—паллă, вĕсене пурнăçа кĕртмелле, анҕах кăна ваљљи çулсем палăртас пулат. Ăçтан, мĕнле майсемпе...

**Саварин.** Проектсем пур манăн. Ме, акă .. Пăхса тух кĕçĕр. Ыран вара сӳтсе-йавăпăр... Ку—пĕр ре. Унтан, манăн тепĕр ыйту пур. Виктăрăв çинҕен мĕн шухăшлатăн есĕ? Вăл каллех—хăйĕн ирĕкĕпе тăçта кайнă. Пайан манпа пĕрле тавăрăнҕĕ. Асăрха: епĕ тухса кайсан—вăл йаланах çук...

**Тупăв**. Ђарас пулат̆. Иншенер тесе ђикĕсĕр-виçесĕр ирĕк пама йурамаст̆ ĕнтĕ. Вĕреннĕ çынсене хисеплетпĕр, анђах анарххи тума, каçарăр, Совет республĕкĕнђе никамăн та ирĕк çук.

**Саварин.** Темле, вăл етем пирки епĕ иккĕленме пуçларăмха темшĕн, шанђăклă çын пекех туйăнмаст̆ вăл мана. Ак, Маринĕн тени, вăл ватă çын ĕнтĕ, кивĕ шкул етемми, темелле ĕнтĕ, анђах вăл та пирĕншĕн Виктăрăвран çывăхрах çын пек туйăнат̆. Маринĕнра ĕçе йуратни ытларах пурри курăнат̆, вăл уçă ђĕреллĕ çын, а кăна, Виктăрăвне, ăнланма пит йăвăр. Темскер пур унăн ăшĕнђе, нийепле те пĕлмелле мар...

**Тупăв.** Ниђђово, Алексей Иванђ. Тăхта акă, çак кунсенђе, татăклă наступлени пуçланса кайсан, пурин сăн-сăпатне те лайăх палăртатпăр. Паллах вĕт, çынна вăл форменнăй картуспа çўренĕшĕнех вретиттĕл туса хума йурамаст̆. Ĕçре тĕрĕслес пулат̆. Пирĕн вăхăтра ĕçре сăнани puринђен малта пулмалла. Пирĕн ĕçшĕн пĕтĕм вăйне парат̆ пулсан, епĕр çынна хапăл тусах йышăнатпăр.

**Саварин.** Вăл çапли çапла та-ха...

**Тупăв.** А мĕн тата? Пурăнсан—курăпăр. А халĕ ĕçлемелле, ĕçлемелле. Ĕçлеме вăй пурха пирĕн, ырман, ырма та шухăшламастпăр...

(А н н а кĕрет).

**Тупăв** (**А н н а çине кăтартса**). Епĕр ырсан—çаксем тăрĕç пирĕн вырăна. Çапла-и, Анна?

**Анна.** Мĕн калатăн есĕ?

**Тупăв.** Матур хĕр, тетĕп сана.

**Анна** Ес манран йаланах кулатăн. (**С а в а р и н а  а л ă  п а р а т**). Мĕнле кайса килтĕр, Алексей Иванђ?

**Саварин** (**к у л а т̆**). Мĕншĕн пайан есĕр пурте пĕрех кел ыйтатăр? Йури канаш тунă, тейĕн. Аван кайса

килтĕм. Сире вађђи пĕр пит лайăх çамрăк иншенер илсе килтĕмха...

**Анна** (к у л с а). Спаççипă, илсе килтĕн пулсан. Анђах та мана хађ вăл интерес марха, урăххи пуçа çийет.

**Саварин.** Мĕн тата?

**Тупăв**. Унăн клуп тумалла.

**Анна** (Т у п ă в а). Тумалла марим тата? (С а в а р и н а). Тупăв йулташ рапоЂЂисем хушшинђи кулђт-çут ĕçне тивĕçлĕ хак парасшăн мар, Алексей Иванђ.

**Саварин** (к у л а р а х). Пĕлетĕп, Анна. Каларĕç ĕнтĕ мана еçĕ ăна пырĕнђен çавăрса илнине. НиђЂово, ыран пурин çинђен те калаçăпăр! (Х у ђ ĕ с е н е п ă х к а л а т).

(Ђўређерен Л е н ă пăхса иртет).

**Тупăв** (т ă ђ ĕ). Ну, пайанлăха йурĕ. Ата, Анна, урăх ĕç çук пулсан. Алексей Иванђ ĕçлетĕр, кансĕрлемĕпĕр.

**Саварин**. Манăн лармаллаха çав.,.

**Анна**. Ыран ман ыйтăва опесаттĕђнă кун йĕркине ларт еппин, Алексçей Иванăвиђ.

**Тупăв** (ç у р ă м ĕ н ђ е н л ă п к а с а). Лартат, лартат. Ăçтан йуратăр сан ыйтăва лартмасăр. Пета вăл çивĕђ хĕрсемпе!

(Тухса кайаççĕ. С а в а р и н ĕçлет. Татах тĕттĕмленђĕ. Хыçалта кайăк йуррисем илтĕнме пуçлареç. Инçетрен купăспа салху кĕвĕ калани илтĕнђĕ. Вăйлăрах, вăйлăрах...)

**Саварин** (ш ă р ç а п а х у р к а л а с а и л ђ ĕ т е, т ă ђ ĕ, ш у х ă ш а к а р ĕ). Çапла, снађђăт... Вçотăкки, тем пулсан та, çак кунсенђе перелом тăватпăрах!

Каллех ĕçлеме тытăнђĕ. Сасартăк купăс такмак кĕвви калама пуçларĕ, хăвăрт, хăвăрт йăнăшса илђĕ,—унтан ўсĕр йурă илтĕнђĕ:

Нам хотели запретить
По этой улице ходить!...
Наши запретители,
Чорта не хотите-ли...
И-эх!..

**Саварин** (сиксе тăрса ђўређе патнеђуиса ныђĕ). Ах, вон как! Чорта не хотителли. теççĕ... Çук, нумайах аташса пурнаймăр, кађђăсем. Ђаратпăр!

(Алăкран шаккарĕç).

**Саварин.** Кĕр, кам унта?

**Ленă** (хашкаса кĕђĕ). Каçарăр ђăрмантарнăшăн. Тавралла пăхса илет). Манăн сиртен ыйтмалли йурђђĕ, çавăнпа килтĕм.

**Саварин** (лăпкăн). Мĕн çинђен?

**Ленă.** Аван та мар та... Ĕсĕр толькка никама та ан калăр. (Тытăнса тăрат). Сирпе пĕрле килнĕ çамрăк çын кам вăл? Мĕн тума килђĕ кунта? Нумайлăха килђĕ-и?

**Саварин.** Мĕн... Йуратса пăрахрăни-м?

**Ленă** (ним тума пĕлмест). Çу-ук... Ахаљ, пĕлес килет. Пĕлме йурамасти вара?

**Саварин.** Ма йурамаст? Йурат... Вăл—инженер куита ĕçлеме килђĕ.

**Ленă.** Ах, вăн йепле... Ну, йурĕ. Каçарăр ђăрмантарнăшăн... Паллах, епĕ сирĕн çине шанатăп, Алексей Иванђ (хăвăрт тухса карĕ).

**Саварин.** Фу, ђорт! Нимĕн те ăнланмастăп!

(Ђ А Р Ш А В).

## III.

## АТТАККĂ ПУÇЛАНАТ.

Иккĕмĕш картти текоратсийех.

Виçкĕтеслĕхĕн сарлака ларăвĕ. Сĕтел хушшинђе С а в а р и н, Т у п ă в, айаккарах Л у к к и н лараççĕ. Ђŷређе патĕнђе В и к т ă р ă в таттисĕр ђĕлĕм туртса ларат. Сĕтел пуçĕнђе А н н а протоккол çырат. Алăк патĕнђерехре У л а н к а й, П е т р о в, И л л е п и ђ ђ е, тата 2-3 çын. Лару вĕçнелле сулăннă. Ђĕлĕм туртса тултарнă.

**Саварин** (в ĕ р и к а л а ç а т). Çапла вара, епĕр стройккăри ĕçсем нађарланса пынине куратпăр. Халех, пĕр самант тăхтамасăрах, вирлĕ наступлени пуçламалла. Манма йурамаст—стройккăри прорывшăн пĕђђен-иккĕн мар, епĕр пурсăмăр та ответ тытатпăр. Епĕр, йулташсем, халĕ пĕтĕм ђăваш ĕçхалăхĕ умĕнђе, парттипе правиттĕлствă умĕнђе парăмра! Прорыва пĕтерессн—пирĕн класлă ђыс ĕçĕ.

**Сасă.** Есĕ ĕç вăйĕ çинђен калаха тата.

**Саварин.** Калатăп. Йулашки вăхăтра пирĕн ĕç вăйĕ ђăнах та питĕ йухăнат. Паллах ĕнтĕ—çесоннĕксем стройккăран тарни ĕнтĕ...

**Сасă.** Контр-револђутси!

**Саварин.** Çапла, клас сатађĕсене ăнланса илейменнипе тăвакан контр-револђутси теме те йурат. Анђах кунта тымарсене хыпаласа пăхмалла. Сăлтавĕ мĕнре? Пуринђен малтан ку вăл—раłођђисем хушшинђе кайа йулнă шухăшсем пурринђен, тата кулак таврашĕсенђен килет. Кунта ĕнтĕ икĕ фронтпа краштăн вăрçи пуçланса кайат. Пĕр йенђен—кивĕлле шухăшсене хирĕç. Тепĕр йенђен—кулакла елементсене хирĕç. Вăл кĕрешĕве çирĕппĕн органисатсилесе туса пырас пулат, кунта полђ-

шевикла тактĕккă кирлĕ. Тупăв йулташ кĕрешў майĕсене каласа паӟĕ. Тĕрĕс каларĕ. Ман шутпа та, çак çывăх кунсенӟе пĕтĕм рапоӟӟисен массинӟен ӟи лайăххисене суйласа...

**Луккин.** Лайăххисем хăшĕсем вĕсем?

**Саварин.** Пирĕн профрапотникĕн ку таранӟӟен ăна пĕлме тивĕç ĕнтĕ. Лайăххисем тесе епĕр хăйĕн клас интересĕсене ăнланакансене калатпăр.

**Луккин.** Ăçтан паллатăнха вĕсене?

**Тупăв.** Ӟарăн, Луккин йулташ.

**Сасă.** Каласа пĕтерме парăрсам!

**Саварин.** Çапла ĕнтĕ, çесоннĕксем хушшинӟен ӟи соснаттĕљнăйсене пухса, çирĕп ӟăмăр тумалла. Ку пуринӟен малтан. Вĕсене ӟи вăйсăр, пулăшу ытларах кирлĕ уӟасткăсене тăратмалла. Вăл прикатăсем пурне те пример кăтартса, çĕнĕ формăсемпе ĕçлеӟӟĕр, пур йурăхсăр йăласене хирĕç çапăçӟăр. Вĕсен пуриншĕн те пукçир пулмалла. Ĕçшĕн тўлессине илсен—епĕр кунта çтелщӟĕнă йĕркипе пырăпăр, кунсăр пуçне пирĕн кашни вирлĕ ĕçлекен прикатă, кашни рапоӟӟи премии илсе пырĕ. Сотсиалисăмлă ăмăрту, утарниӟĕствă, çтелшӟĕнă—хăватлă твикăттĕлсем пулса тăраççĕ. Вĕсем пирĕн патра та çаплах пулмалла. Урăх майсем курмастăп епĕ (л а р ӟ ĕ).

**Тупăв.** Тата кам калаçас тет?

**Луккин** (а л л и н е ç ĕ к л е р ĕ). Парха мана.

**Тупăв.** Кала.

**Луккин.** Конешнă, йулташсем, епĕ Саварин йулташпа килĕшетĕп. Лайăх каларĕ вăл. Но,—тўрех калас пулат, ытла пĕтĕмпех мар. Епĕ, как конешнă профсойус рапотнĕкĕ, манăн рапоӟӟисен интересĕсене сыхламалла. Ӟирккуљарсем мана веçех çапла хушаççĕ, например...

**Петров**. Ёç çинђен кала есĕ. Ђирккуљар вăл—хут.

**Сасă.** Профсойус сатађне ăнланмастăн пулас есĕ.

**Луккин** (Тупăва). Ђарăр тархасшăн çаксене!

**Тупăв** (кăранташпа шаккаť). Аťа, кала малалла.

**Луккин.** Конешнă, прорыва пĕтермелле, Пĕлетпĕр ăна. Анђах та, нимрен малтан, конешнă лайăх условисем тăвас пулаť. Калăпăр акă: пирĕн рапођђисем мĕнле пурăнаççĕ, ăçта пирĕн ĕç хыççăн кирлĕ пек канмалли вырăнсем? Ăçта лайăх апат çитерекен столовăйсем? Калăпăр, рапођђисем хăйсем ĕçленĕ укçана мĕншĕн темиçе кун кайа йулса илеççĕ? Камăн ĕçлес килтĕр капла? Рас манăн пурнăç канлĕ те ђипер мар, мĕн мурĕшĕн ĕçлетĕп епĕ? Напљеваť,—рапођђи урăх çĕрте лайăхраххине тупма пултараť. Вот вĕт...

**Сасă.** Тупăв, сăмах ан пар ăна! Мĕн лĕпĕртетет вăл?

**Луккин.** Хуť те мĕнле...

**Петров.** Тайха мана! Еп çамрăксен йађĕпе калатăп.

**Тупăв**. Ђар ăн, Пеťук! (Луккина). Пĕтрĕ-и санăн?

**Сасă.** Памалла мар Луккина! (Лараť).

**Саварин**. Каласа пĕтертĕр ĕнтĕ, илтменђђĕха епĕр ăна.

**Луккин**. Есĕр, йулташсем, ытлашши ан вĕриленĕр. Мана хăратма хĕн. Епĕ, тен, хам та рапођђи пулнă çын! Çунатлă сăмахсемпе йалкăшма лайăх вĕрентĕмĕр епĕр... Пурте, конешнă, пĕлетпĕр ĕнтĕ „сотсиалисăм", „клас сăмахсене вĕçтерме...

**Петров**. Конкретлăрах калама йурамасти?

**Луккин.** Питĕ конкретлă. Анђах та, ĕç патне çитсе тăрсан, çунатлă сăмах вĕçтерекенсем, конешнă, ђас ђасах нимĕн те тăвайманççĕ. Сăмахпа—о-р-о, епĕр тăватпăр, кăслă соснанине хăпартса йаратпăр, ăмартатпăр! Анђах та,—епĕ, конешнă, рапођђисенђе нимĕнле каслă соснани вĕренине курмарăмха ку та таранђђен. Сăмахсем

[library stamp]

кăна! (Саварина пăхса). Çавăнпа та, вăл р-револьутсиллĕ сăмахсене пăрахма сĕнетĕп. Ман шутпа, конешнă, пирĕн пуçлăхсен ĕç çине урăхла пăхас пулат...

**Саварин**. А ну, конешнă, мĕнлерех пăхмаллаха?

**Луккин**. Епĕ, как профсойус рапотнĕкĕ, калатăп. услови кирлĕ. Штопă малтан, пуринђен, нимрен малтан пурнăç условисем круком 100 прођђăн пулђђăр. Пурте пултăр. Ку—нимрен малтан, как скасат. Кайран вара, конешнă, ĕç çинђен те калаçма пулĕ. Вот!

**Петров**. Парха мана!

**Тупăв.** Тăхта! Виктăрăв йулташ каласшăнђђĕ пулмалла...

**Виктăрăв**. Çапла. (Тăђĕ). Епĕ... Нумай калаçма пĕлекен çын мар... (Ӳсĕрђĕ, йусанкаларĕ, тавралла пăхрĕ). Кĕскен калатăп... Манăн шутпа, хисеплĕ йулташсем, Луккин йулташăн сăмаххинђе ђăнни çук мар. Пур. Песусловнă, условисем кирлĕ, хаљхи пек йапăх условисенђе епĕр сотсиалисăм нумайах тума пултараймăпăр. Ку—тĕрĕс... Анђах, хисеплĕ йулташсем, епĕ тепĕр йапала çинђе ђаранса тăрасшăн...

**Саварин** Калаха, Анаттоли Виктăрăвиђ...

**Виктăрав**. Манăн шутпа, хисеплĕ йулташсем, кунта пĕтĕм ĕç—рапођђисен кађђĕствинђе. Вот имĕннă—кађђĕствинђе! Тӳрех каламалла, ку пуриншĕн те песусловнă паллă—ĕç ваљљи вăй кирлĕ. Трен-трен, урисене аран сĕтĕрсе сӳрекен çынран вăл ăнăçла ĕçлессине кĕтме çук Сывă, вăйлă, тĕреклĕ çын çеç пултаруллă ĕçлеме пултарат .. Çапла и?

**Тупăв** Çапла, тейĕпĕр.

**Виктăрăв**. Çапла! Халĕ, хисеплĕ йулташсем, пирĕн рапођђисем çине лайăхрах пăхар... Пури вĕсем хушшинђе еп калană пек çынсем? Ун пеккисем—çук. Хаљ çеç

кăмака çинҫен анса килнĕ ҫăвашсенҫен пултаруллă ĕç пулассине.. Темле каламалла, йулташсем... (Т а в р а л л а п ă х р ĕ, й у с а н к а л а р ĕ). Ман шутпа—кĕтме çук.

**Саварин** (п ă л х а н а т). Ҫăвашсем... ĕçлеме пултараймаççĕ еппин?

**Петров.** Шовинисăм!

**Виктăрăв** (ç а м к и н е т у т ă р п а ш ă л а т). Каçарăр, йулташсем, анҫах епĕ хамăн сăмаха пĕтерейммерĕмха.

**Илле пиҫҫе** (с и к с е т ă ҫ ĕ). Мана! Мана самах парха!

**Тупăв.** Лăпланăр! Каласа пĕтертĕр!

**Виктăрăв** (к у л а н ç и п у л а т). Куратăп—манăн сăмахсем килĕшмерĕç сире.., Тен, епĕ йăнăшатăп пулĕ, анҫах та... (В и р л ĕ н). Вăл—ҫăн, епĕ хам сăмахсемшĕн ответ тытатăп. Епĕ нумайранпа ĕçлетĕп, нумай йышши рапоҫҫисем курнă. Анҫах ҫăвашсем пек мĕшĕлтетсе, аран-аран, ĕçрен хăраса, йăвăçран тунă аласемпе ĕçленĕ пек ĕçленине ниçта та курман епĕ. Епĕ çапла шухăшлатăп: пирĕн пайанхи сатаҫ вăл—йепле пулсан та хăвăртрах хамăр савăта ытти вырăнсенҫен рапоҫҫисем илсе килесси. Ăна хăвăртрах тăвас пулат, хисеплĕ йулташсем. Строиттĕлствăна хăвăртлатмалли урăх май курмастăп епĕ. Анҫах, кунта çакна калас пулат: ĕçе лайăх, хăвăрт, тĕплĕ тăвакан рапоҫҫи вăл—пирĕн ҫăваш мар. Вăл—расна çын. Вăл, йулташсем, пĕр çăмарга çинипе икĕ кун пурăнма пултараймаст. Ăна ĕçшĕн те хаклăрах тӳлес пулат, тата вăл... етемле условисем ыйтат. Кунта ĕнтĕ епĕ Луккин йулташăн шухăшĕсем майлă пулса тăратăп. Вĕсем, ман шутпа тĕрĕс .(Л а р с а п и р у с т и в е р т р ĕ).

**Илле пиҫҫе** (к ă ш к ă р а т). Парăрха мана! Парăрха, сăмах калам!

**Тупăв.** Тăхтаха, йулташ...

**Илле пиђђе**. Тăхтаса тăмалли çук Халех каламалла!

**Петров**. Пар рапођђисене!

**Тупăв** Уланкай йулташ, есĕ каласшăнђђĕ мари?

**Уланкай**. Рапођђисем калађђăр малтан.

**Тупăв** (Илле пиђђене). Кала, йулташ!

**Илле пиђђе**. Калатăп! (Сĕтел патне ђупса тухрĕ). Акă мĕн калатăп. Иншенер елеклет. Тĕрĕс мар сăмах калат вăл!

**Тупăв**. Йерипентерех, йулташ, вĕриленме кирлĕ мар

**Илле пиђђе**. Ђăтаймастăп! Çакăнта, ђĕре патне. тулса ларђĕ. (Виктăрăв патнелле). Кала есĕ, ăçтан туртса кăлартăн вăл шухăшсене? Кам каларĕ сана ђăвашсем ĕçлеме пултараймаççĕ тесе? Кала—кам каларе, епĕ ăна мĕнпур халăх умĕнђе кусĕнђен сурам. (Сывласа илђĕ). Ниправтă, йулташсем! Çук! Ђăвашсем ĕçлеме пултараççĕ, ĕçре никамран та йулмаççĕ. Ĕлĕк те йулман, хаљ те йулмаççĕ. Елĕкхи вăхăтра, патшапа пуйансен пусмарĕнђе пурăннă ђух, пир аттесемпе асаттесем хăйсен ĕçĕпе нумай харам пырсене арантарнă, вĕсене ваљљи ĕмĕр пурăнмаллăх пуйанлăхсем туса панă. Ĕçленĕ, пилĕкĕсене çывăрма-тăма пĕлмесĕр авнă. Та! Ирĕклĕхшĕн çапăçнă çĕрте те ђăвашсем ытти халăхсенђен йулман. (Кĕпе тӳмисене татса кăкăрне уçрĕ). Куратăни—хĕрес? Ахаљ пулнă йапала тетĕни ăна?

**Виктăрăв** (трук сиксе тăрса кайалла ђакрĕ). Мĕн вăл?

**Илле пиђђе**. Ма хăратăн? (Лăпкăн). Мана ăна, Çĕпĕрте шуррисен контрраçветки аллине лексен пĕр офитсер хĕргнĕ киншал вĕçĕпе туса йађĕ... (Вăрăмăн сывласа илђĕ). Мĕншĕнха вара епĕр хаљ йурăхсăра тухрăмăр? Мĕншĕн епĕр ытти халăхсемпе пĕрле çапăçса илнĕ ирĕк çĕршывра хамăра ваљљи çĕнĕ пурнăç

мастпăр пулат? Тен, пирĕн пуршуйсем патне кайса пуçсапмалла? Çук! Ниçта та каймалла мар. Хамăрах тăватпăр! (Ђышкисене ђăмăртаса кăтартрĕ). Çак алăсенђе вăй сахал марха, çитмелле. Вот ман сăмах!

(Нумайĕшĕ алă çупаççĕ).

**Петров**. Матур, Илле пиђђе!

**Тупăв**. Молотетс, йулташ!

**Саварин**. Йаланах çапла кирлĕ!

**Уланкай**. Сăмах парăрха...

**Анна** (Тупăва). Уланкайа сăмах...

**Тупăв**. Кала!

**Уланкай**. Тупăв йулташпа Алексей Иванђ прорыва пĕтерме тĕрĕс çул палăртрĕс, ку йулташ (Илле пиђђе сине кăтартрĕ) вĕсем каланисене çирĕплетсе пађĕ. Луккинпа Виктăрăв йулташсен йăнăш шухăшĕсене—ответ памаллах. Луккин хăйне кашни сăмахрах профсойус рапотнĕкĕ тет, анђах вăл профсойусăн сатаđне ăнланмаст. Мĕне пĕлтеретха унăн „условисем тăвас" теорийĕ? Вăл—пĕтĕм строиттĕлствăна ђарса лартас, тени пулат. Еçлес мар, анђах пире аван пултăрђђĕ... Епĕр ыйтăва кун пек лартма пултараймастпăр. Ђăнах та, условисене аванлатассишĕн кĕрешмелле мар теместпĕр, анђах ку кĕрешĕве строиттĕлствăпа пĕрле, пĕр вăхăтра тумалла. Çапла тăватпăр та. Йăвăрлăхсене епĕр ĕçленĕ вăхăтрах, ĕçе ђармасăрах, на ходу пĕтерсе пыратпăр!

**Саварин**. Тĕрĕс калатăн, Митук!

**Уланкай**. Халĕ—Виктăрăв йулташăн „проекђĕ" çинђен. Епĕ пĕлместĕп... Тен, вăл урăхларах каласшăнђђĕ...

**Виктăрăв**. Çаплах каласшăнђђĕ!

**Уланкай**. Апла пулсан, вăл шухăшсем пирĕн парттипе совет влаçĕн натси политтĕкне хирĕç пыракан шовинисла шухăшсем тесе хак пама тивет.

**Петров.** Тĕрĕс! Епĕ паçăрах шовинисăм, терĕм!

**Уланкай.** Совет сойусĕ, йулташсем, тĕрлĕ халăхсен тăванлă сойусĕ, вĕсем компартти йертсе пынипе пĕрлешсе 17-мĕш çулта револутси турĕç, халĕ сотсиалисăм тăваççĕ. Çавăнпа та, пĕрисем пултараççĕ, тепри пултараймаççĕ тени—калама çук пысăк йăнăш, ун пек шухăшсем—сийенлĕ. Совет сойусĕнчи пур халăхсем те пĕр тан. Чăнах та, хăшпĕр халăхсем култтурлăх, пĕлӳ тĕлĕшĕнчен кайа йулнă, анчах вĕсене ыттисем, малтарахра пыракансем пулăшса пыраççĕ, тата парттин натсиполиттĕкĕ вĕсене пур йенчен те ӳсме пулăшат. Виктăрăв йулташ шучĕпе, чăвашсене ĕçрен хăваласа йамалла кăна, мĕншĕн тесен вĕсем вырăссем пек ĕçлеймеççĕ. Анчах, кунта чăвашсем çеç ĕçлемеççĕ вĕт, кунта мăкшăсем, çармăссем, тата ыттисем те пур. Тен, вĕсене те хăваламалла? Вĕсем те ĕлĕки вăхăтра квалификатсиилмен,—промышлĕннăçа хал тин хутшăнаççĕ.. Паллах, кун пек тума йурамаст! Хăшпĕр рапочисем—чăваш-и вăл, мăкшă-и, çармăс-и—ĕçе пĕлсех каймаççĕ пулсан—вĕсене вĕрентес пулат, пулăшмалла. Пирĕн сатач—натсиллĕ пролеттариат тăвасси. Енерхи вакпуршуаллă шухăшлă, конçерваттивлă хресченрен, пайанхи колхоçнĕкрен ыран пирĕн клас сатачĕсене ăнланса илнĕ, тата технĕккăна пĕлекен пролеттари тумалла. Паллах, пысăк квалификатсиллĕ рапочисем чĕнсе килмеллех пулат, вĕсем кирлĕ, анчах пĕтĕм рапочисене урăх çĕртен илсе килес тени вăл—пире йурăхлă шухăш мар. Кун пек шухăша епĕр нихăçан та йышăнас çук. Ман шутпа, кун çинчен текех каласса тăмалла та мар—тӳрех вирлĕн ĕçе тытăнса, прорыв çине болшевикла наступлени пуçласа йамалла! (Л а р ч ĕ)

(Пурте алă çупăççĕ).

**Тупăв.** Тĕрĕс!

**Саварин.** Молотетс, Митук!

**Уланкай.** Петров йулташа сăмах парас пулат, вăл ...ире пит лайăх çĕнĕ хыпар пĕлтерме пултарат.

**Тупăв.**
**Саварин.** } Мĕнле хыпар?

**Петров** (т ă ђ ĕ). Пур манăн... Епĕ Виктăрăвпа Лук...ина хирĕç каласшăнђђĕ те, хаљ каламастăп ĕнтĕ, ...ланкай лайăх ответ пађĕ.

**Тупăв** Елĕр сан хыпарна кĕтетпĕр!

**Петров.** Алекçей Иванђ хушнипе, епĕ стройккăри ...омсомолĕссене пĕр çĕре пухрăм. Кунтах стройккăна ...илнĕ колхоçнĕксене пĕрлештертĕмĕр...

**Саварин.** Вара мĕн?

**Петров.** Вара епĕр вĕсенђен икĕ прикатă турăмăр.

**Саварин** (с и к с е т ă ђ ĕ). Пулат еппин?

**Илле пиђђе** (с и к с е т ă ђ ĕ). Пулат, Саварин йулташ!

**Петров** Лере, прорыв ђи пысăк çĕре, пристăњри ...пропкăна аркатма кайатпăр.

**Саварин.** Йакши, йулташсем! Сирĕн прикатăсем—...уриншĕн те пукçир,—пример пулђђăр.

**Петров.** Йеçт, Алекçей Иванђ.

**Илле пиђђе.** Шанма пултаратăр—не подкачаем.

(Тухса карĕç).

**Луккин** (т ă ђ ĕ, С а в а р и н п а т н е л л е п ы р с а ђ а р ă н ђ ĕ). Ађа вăйăи выљатăр, йулташсем. Ўкĕнмелле ...ан пултăр! (Т у х с а к а р ĕ).

**Саварин, Тупăв.** Курăпăр

(Çутă сўнет. Çута тепер хут çутăлнă çĕре стена çинђе У л а н к а й, С а в а р и н, Т у п ă в, тата А н н а. У л а н к а й-н а Т у п ă в сетел патенђе тăраççе, С а в а р и н ларат, А н н а шкапри кĕнекесене пăхкалат).

**Саварин** (Уланкайа). Калаçса тăма та кирлĕ мар, Митук. Прорап санăннах пулмалла. Урăхла май килмест.

**Уланкай**. Ытла тăрук пулат, Алексей Иванђ... Манăн практĕккă нумай марха вĕт. Тата Виктăрăв ниçта та кайманха вĕт.

**Саварин**. Виктăрăва тивместпĕр епĕр. Хăйĕн вырăнђех лартăр вăл. Ĕçлетĕр. А есĕ—кулленхи ĕçсене йĕркелесе пыраканни, твикăттĕл...

**Тупăв**. Иккĕленмелли нимĕн те çук. Пĕђђен мар вĕт есĕ.

**Уланкай**. Вăл çаплах, ăна пĕлетĕп...

**Саварин**. Конђђĕнă. Ыйту татăлђĕ. Ата, Тупăв, кайса пăхар лере. (Алăк пăтнелле утат).

**Тупăв**. Ну, пайанлăха сывпул еппин, Уланкай йулташ. Ес пирĕнпе пĕрле пыратăни çак?

**Уланкай** Манăн хăшпĕр маттерйалсемпе паллашмаллаха...

(Пронин кĕђĕ).

**Пронин**. Страстĕ! Саварин йулташ кам кунта сирĕн?

**Саварин** Епĕ.

**Пронин** (хут кăларат). Çакна сире памалла пулас...

**Саварин** (вулат те, Пронина аллине парат). Добро пожаловать! (Тупăвпа Уланкайа). Пукçирлă прикатă килђĕ. Станкостройран! (Пронина). Нумайăни есĕр? Нумайлăха-и?

**Пронин**. Пилĕкĕн килтĕмĕр.

**Саварин**. Самеђђаттĕлнă! (Уланкайа). Ĕç кайат пирĕн! (Пронина). Ăçта вырнаçрăр есĕр?

**Пронин**. Ниçта та вырнăçманха. Хаљ çеç çитрĕмĕр.

**Саварин**. Атăр, вырнаçтаратпăр...

**Тупăв**. Карăмăр.

(Саварин, Тупăв, Пронин тухаççĕ. Уланкай сĕтел хушшине ларат. Анна кĕнекесене пăхкалат, унтан хуллен çаврăнса сĕтел патнелле пырат).

**Анна.** Еппин, сана постравит тӑвас пулат (аллине тӑсрӗ).

**Уланкай** (именсе, алӑ парат). Спаҫҫипӑ. Анђах, постравит тумалли нимех те ҫук пулӗ...

**Анна** (аллине ђӑмӑртатнипех). Йепле ҫук? Ҫав териответлӑ ӗҫ шанса панӑшӑн савӑнас пулмасти вара?

(Хыҫалта Мађӑ хыттӑн кулса йарат, унтан „тыт мана! тыт!“— тесе ђупса иртсе кайат, ҫав самантрах ђӳређерен Лермӑнттӑв пӑхат).

**Лермӑнттӑв.** Страстӗ! (Йӳҫҫӗн). Партон! Каҫарӑр...

**Анна** (Уланкайран аллине илет). Мӗн кирлӗ сана?

**Лермӑнттӑв.** Покка нимӗн те кирлӗ мар (ҫухалат).

**Уланкай.** Кам вӑл?

**Анна.** Прохвост. Кӗнђелерти йӗкехӳре.

**Уланкай.** Есӗ унпа ма унашкал хыттӑнах калаҫатӑн

**Анна.** Мӗншӗн тесен урӑхла май килмест. Мана вӑл хӑйӗн „вутлӑ ђӗрине“ сӗнсе йӑлӑхтарђӗ.

**Уланкай** (кулат). Вӑн йепле! Пулкалат ун пекки...

(Пауса. Купӑс сасси).

**Анна.** Пулкалат ҫав.. (Каллех сӗтел патне пырса, кӑшт кударах). Санӑн та пулкаланӑ-им, апла калатӑн ес...

**Уланкай.** Да... Ҫук, манӑн пулман та, темелле.

**Анна.** Ҫапах та...

**Уланкай** (именкелесе) Мӗнле калас сана... Ун пеккисем ваљљи вӑхӑт ҫук вӗт хаљ. (Пирус тивертсе ђӳређе патне пырса тӑђӗ). Малтан епӗ йалта пурӑннӑ, комсомолта ӗҫленӗ, унтан—Хӗрлӗ ҫар, инҫтиттут. Инҫтиттут хыҫҫӑн—практӗккӑ.

**Анна.** Практӗккӑра хӑш вырӑнта пулнӑ?

**Уланкай** Карели оплăçĕнҍе, çакнашкалах сĕм вăрманта... Пĕр çур çул малтан унта çын пырса кĕме çук лаҍакасем, витĕр тухмалла мар ҍăтлăх пулнă. Епĕр пынă çĕре çав тери урăхла вырăн пулса тăнă. Шурсене типĕтнĕ, ҍукунçул хывнă, електритсă йалкăшат, химисавăҍĕн корппăсĕсем ӳсе-ӳсе ларнă, театтăр, ратио, темиçе пин çын ĕçлесе пурăнат...

**Анна**. А кунта мĕнле пулнă тетĕн есĕ? Пĕлтĕр кĕркунне кунта та нимĕн те пулман, ак халĕ—ху куратăн, кепле тсехсем ӳсеççĕ

(Купăс сасси вăйланат).

**Уланкай**. Пур çĕрте те, Совет сойусĕпех çапла Хуласенҍе çеç мар, пĕлтĕр-виçĕмçул етем пырса кĕмен вырăнсенҍе те пурнăç çĕпре пек вĕрет. Калама та çук хăватлăн утат çĕршыв тăрăх пилĕк çуллăх план. Çĕршыв сăнĕ улшăннипе пĕрле—çынсем те улшăнаççĕ... Вара,—çак хăватлă утăмсем, кулленхи ӳсĕм кăмăла хăпартнă çемĕн хăпартат, ĕç ваҍҍи çĕнĕрен çĕнĕ вăй парат.

**Анна**. Çапла çав, çынсем те улшăнаççĕ. Çынсем тĕнҍе курман стройккă тăваççĕ, стройккă - тĕнҍе курман паттăрла çынсем тăват.

**Уланкай**. Кунпа пĕрлех, кĕрешӳ те вăйланат. Ĕçхалăх тăмшанĕсем çак стройккăна кура йулашки вăйĕсемпе тапăнаççĕ пире.

**Анна**. А есĕ кĕрешĕве йурататăни?

**Уланкай**. (П а у с ă) Тĕлĕнмелле ыйту. Етем çĕннишĕн ĕçлес тег пулсан, унăн кĕрешĕве йуратмаллах ĕнтĕ, мĕншĕн тесен кĕрешӳсĕр нимĕн те пулмаст. Кирек мĕнле кĕрешӳре те хăйне майлă поеçи пур. А епĕ—ҍĕрере поет

(Л е н ă кĕҍĕ).

**Ленă**. Каçарăр. (П ă л х а н а т). Манăн сире, Тимитри Петровиҍ, темиçе сăмах каламалли пур.

**Уланкай**. Пошалстă, калăр. Мĕнле сăмах?

**Ленă**. Манăн упăшка... Маринĕн иншенер командировккăна карĕ те, çыру йађĕ..

**Уланкай** (т ĕ л ĕ н с е). Мĕнле çыру? Мана вађђи-и?

**Ленă**. Çук, ман патна йанă ăна вăл. Мана сире сăмахпа каласа пама хушнă. (П ă л х а н а т). Сирĕн çеç пĕлмелле ăна.

**Анна**. Апла пулсан, калаçăр, епĕ кайатăп.

**Уланкай**. Ма? Есĕ йулма пултаратăн.

**Ленă**. Çук, кăна никамăн та пĕлмелле мар.

**Анна**. Сывпулăр (т у х а т).

**Уланкай** (с ӳ н н ĕ п и р у с н е ђ ĕ р т е т). Ну, калăр, мĕнле сăмах?

**Ленă** (а л ă к а ç е к л е т е т, ђ ӳ р е ђ е ђ а р ш а в ĕ с е н е к а р а т те, У л а н к а й п а т н е и к ĕ у т ă м п у с с а ђ а р ă н с а т ă р а т).

**Уланкай**. Еп кĕтетĕп, йулташ Маринĕнă...

**Ленă** (й ӳ ç ç ĕ н к у л с а и л е т). Маринĕнă тетĕн?

**Уланкай**. Мĕнле каласха тата?

**Ленă**. Мĕншĕн Уланкайĕвă мар?

**Уланкай**. Мĕншĕн тесен—есĕ манăн арăм мар.

**Ленă**. Санăн мар... (К а й а л л а ђ а к с а п у ç н е у с р ĕ). Да...

**Уланкай**. Мĕнле çыру çинђен каларăн есĕ? Мĕнле сăмах çинђен? Кала ђасрах.

**Ленă** (в ă р ă м ă н с ы в л а с а и л ђ ĕ). Нимĕнле çыру та, нимĕн те çук. Епĕ йурийех санпа калаçма килтĕм.

**Уланкай**. Ман шутпа, пирĕн иксĕмĕрĕн нимĕн çинђен те калаçмалли çук. Епĕр санпа тахçанах калаçса пĕтернĕ.

**Ленă**. Пур! Пур калаçмалли!

**Уланкай**. А епĕ калатăп—çук!

(Мусăк сасси).

**Ленӑ**. Митӳк! Неушели санӑн ҫӗрӳнте мана валҫ нимӗн те йулмарӗ? Неушели вара... Неушели иртнине нийепле те тавӑрма ҫук? Пирӗн ҫав тери хӗрӳллӗ йуратӳ пӗтӗмпех манӑҫ пулҫӗ и, тӗпсӗр шыва путрӗ-ши?

**Уланкай** (кашни сӑмаххине татса). Ӑна есӗ путартӑн.

**Ленӑ**. Ӗмӗрлӗхех, пуҫӗпех пӗтрӗши вара вӑл?

**Уланкай**. Пуҫӗпех!

**Ленӑ** (пуҫне тытса). Митӳк! Мантӑни вара есӗ... Шупашкар, унтан пирӗн йал, Мускав .. Мӗнешкел аванҫҫӗ вӑл кунсем... Ҫаксене пӗтӗмпех мантӑни есӗ?

**Уланкай** (уткаласа илҫӗ). Манман. Тен, санран та лайӑх астӑватӑпи. Шупашкарта та, йалта та аван пурӑнтӑмӑр епӗр... Анҫах, Мускавра пурӑнма пуҫласан, есӗ такамсемпе ҫыхланса карӑн, такамсем сана таттисӗр театӑрсем тӑрӑх ҫӳретме пуҫларӗҫ, есӗ хӑш каҫ киле те таврӑнма пӑрахрӑн... Йулашкинҫен вара —ҫухӑн стутент— ӗлӗк ессер пулнӑ тухтӑр хӗрӗшӗн паҫах йурӑхсӑра тухрӗ. Ӑна пӑрахса каҫҫа карӗ вӑл. Стутентӑн ҫырӑвӗсене хирӗҫ ответ та памарӗ... Куратӑн — епӗ нимӗн те манман.

**Ленӑ** (патнерех пырат). Миттӑ!

**Уланкай**. Мéн кирлӗ сана?

**Ленӑ**. Таврӑн ман пата! Тархаслатӑп!

**Уланкай**. Мӗн калаҫатӑн есӗ? Санӑн упӑшку пур вӗт!

**Ленӑ**. Ҫук, манӑн нийепле упӑшка та ҫук. Йуратмастӑп епӗ ӑна, кураймастӑп! Ун ҫинҫен хӑйӑр йухат, а манӑн... Мӑнӑн пурӑнас килет!

**Уланкай** (йуҫҫӗн). Ах, вон што... Ну-ну, ҫамрӑккине шыра, анҫах мана ан тив. Урӑх пӗр сӑмах та калама кирлӗ мар!

**Ленă** (Уланкай çинеллех пырат̆). **Миттă,** тархаслатăп сана! Неушели есĕ—арçын мар? (Хулпуççинҫен тытат̆).

**Уланкай** (Ленăна тĕртсе йарат̆). Ан çыпçăн!

(Ленă ӳкет. Уланкай нимĕн тума пĕлмест. Ленă хуллен тăрат̆ те, Уланкай çине сиввĕн пăхса, йусанкалат̆, унтан патнерех пырса пуçне мăн кăмàллăн çĕклет).

**Ленă**. Ну, малашне мĕн пулассине курăпăр, **инше**нер Уланкайĕв!

**Уланкай** (алăк çине кăтартса). Кай!

(ҪАРШАВ).

## IV.

## ФРОНТ.

Сар шывӗ хӗррингӗи уҫланкӑ. Сылтӑм йенҗе—шӑналӑкран тунӑ палаткӑсем. Хыҫалта шыв курӑнат. Унтан, тӗтре витӗр, вӑрман. Палаткӑсем умӗнҗе—вут ҫунат, ун патӗнҗе 2-3 „ҫӗсоннӗк“, тата Ахмет картла ҫапаҫҫӗ, сылтӑм йенҗе Мирон апат пӗҫерет. Ҥох-ҥохпа Матапайккӑ—иккӗшӗ те ӳсӗр, җӗлӗм тивертме хытланса, сулкаланса тӑраҫҫӗ.

**Матапайккӑ** Вӑл пире: тархасшӑн килӗшӗр, тет. Ҫтаппан ӑна: мӗн ес, мана ухмах тесе шутлатни?—тет. Ҫӗр аллӑ тенкӗ! —Унтан пӗр пус та җакмастпӑр, терӗмӗр.

**Ҥох ҥох**. Памарӗ-и вара?

**Матапайккӑ**. Памарӗ. А пире—хут купӑс. Пӗлетпӗр вӗт епӗр—пирӗн патах килет. Санӑн сӑмсу каҫҫӑрри ҫинҗен пӗлнӗ пекех пӗлетпӗр, пурпӗрех килет. Пӑттому штӑ вӗсен урӑх рапоҗҗисем ҫук, а темиҫе паршӑ пушатасса кӗтсе тӑраҫҫӗ. Ха-ха-ха!

**Ҥох-ҥох**. Тепре килсен епӗр унтан икҫӗр тенкӗ ыйтатпӑр акӑ, ҫӗраллӑ вырӑнне.

**Матап**. Парат те!

**Ҥох-ҥох**. Конешнӑ парат, мӗн тӑвас тетӗн? Сӑптӑратпӑр та—илетпӗр. (Кӑсйинҗен ҫапат). Ата, йулашкине типӗтер...

(Ӳплене кӗреҫҫӗ).

**Картла выљ. пӗри**. Ҫирӗм!

**Ахмет**. Манӑн ҫирӗм пӗрре!

**Пӗри**. Суйатӑн! Кӑтарт.

**Ахмет**. Акӑ, пӑх. Укҫа манӑн.

**Виҫҫӗмӗш**. Шуљӑкларӑн есӗ.

**Пӗри**. Паллах шуљӑкларӗ.

**Ахмет**. Кам?

**Пĕри**. Есĕ!

**Виççĕмĕш**. Хам куртăм.

**Пĕри**. Пар укçана!

**Ахмет**. Памастăп.

**Пĕри**. Пар.

**Ахмет**. Памастăп.

**Виççĕмĕш** (ç а п а т). Апла пулсан—на!

**Пĕри** (А х м е т а  т а п а т). Ил, мат вашшу саркайăк!

**Ахмет** (к ă ш к ă р с а  й а р с а  с и к с е  т ă р а т). Ма çапаттăр? Мин турăм еппĕ сире? Есир хувăр улталлаттăр мана.

**Пĕри**. Улталатпăр пулсан—ан çыхлан пирĕнпе.

**Ахмет**. Çыхланмастăп ĕнтĕ текех. Урăккисем патне кайатăп.

**Виççĕмĕш**. Ну и к ҫортту! (Т а ш л а м а  т а п р а н а т).

**Пĕрремĕш**. Атăр хĕрсем патне. Май килсен—тен майлаштаратпăр кĕçĕр.

**Виççĕмĕш**. Килĕшетĕп кунпа! Атăр.

(Картла выҫанисем, А х м е т с ă р пуçне, купăспа кайаççĕ. А х м е т вут патĕнҫе ларакан М и р о н патне пырат).

**Мирон** (А х м е т а). Пустуй çыхланатăн есĕ вĕçемпе, шăллăм. Пăхсах курăнат вĕт—путсĕр халăх. Çынна пуç касса йама та пултараççĕ вĕсем. А есĕ, пахатăп та, лăпкă аҫа.

**Ахмет**. Çыкланмастăп текех. Урăккисем патне кайатăп.

**Мирон**. Еп хам та çавăн çинҫен шухăшлатăп. Урăх ертеле кайас пулат. Кусемпе ĕç тухмастăп...

(Сылтăмран Л е р м ă н т т ă в, сухахирăн В е н и а м и н тухаççĕ те, стсенă варринҫе ҫаранаççĕ).

**Лерм**. Вениамин!

**Вениам.** (Лерманттава çáваренђен хуплат). Шăп!

**Лерм.** (вĕçерĕнсе). Мĕншĕн?

**Вениам.** Мĕншĕн тесен... (хăлхинђен темскер каларĕ).

**Лерм.** (кайалла пĕр утăм ђакрĕ). А-а, ăнланатăп...

**Вениам.** Ăнланатăн пулсан—ан шарла.

**Лерм.** (йури хытăрах). Нумайранпа кунга-и есĕ, Çтаппан Иванов?

**Вениам.** Уйăха йахăн ĕнтĕ...

**Лерм.** (Вениамин патнех пыђĕ). Аҭа, айаккарах кайса калаçăпăр еппин.

(Тухса кайаççĕ).

**Мирон.** Пăхатăп та епĕ, ытлашши ашкăнаççĕ вĕсем. Хаксене ăнăçсăр ӳстереççĕ. Ак, пайан: пĕр пĕђĕк паршă ђул пушатма çĕр аллă тенкĕ ыйтрĕç. А ĕçĕ, ђăннипе каласан, тупата 50-60 тенкĕрен ытла тăмаст. Калярăм та—итлесшĕн те мар.

(Уçăп кĕрет).

**Уçăп** (Мирона). Ăçта сирĕн „пуçлăхсем"?

**Мирон** (ӳпле çинелле). Çывăрђĕç пулмалла илтĕнмест.

**Уçăп.** Ха! Çывăрђĕç! Манăн хыçран хăйăр йухаҭ, а вĕсем, есреметсем, çывăраççĕ! (Ђĕлĕмне тултараҭ). Ђортла халăх! Савăтсенђе епĕ тăват-пилĕк çул ĕçлетĕп ĕнтĕ, анђах кун пеккине ниçта та курман. Ĕçлеме кахал хăйсем,—хакне есреметле сĕвесшĕн... Ма хуҭ есĕ, ват çын, каламастăн вĕсене? Ухмаха йернĕ пек хăтланаççĕ вĕт!

**Мирон.** Калатăп та, вĕсем итлеççĕ-им?

**Ахмет.** Каласан тăкăнтартса та йараççĕ пит лайăх.

Ђох-Ђох (ӳплерен пуҫне кăларђĕ). Е-ей, хоспота теҫетнĕк, каллех килтĕни есĕ? Килместĕп терĕнҫке.

**Маťап.** (пуҫне кăларђĕ). Ну, мĕн ђухлĕ паратăн? (Иккĕшĕ те упаленсе тухаҫҫĕ).

**Уҫăп.** Калăр ђăннипе: 100-пе килĕшетĕри, килĕшместĕри? Пурпĕрех 150 памастăп,—килĕшĕр.

**Маťап.** Ҫук ĕнтĕ, шĕвĕр сухал пиђђе. Икҫĕр тенкĕ!

**Уҫăп.**
**Мирон.** } Икҫĕр?!

**Ђох-Ђох.**
**Маťап.** } Икҫĕр!

**Уҫăп.** Пуҫпа шухăшлатăри есĕр, ай... кăвапапа шухăшлатăр?

**Ђох-Ђох.** Ҫурăмпа!

**Уҫăп** (сураť). Тфу, питсĕрсем.

**Ђох-Ђох.** Кам?

**Уҫăп.** Йытă!

**Маťап.** (Уҫăпа кăкăрĕнђен йарса илет). Кам йытă? Кам?

**Уҫăп** (Маťап. вăркăнтараť). Есĕр!

**Ђох-Ђох** (Уҫăп ҫинелле пыраť). Ес ху кам? Кам есĕ? (Ҫапма хăмсараť Миронпа Ахмет ђарма тапратаҫҫĕ:—Ђарăн! Ђарăн!—теҫҫĕ, лешсем ђарăнмаҫҫĕ).

**Маťап.** (ђул ҫĕклесе Уҫăп патнелле ђупаť). Еп сана, кађака таки...

**Уҫăп.** Ан ҫа-а-ап!

(Саварин ђупса тухаť).

**Саварин.** Стой, некоťай! (ђула туртса илет). Мĕн хăтланатăр есĕр?

**Уçăп** (Ђ о х-Ђ о х р а н вĕçерĕнсе). Ђут вĕлеређђĕç, есреметсем. Савăтсенђе тăват-пилĕк çул ĕçлетĕп, анђах кун пеккине нихçан та курман!

(Т у п ă в п а И л л е п и ђ ђ е ђупса тухаççĕ).

**Тупăв.** Мĕн пулнă, Алексей Иванђ? (А л л и н ђ и ђ у л ç и н е к ă т а р т а т). Ку мĕн санăн?

**Саварин.** Куђђенеç! Уçăпа çапса пăрахма тапратнă.

**Уçăп.** Нихçан та курман кун пеккине!

**Тупăв.** Новăç...

**Илле пиђђе** (С а в а р и н р а н ђ у л а и л е т). Хăйсенеђђĕ ку куђђенеçпе... Сăмса урлă.

(Купăспа кайнисем таврăнђĕç).

**Тупăв.** Хăшĕсем ăна?

**Мирон** (м а л а р а х т у х с а М а т а п а й к к ă п а Ђ о х-Ђ о х ç и н е к ă т а р т а т). Çаксем, йулташ нађђалнĕк.

**Ахмет.** Кунта пурне те вĕсем пăтратса пурăнаççĕ.

**Тупăв.** Хитре матурсем!

**Саварин.** Калама та çук! (П а т н е р е х п ы ђ ĕ). Мĕншĕн?

**Ђох-Ђох.** Вăл пире питсĕрсем терĕ.

**Матап.** Йытă, терĕ.

**Саварин.** Питĕ лайăх каланă. Хам пулсан, епĕ унтан та лайăхрах каламалла.

**Мирон.** Вĕсем хак пирки тавлашса карĕç, нађђалнĕк йулташ. Кусем пĕр пĕђĕк паршăшăн 200 ыйтрĕç...

**Илле пиђђе.** Икçĕр? Хăшĕ ăна? (П а т н е р е х п ы р а т).

**Мирон.** Çаксем...

**Саварин.** Пăртак та намăс мари вара сире?

**Матап.** Мĕнрен намăс?

**Тупăв.** Çавăн пек хăтланма!

**Матап.** Епĕр ĕçшĕн ыйтнă, ниподнă ахађ.

**Ђох-Ђох.** А епĕр ыйтнă пек тӳлемеççĕ тĕк, епĕр киле те кайма пултаратпăр.

**Илле пиђђе**. Киле-е?

**Матап**. А мĕн? Кайатпăр!

**Сасă**. Путлĕ опшђешитти çук, апат нађар, ĕçленĕшĕн укçине вăхăтра памаççĕ...

**Илле пиђђе**. Унта кам тата? Тухха кунтарах, пăхам епĕ сан çине.

Сасă. Мĕн, хăратма шухăш пури? (П а ç ă р к а р т л а в ы љ ђ а к а н н и т у х с а т ă р а т).

**Илле пиђђе**. А-а, вăн йеплескер есĕ. Нуккă, лайăхрах пăхам епĕ сана (ç а в ă р к а л а т). Хăй шкаљккă пек кăна, анђах ерех шăрши пиђкерен кĕнĕ пекех кĕрет!

**Ђох-Ђох**. Ирĕксĕр çавах ĕçлеттерме пултараймастăн

**Матап**. Хођђу—ĕçлеп, не хођђу хӳрене çеç кăтартса хăвара тăп. Хаљ слопотă!

**Илле пиђђе**. Çăварна хуп, ерех лакăмĕ! (М ă ш к ă л а с а). Слопотă! Мĕнши вăл слопотă? Сăмаххине калама пĕлетĕн, анђах слопотине туса-и ăна есĕ? Мĕнле пулнăши вăл?

**Сасă**. Илтнĕ, пĕлетпĕр!

**Илле пиђђе**. Тоттă илтнĕ çех çав. Çынсем „слопотăшăн“ çапăçнă ђухне есĕ асаннӳ хыçĕнђе шăрш кăларса выртнă!

**Матап**. А сана мĕн ĕç? Пăрахатпăр та—кайатпăр акă!

**Ђох-Ђох**. Мĕн, вăйпа тытсађ арма шут пури?

**Илле пиђђе**. Ăçта?

**Матап**. Киле!

**Саварин** (х ы т т ă н). Çук, йулташсем, кайма йурамаст!

**Сасăсем**.—Кайатпăр!

—Ђараймастăн!

—Слопотă!

**Илле пиђђе**. Шăп! (М а т а п а й к к ă п а т е п ĕ р ç а м р ă к а к ă к р и с е н ђ е н т ы т а т). Фронтра, поçитсире пулса-и есĕр? Калăр, пулса-и?

**Пёри.** Ну, пулман.

**Матап.** Вара мёнха уншăн?

**Илле пиђђе.** Сирĕн шутпа—фронтран салтаксем пăраха-пăраха тарсан мĕн пулат? Калăр, мĕн пулат?

**Ахмет.** Тăшман çĕнтерсе илет.

**Илле пиђђе.** Тĕрĕс калатăн! Анђах савăт туни те фронтах вăл, савăт туни те—поçитси!

**Сасăсем.**—Но-о, кăларăн та!

—Тупрĕ йумах йамалли.

—Пĕђĕк ађасем мар епĕр.

**Саварин** (а л л и н е ç ĕ к л е р ĕ). Йулташсем, ђарă-нăрха! (Паусă). Сирен çине пăхатăп та, тĕлĕнетĕп епĕ. Камсем есĕр?—Ăçти çутçанталăкран килсе ўкнĕскерсем, ăçта кун пек ўснĕскерсем? Калăрха мана,—мĕнле хуçа патне ĕçлеме кĕрĕшсе килтĕр есĕр? Ăçта вăл хуçи?

**Сăса.** Есĕр, сăран пиншаклисем!

**Саварин.** Аха! Спаççипă каланăшăн—пĕлменђђĕ епĕ кăна. Анђах епĕр кам патĕнђе кĕрĕшсе ĕçлетпĕр апла? Пирĕн хуçа ăçта тата? (В ă й л ă н). Çук, кунта хуçа епĕ те, Тупăв та, Иванов та, Çитăрăв та мар. Епĕр пурсă-мăр та хуçа.

**Илле пиђђе.** Тĕрĕс калатăн!

**Сасă.** Хăш йенђен тĕрĕс?

**Саварин.** Пур йенђен те. Епĕр, йулташсем, рапођ-ђисемпе хресђенсен патшалăхĕнђе пурăнатпăр, хамăрăн патшалăх хуçи—епĕр хамăр. Çавăнпа та ĕçлессе те хамăршăн çеç, хамăр патшалăха вăйлатасшăн, хамăрăн малаллахи пурнăçа аванлатасшăн çеç ĕçлетпĕр. Ĕлĕк вăл епĕр хуçасем ваљљи ĕçленĕ, хамăр ĕçпе хуçасене пуйтарнă,—анђах хаљ—хамăршăн, пĕтĕмпе те хамăршăн кăна ĕçлетпĕр. Çакна лайăхрах ăнланмалла. Çакна ăн-ланса илсе—ытти пур шухăшсене те пăрахас пулат,—

пуçра савăта хăвăртрах, лайăхрах, тата йÿнерех туса пĕтерес шухăшсене çеç тытас пулат пирĕн хаљхи вăхăтра.

(Петров, Вĕшле, Ваңкка, т. ыт. ĕçлеме хатĕрленсе тухрĕç).

**Петров.** Епĕр килтĕмĕр, Алексей Иванђ.

**Саварин.** Йурат! (Массăна). Кунта йулташ тĕрĕс каларĕ: савăт строиттĕлстви вăл ђăнахах та—фронт! Çĕнĕ пурнăç тăвас ĕçĕн фронђĕ. Кам стройккăран тарат— вăл пирĕншĕн ђи киревсĕр теçерттир, вăл пирĕн тăшман майлă пулса тăрат. Тăшман пире çĕнĕ пурнăç тунă çĕрте пĕрмайах ђăрмантарат. Çав тăшман хĕтĕртнипе ĕнтĕ хăшĕсем хаксене ÿстереççĕ, ĕçе пăрахаççĕ, рапођђисене аркатма хытланаççĕ. Вĕсем хыççăн кайсан мĕн пулатха? Простă—пирĕн пурнăç ыранах арканма пултарат. Анђах çавăншăн кĕрешрĕмĕриха епĕр 14 çул хушши? Калăрха!

**Нумайăн.** Уншăн мар!

**Саварин.** Мĕншĕн çухрашатпăрха епĕр? Пире ĕлĕкхи, помешђĕкпе исправнĕк, уретнĕкпе шантар нухаљкки кирлĕ-и?

**Сасăсем.** Çу-ук, кирлĕ мар вăл...

**Саварин** (вирлĕн). Акă мĕн, йулташсем. Пытанмалла выљђама пăрахас пулат! Пĕр минут çухатмасăр ĕçлемелле пирĕн, вăхăта çакнашкал усăсăр пĕтермелле мар. (Çамрăксем йеннелле). Çапла-и, йулташсем?

**Çамрăксем.** Çапла.

**Тупăв** (çамрăксем хушшинђен хĕсĕнсе тухат). Ђылайĕшĕ кирлĕ пек ĕçлеменшĕн, пирĕн хаљ прорыв пулса тăђĕ. Пуринђен ытла—çакăнта, пристăңре. Епĕр ђĕнепĕр сире--атăр, мĕнпур вăйран ĕçлеме тытăнар! Вĕт пирĕн ĕç çине пĕтĕм ђăваш ĕçхалăхĕ пăхса тăрат, епĕр хаљ унăн умĕнђе парăмра, унăн умĕнђе

ответ тытатпăр. Атăр йулташсем, вăл парăмран ђыслăн тухар. Кам çакна ăнланат, кам ĕçхалăхĕн тăшманĕ мар, кам хамăр çĕршыва хурçă пек тăвасшăн ђĕререн çунат— çавсене пурне те прорывпа çапăçма ђĕнетпĕр!

**Нумайăн.** Атăр! Кайатпăр! (Аслати сасси).

**Саверин.** Кам пире хирĕç—вĕсем йулђђăр!

**Нумайăн.**—Пурте пыратпăр!

—Атăр!

**Тупăв.** Карăмăр, йулташсем!

(Стсенă хыçнелле кĕпĕрленсе тухаççĕ. Аслати татах алтса илет. Стсенă çине Матапайккă, Ђох-Ђох тата Мирон йулаççĕ).

**Мирон.** Есĕр пымастăри?

**Матап** (Ђох-Ђох çине пăхса илђĕ). Кайатăни есĕ?

Ђох-Ђох (çӳлелле пăхса). Çăмăр тапранат. (Ӳплене кĕрсе карĕ).

**Мирон.** Атăр, шăллăмсем. Епĕ—карăм.

**Матап.** Е-е, карĕ-ĕç... (Çӳçенсе сиккелесе илђĕ). Кайсан та аванђђĕ те ĕнтĕ...

(Вениамин ђупса тухрĕ).

**Вениамин.** Ыттисем ăçта?

**Матап** (пуçĕпе сулса кăтартса). Карĕç. Ĕçлеççĕ.

**Вениамин.** Мĕн хакпа?

**Матап.** Кайса ыйт хăйсенђен.

**Вениамин.** Ухмаха ан пер. Килĕшмеллипех килĕшрĕçи вара?

**Матап.** Килĕштерђĕç. Епĕ те кайас терĕм те, çăмăр килет. Ыран кайатăп. (Ӳплене кĕрсе карĕ).

**Вениамин** (шухăша карĕ, тавралла пăхса илђĕ). Ну, ыран—никама та ĕçлеме йамастăп!

(Çутă сӳнет. Минутран стсенă хыçĕнђе çутăлат те, круштђĕксем ĕçлени ĕмĕлкепе курăнат. Перисем çеклесе хăпараççĕ, теприсем анаççĕ. Аслати алтса çиçĕм çиçрĕ. Самантлăха ђарăнђĕç.)

**Пĕри.** Çăмăр киле-ет...

**Тепри.** Мĕне пĕлтерет вăл?

**Пурте** (а л л и с е н е  ç ĕ к л е с е). Çăмăр—к ђортту!

(Аслати. Мусăк—„Утарнĕксен маршĕ“. Пурте хăвăрт, хăвăрт ĕçлеме тытăнђĕç. „Çапат̆ сăрта, ватат̆ вăл—утарлă ĕç“...)

**Сасăсем.** Давай! Наваливай! Хур ытларах! Ех хей! Иарапар! Ĕçлер йулташсем!

(Ђ А Р Ш А В).

## V.

## УЙРĂЛУ.

Маринĕн хваттерĕ. Сулахайра лăк, сылтăмра ђўређе. Ун патенђе пианинă. Çтенасем çинђе—карттинсем, пысăк тĕкĕр. Икĕ сĕтел, пукансем.

Сулахайри сĕтел патĕнђе Лермăнттăвĭпа Маџă картла выђаса лараççĕ, сылтăмри патĕнђе Виктăрăв шухăша кайса, Луккин ўсĕрпе сĕнксе лараççе. Сĕтелсем çинђе ĕçмелли-çимеллисем нумай.

Лена пианинă çинђе выђаса йурлат.

**Ленă** (йурлат)—Сколько счастья ждала
От тебя, милый мой,
В эту встречу с тобой роковую...
Но ушла от тебя
Я рыдая, в слезах,
Потому что ты любишь другую...
Но настанет пора,
Розы вновь расцветут,
Разовьется сирень голубая...
Но любовь никогда
Не вернется назад,
Улетела пора молодая...

**Луккин**. Улетела! Вĕçсе карĕ! Пит те аван каланă. (Тăђĕ, аллине çўлелле çĕклерĕ), Да, ђăнах та вĕçсе иртрĕ манăн çамрăк ĕмĕр, шанђĕç манăн пурнăçри сенкер ђеђексем! (Сĕнксе илет те, ларса тулли стаккана çавăрса хурат).

**Виктăрăв** (сасартăк Ленă патне ђупса пыђĕ). Неушели нийепле те май килмест вара?

**Ленă** (тарăмăн сывласа илђĕ). Çук, темле тăрăшсан та

**Виктăрăв**. Снађђăт, йапăх ĕçлетĕн... Пулђĕ-пулмарĕ алла уссассáн, песусловнă нимĕн те тухмаст. Санăн йепле пулсан та наступпат тăвас пулат.

**Ленă**. Ахаљ те пĕтĕм вăйа хутăм епĕ. Унăн умĕнђе çук куççуле йухтартăм, етем ђысне çухатнă хĕрарăм пек унишатсă турăм, тархасларăм...

**Виктăрăв.** Мĕнха вара?

**Ленă.** Малтан мĕнле пулнă, çавнашкалах.

**Виктăрăв.** Мĕнле?

**Ленă.** Мана вăл... йышăнмаст.

**Витăрăв.** Ну, а есĕ ăна... (*Мăшкăласа*). Хăвăрăн „романтическая первая любовь“ çинђен аса илтертĕни? Каларăни...

**Ленă.** Каланă, пурне те каланă... Аса илме те намăс.

**Виктăрăв** (*çилĕпе*). Йапăх! (*Уткаласа*). Апла пулсан—пирĕн плансем ишĕлеççĕ, пĕтĕмпех пĕтме пултарат.

**Ленă.** Мĕнле пĕтет? Йут патшалăха кайасси те-и?..

**Виктăрăв.** Пĕтĕмпех! Пире... мĕншĕн илсе кайĕç ĕнтĕ унта? Йут патшалăха кайма права тупма,—тахçанах каланă сана,—паллăрах ĕç тăвас пулат... А епĕр мĕн турăмăр? Пĕр сар туталлă иншенера çавраймастпăр.

**Ленă** (*хурлăхпа*). Мĕн тăвамха ĕнтĕ епĕ? (*пианинă çине ђавсаланат*).

**Виктăрăв.** Ђеппухха! Еп хам хĕрарăм пулсан—шуйттана ухмаха йертмелле. (*Уткалат*). Йапăх помошнĕк есĕ.

**Луккин** (*сĕнксе*). Луккина тасатрĕç.... Луккин—йурăхсăр. Луккин рапођђисене органисатсилеймест... А вĕсенђен кам ман пек ђирккуљар çырма пултаратши?

**Виктăрăв** (*Лермăнттăва пырса тĕртет*). Ну, а сан ĕçўсем?

**Лермăнттăв.** Ĕçсем?.. Çавнашкалах.

**Виктăрăв.** Ну, леш... дите поповское, Çтаппан, Вениамин... Тăвати вăл мĕн те пулин?

**Лерм.** (*тăђĕ*). А-а... есĕ ун çинђен... (*Куçлăхне тўрлетрĕ*). Унпа, пăнимайĕттĕ, неувескă. Пайан ăна савăтран кăларса йађĕç. Рашђот пађĕç, хам куçпах куртăм.

**Виктăрăв.** Мĕншĕн? Сиснĕ им?

**Лерм.** Иалтан йађейккă çырса пĕлтернĕ, тет... Так и так, поп ывăлĕ... (Хулпуççисене выђђаткаласа, ларат).

**Виктăрăв** (калама тăрат те, аллипе сывлăша касса илет). Час от часу не легче! (Сĕтел патне пырса ĕçрĕ).

**Луккин.** А хăш йенђен тивет мана вĕсен ăмăртувĕ? Ăмăртса ђупмашкăн Луккин ăраглă айăр штолĕ? Ăмăрт—кама кирлĕ, а мана ан тив.

**Лена.** (тăђĕ). Çав тери пуç ыратат...

**Лерм.** Пуç ыратнинђен портвейн пулăшат, Йеленă Проххăрăвнă...

**Лена.** (аллипе сулђĕ). Йăлăхтарђĕ... (Сулахайалла кайса тăђĕ).

**Виктăрăв** (пианинă çинђе аккорт турĕ) Такая пустота!.. (татах аккорт турĕ). С плачем... деревья... качаются... голые... (выђама пуçларĕ).

**Лена.** (хăй тĕллĕн). Неушели ĕмĕтленнĕ ĕмĕт çитмест? Неушели манăн пурнăçра нихăçан та тулли телейлĕ кунсем пулмаççĕ? Нихăçан та çутă, савăнăçлă кунсем курмастăпши епĕ? (самантлăх ђарăнђĕ). Пĕђĕк ђухне ђиканккă каларĕ: ӳлĕм, ӳссен, телейлĕ пулăн, тĕнђери пур пысăк хуласене çӳрĕн, терĕ... Суйрĕши вара вăл? Ах, ђăн пулђђăрђђĕ вăл сăмахсем... Çур пурнăça парăттăм епĕ уншăн...

**Виктăрăв** (шавлă аккортпа пĕтерет.) Ленă, кил кунта! (Ĕçме тăрат).

**Лена.** (тинкерсе пăхат те, хыттăн утса пырса ђеркке тытат).

**Виктăрав** (Лермăнттăв йенне). Ей, телейлĕ мăшăр! Килĕр.

**Лерм.** Хаваслансах пыратпăр. Ата, Муççă. (П ы р с а
ç е р к к е с е м т ы т с а т ă р а ç ç ĕ).

**Виктăрăв.** (Л у к к и н а х у л п у ç ç и н ђ е н ç а п а т).
Вăран, отставной профсойус. Тыт.

**Луккин.** Профсоюзы—школа коммунизма... (т ă ђ ĕ)

**Manђă.** Камшăн ĕçетпĕр ĕнтĕ? Сирĕншĕни, Анаттоли
Виктăрăвиђ?

**Виктăрăв.** Манăн ăнман пурнăçшăн.

(Ĕçеççĕ те, çырткаласа хăйсен вырăнĕсене канаççĕ. В и к т ă р ă в п а Л е н ă пианинă патĕнђе).

**Manђă** (к а р т с е н е х у т ă ш т а р с а). Икнатти Çеменђ.

**Лерм.** Мĕн, ђунăм?

**Manђă.** Есĕ усал çын вĕт, е?

**Лерм.** Мĕншĕн апла тата? Сана мĕнпе те пулин
кўрентертĕми?

**Manђă.** Кўрентересси кўрентермен те, анђах çапах
усал çын есĕ.

**Лерм.** Мĕншĕн? Кала ĕнтĕ.

**Manђă.** Есĕ пайан мана пĕрре те „йуратататăп" тесе
каламарăн.

**Лерм.** (с и к с е т ă р с а л а р ђ ĕ). А-а, авă мĕн!
Йуратататăп, ђунăм. Пин, çĕр хут йуратататăп... А ес ху?

**Manђă.** Епĕ те йуратататăп... Анђах есĕ пурĕ-пĕрех
мана улталаса пурăннăн туйăнат.

**Лерм.** Тата мĕн пулђĕ?

**Manђă.** Пирĕн туй хăçан пулассине есĕ çаплах татса
каламастăн...

**Лерм.** Туй... М-м... Каларăмçке сана. Ну, кĕркунне,
савăта туса пĕтерсен. Туй тăватпăр та, хулана пурăнма
куçатпăр... (Х ă в ă р т). Йурĕ-и? Килĕшетĕни?

**Manђă.** Йурĕ еппин... килĕшетĕп.

**Луккин** (х ӑ й т ӗ л л ӗ н). Ну вот, халӗ вӗсем утарнӑй прикатӑсем турӑмӑр, теҫҫӗ. А Луккин вӗсене тума ђарнӑ штолӗ? Утарнӑй прикатӑ—рапођђисен ӗҫӗ. А профсоус, а епӗ приђђом?

**Виктӑрӑв** (Л е н ӑ н а). Ҫак кунсенђе манӑн кунтан кайас пулат.

**Ленӑ**. Мӗншӗн? Ӑҫта?

**Виктӑрӑв**. Калама—ытла вӑрӑм истори.

**Ленӑ**. А... а епӗ?

**Виктӑрӑв**. Ӗмӗрлӗхе кайатӑп темерӗмҫке сана. Но... Каймаллах, каймасан мана ҫеҫ мар, сана та аван мар пулма пултарат. Сан патна епӗ ђасах тавӑрнӑпха, ан хӑра.

**Ленӑ**. Епӗ хӑратӑп, Тођӑ. Манран темскер пытаратӑн есе, каламасӑр тӑратӑн.

**Виктӑрӑв**. Тен, еп хам та хӑратӑп. (Х ӑ в ӑ р т). Хӑрамастӑп, но...

**Ленӑ**. Кала ӗнтӗ... Тен епӗ пулӑшӑп сана...

**Виктӑрӑв** Ҫук, есӗ кунта нимӗнпе те пулӑшаймастӑн. Манӑн малашне кунтах йулмалли май ҫук, вӑл курӑнсах тӑрат... Кунсӑр пуҫне... (ш ӑ п п ӑ н р а х). савӑтра пӗр ҫын пур. Вӑл ахађ рапођђи кӑна, анђах та... маншӑн хӑрушӑ ҫын. Мана вӑл паллаймаст курӑнатха,—анђах паллама тӑрӑшат пулас. Ђӑн малтан—йулашки хут Хусантан тавӑрӑннӑ ђух пуйӑс ҫинђе пӑхрӗ вӑл ман ҫине, унтан ҫав леш саҫҫетанире... Хађ те кашни курмассерен витӗр шӑтарас пек пӑхат.

**Ленӑ**. Сана туйӑнат ҫеҫ пулӗ, Тођӑ...

**Виктӑрӑв**. Ҫук, апла мар. Вӑл саҫҫетанире пӗр паллӑ кӑтартрӗ...

**Ленӑ**. Мӗнле паллӑ?

**Викт**. Хӑҫан та пулсан пӗлӗн. Хађун ҫинђен каласма вӑхӑт мар. . (И л т ӗ н м и ш ӑ п п ӑ н ӑ н л а н т а р м а т ы т ӑ н а т).

**Луккин**. Молотош! А мĕн вăл молотош? Сар туталлă ҫĕпĕсем. И ҫав ҫĕпĕсем—мана вĕрентесшĕн. Тфу!

**Маҫă** (сĕтел хушшинҫен сиксе тухат). Йултăн, йултăн, Икнатти Ҫеменҫ. (Аллине ҫупса сиккелет). Хăвартăм. Ай йай-йай, Икнатти Ҫеменҫ. Намăс мари, намăс мари?

**Лермăнттăв**. Ну, тавай, тепре выљатпăр. Тепрере сана хăваратăп...

**Маҫă**. Тавай, тавай. Пурпĕрех хăваратăп. (Выљаҫҫĕ).

**Виктăрăв**. Йе, мана паллама хăтланаканне хăйне тирпейлемелле! Вара—все концы в воду пулат. Тепрер ернерен кайатăп пуљ ĕнтĕ.

**Ленă**. Хăҫан таврăнатăн вара?

**Виктăрăв**. Ҫасах таврăнатăп. Впроҫҫĕм—курàнĕха.

**Ленă**. Темле, манăн пĕртте шанас килмест...

**Виктăрăв** (Ленăна пуҫĕнҫен тытса куҫĕнҫен пăхрĕ). Еп—-ултавҫă мар. Халĕ те пĕлместĕни ҫавна?

**Луккин**. Кайатăп! Кайса тупатăп хамăн ҫухалнă телейе! Кунта мар—урăх ҫĕрте, пысăк хуласенҫе манăн телей. (Пуҫне сĕтел ҫине хуҫĕ).

**Виктăрăв** (Ленăна). Ес—нимĕн те ан хăра. Пирте вăй—пĕтменха, пирĕн пурнăҫ малта. (Ленăна ҫуптуре). Ăнлантăни?

**Петров сасси** (хыҫалта). Ҫапла, Маринĕн йулташ! Пристăњре халăхпа как ҫлетăват ĕҫлерĕмĕр те—ĕҫсем самайах улшăнма пуҫларĕҫ. Шутсăр лайăх пулҫĕ ҫавăн ҫухне ĕҫлени. Уше ултă прикатă хаљ унта, кунĕн ҫĕрĕн ĕҫлеҫҫĕ. Во! Ĕнер вара токăвăрсем турăмăр.

**Маринĕн сасси**. Молотсом, Петров, молотсом. Епĕ те пит лайăх хыпарсем илсе килтĕмха. Тепрер ернерен тимĕр конструксисем йатăнса килеҫҫĕ ĕнтĕ. Ата, кĕр ҫакăнта...

**Ленă** (с и к с е  т ă ҫ ĕ). Ҫитрĕ, ват шуйттан! (Н и м  т у м а  п ĕ л м е с т).

**Виктăрăв**. Есĕ... Хăратăни мĕн? Сур!

(М а р и н ĕ н п а  П е т р о в  кĕреҫҫĕ. Иккĕшĕ те ҫăматансемпе. П е т р о в  ҫăматана лартат те, алăк патĕнҫе ҫарăнса тăр ат).

**Маринĕн** (м а л а л л а  и р т р ĕ,  т а в р а л л а  п ă х с а  и л ҫ ĕ). Страстĕ, тăвансем.

**Лермăнттăв** (ҫ у п с а  п ы р с а  а л  п а р а т). Мое нишайшшĕйĕ, Куҫма Петровҫ. Мĕнле кайса килтĕн?

**Маринĕн** (т у м т и р н е  х ы в а т). Пит лайăх.

**Виктăрăв** (М а р и н ĕ н а  а л  п а р а т). А епĕр сана кĕтрĕмĕр-кĕтрĕмĕр те, улах тума шут тытрăмăр.

**Маринĕн**. Ниҫҫево, ниҫҫево... (Т у м т и р н е  ҫ а к а т). Петров йулташ, ма алăк патĕнҫе тăратăн ес, ирт малалла, лар. (А л ш ă л л и  ҫ ĕ к л е с е  т у х а т. У н х ы ҫ ҫ ă н  Л е н ă  т а  т у х р ĕ).

**Виктăрăв**. Тавай, кил кунтарах...

**Петров**: Кунта та аван мана.

**Виктăрăв**. Мĕн, пирĕнпе хутшăнса кайасран хăратăни?

**Петров**. Шиклĕ мар епĕ. Кунтан аванрах курăнат, ҫавăнпа ҫеҫ.

**Виктăрăв**. Пăх, лайăхрах сăна. Унтан Саваринпа Тупăв патне ҫуп. Ҫапла-ҫапла, те, Виктăрăв иншенер—пьянствует, тесе пĕлтер. (Л а р ҫ ĕ).

**Петров**. Напраснă пулат вăл, ăна вĕсем ахаҫ те пĕлеҫҫĕ.

**Лермăнттă** (с и к с е  т ă ҫ ĕ). Тоҫккă—пошалстă, Петров йулташ, йешĕл пĕлтеретĕн пулсан та, ман йата ан асăн, пăттому штă еп-ĕҫмен те, ĕҫместĕп те... Ху куран.

**Петров** (Л е р м ă н т т ă в  ҫ и н е  т и н к е р с е  п ă х р ĕ). Пăкотн, а есĕ мĕн тăватăн кунта?

**Лерманттав.** А так, культтурнай çынсем ҫёнҫёç те, проста калаçса ларма килтём. Ес ёçме килнё тесе ан шутла тархасшан.

**Петров.** Нимён те шутламастап епё. Анҫах та, сана пайан кантарларанпах араму шырат.

**Лерманттав.** Мёнле арам? (к а й а л л а ҫ а к р ё).

**Маҫа** (ҫ у п с а п ы ҫ ё). Мё-ён? Мён терён есё?

**Петров.** Ҫан-ҫан араму, йалта пуранаканни. Ик аҫапа, çитменнине çакан пек хырампа килнё. Вал сана Орттамав тет те, таруках нийепле те пёлме пулмарё.

**Лерм.** (ç у х а л с а к а р ё). Манан арам çук!

**Петров.** Рас килҫё тёк—пур витна. Ата, илсе кайап, аҫасем ана пирён паракра вырнаçтарҫёç.

**Маҫа** (Л е р м а н т т а в ç и н е). Ултавçа! Намассар! Питсёр! (Т е п ё р п ў л ё м е л л е ҫ у п с а к ё р с е к а р ё).

**Петров** (к у л с а, Л е р м а н т т а в а х у л п у ç ç и н ҫ е н ç а п р ё). Ех, шеремет. Пётрё санан пурнаçу. (Т у х с а к а р ё).

**Маринён** (п и т н е а л ш а л л и п е ш а л к а л а с а т у х р ё). Ну, ёçсем мёнле, Анаттоли Виктаравиҫ?

**Виктарав.** Питех мар.

**Маринён.** Ма апла?

**Виктарав.** Йурахсара тухрамар. (Й у ç ç ё н). Ёçрен параççё, шанми пулҫёç.

**Маринён.** Нта... Çапла пулассан туйанаҫҫё çав мана, Анаттоли Виктаравиҫ.

**Виктарав.** Мёнле? Мёншён „туйанаҫҫё"? Есё те ёнтё вёсен майла-им? Неушели есё те, вата иншенер Маринён, вёсен аҫа ваййи хыççан кайма шулашлатан?

**Маринён.** Стой, стой... Анланмалларах калаха кашт. Кам вал „вёсем", тата мён вал „аҫа ваййи"?

(Алакра Л е н а ҫаранса тарат).

**Виктăрăв** „Вĕсем“ камсем тетĕн? Неушели есĕ вĕсемпе хамăра уйăрми пулса карăн?

**Маринĕн.** Мĕншĕн уйăрмалла? Кама уйăрмалла?

**Виктăрăв.** Ах, есĕ ăна та пĕлместĕн? Ну, итле. Вĕсем—ĕçе пĕлмен, сăмахпа çеç витĕнекен Саваринсем, хаљ çеç çăмарта хуппи ăшĕнђен ђакаланса тухнă Уланкайсем...

**Маринĕн.** Так, так... А „ађа ваййи“?

**Виктăрăв** Пошалстă, лайăхрах пăх есĕ вĕсен çав „ђапларан та ђаплă“ ăмăртуне, утарнăй прикатăсене... Неушели ес çав йапаласем çине лăпкăн пăхса тăма, çав условисенђе ĕçлеме шухăшлатăн, е?

**Маринĕн.** Сана еп пĕтĕмпех ăнланаймастăп та, анђах... Санăн сăмаххусенђе темскерле ђирлĕ йапала пур. Ес мана малтан хама ответ парха: ђĕреренех каларăни ес йулашки саççеганире?

**Виктăрăв.** Хăçан?

**Маринĕн.** Леш... Ђăвашсем çинђен...

**Виктăрăв.** Аçтан пĕлтĕн есĕ ун çинђен?

**Маринĕн.** Епĕ хаљ Саварин патĕнђе пĕр сехет ытла лартăм.

**Виктăрăв.** А мĕн, тĕрĕс мари м сан шутпа?

**Маринĕн.** Тĕрĕс мар, Анаттоли Виктăрăвиђ. Кăшт та тĕрĕс мар. Рапођђисене пĕлместĕн есĕ.

**Виктăрăв** (йўççĕн). Ну, апла пулсан, пирĕн урăх калаçса тăмалли те çук. Куратăп—есĕ пĕр сехет хушшинђех 200 прођђăнлă комунис пулса тăма ĕлкĕрнĕ. Пит те лайăх, саншăн пирĕн савăнмалли çеç йулат.

**Маринĕн.** Çук, Анатголи Виктăрăвиђ! Ку йапала пĕр сехет хушшинђе пулнăскер мар.

**Виктăрăв.** Хăçан тата?

**Маринĕн.** Таврари пурнăçа малтанах нумай сăнарăм епĕ, нумай çулсем хушши тинкерсе пăхса пытăм ун

çине... Малтанхи вăхăтра, комуниссем çак петтилеткăна пуçласа йанă ђух самайах иккĕленеттĕм епĕ, анђах вĕсем утăм хыççăн утăм малаллах, тăваллах пынине курсан, шухăшсем вара пĕтĕмпех улшăнђĕç.

**Виктăрăв.** Вара пĕтĕмпех вĕсен майлă пулса тăтăн?

**Маринĕн.** Да, хамăн пĕтĕм вăйа парса, вĕсемпе пĕрле ĕçлес, терĕм. Мĕншĕн тесен...

**Викт.** Çăкăрсăр хăварма, йе хупса лартма пултараççĕ?

**Маринĕн.** Çук, çук! Унпа мар.

**Виктăрăв** Мĕн тата? Романттĕккă? Увлеђђени?

**Маринĕн.** Пăртакках тĕрĕс калатăн. Комуниссем вĕсем—итеалиссем мар, вĕсем ђи çирĕп маттериалиссем, çапах та романттĕккă пур вĕсен. Анђах романтгĕккăпа романттĕккă пĕр мар вĕт. Вĕсен романттĕкки питех те тĕреклĕ никĕс çинђе тăрат. Çавна ăнлантăм епĕ... (П а у с ă). А çăкăрсăр йуласси çинђен—ан та шарла есĕ: пуршуаллă хаçатсем ђăнах та, сурђăк сирпĕтсех кăшкăраççĕ тет кунта епĕр выçса вилетпĕр тесе, анђах та... Вĕсен ĕçĕ çавă. Шыва путакана улăм пĕрђи те çăлăнăç пек туйăнат, теççĕ. Пирĕн çинђен елек сарса та пулин хăйсен кунçулне сарас теççĕ ĕнтĕ. Вот мĕн вĕт... Комуниссем спетсиалиссене хисеплеççĕ, çавăнпа та выçă ларасси çинђен калаçни—пустуй йапала.

**Виктăрăв.** Ну, а епĕ?

**Маринĕн.** Есĕ? Есĕ—Анаттоли Виктăрăвиђ, ĕçе ĕненмен çын. Пĕлетĕп—санăн пĕлӳ нумай, анђах та... Еп тӳррипех калатăп, ан çилен... Ĕçшĕн есĕ ђунна нихăçан та паман, парасси те курăнмасђĕ. Ђуна пама мар—есĕ ĕçе кансĕрлеме тытăннă авă...

**Ленă.** (М а р и н ĕ н п а т н е л л е п ы ђ ă). Вара есĕ Анаттоли Виктăрăвиђа ĕçрен пăрса ун вырăнне çав халђ çеç ђĕђĕ пăрахнă ађана лартнине те тĕрĕс тетĕни?

**Виктăрăв** (кăщкăрса йаҍĕ). Çитет! Пĕр сăмах та ан кала урăх. (Маринĕн патне утса пыҍĕ). Çак самантран пуçласа—епĕ сана паилламастăп. (Маринĕн аллине тăсса калама ҍарат̆). Çитет! Санашкал принтсĕпсĕр çын сăмаххисене итлеме ман пĕртте кăмăл çук... Икĕ пит есĕ, Куçма Петровҍ!

**Маринĕн** (вĕресе карĕ). Каçарăр, Анаттоли Виктăрăвиҍ. Анҍах йулашки сăмахху вăл пуринҍен малтан хăвна тивет. Есĕ ху пуçра тăшманла шухăшсем тытнă çĕртех ху курайман çынсемпе пĕрле пурăнатăн. Тахçанах сиснĕ епĕ ăна! Икĕ питли—самăй есĕ вăл.

**Ленă**. Ҍарăн, Куçма. Намăса пĕл, мĕн калаçатăн есĕ? Халех каçару ыйтнă пултăр!

**Маринĕн**. Нет, вăл хăй ыйттăр малтан!

**Ленă**. Есĕ ухмаха йернĕ!

**Виктăрăв** (мăшкăламалла). Да, Маринĕн иншенера комуниссем наркăмăш ĕçтернĕ.

**Маринĕн**. Мана никам та нимĕн те ĕçтермен, анҍах санра наркăмăш сахал мар вара.

**Ленă** (ыйтуллă). Куçма! Тархасшăн ҍарăн...

**Виктăрăв**. (Ленăна аллинҍен тытса хăйĕн патнелле туртса илҍĕ). Брось, Елена! (Пĕрре Ленă, тепре Маринĕн çине пăхса илҍĕ). Ат̆а, Ленă, кайатпăр! Вăл—йултăр, ан тив.

**Ленă**. (Мăринĕн çинҍен куç илмесĕр Виктăрăв патнелле ҍакат̆, хытă пăлханат̆). Сывпул, Куçма...

**Маринĕн**. Ăçта кайатăн есĕ?

**Виктăрăв**. Вăл—вăл ман патăма пырат̆. Пайантан пуçласа Ленă—манăн арăм пулат̆.

**Маринĕн** (пĕр утăм йарса пусрĕ). Што-о? Ленă!

**Ленă.** (Маринĕн çывхарнă пирки пăлханса айакалла кайса тăрат).

**Виктăрăв** (мăшкăласа). Сотсиалисăм тунă çĕрте арăм мĕн тума кирлĕ сана, хисеплĕ хĕрлĕ иншенер Маринĕн?

**Маринĕн.** Ленă! Мĕнле ăнланмалла кăна?

**Викт.** Мĕнле ăнланма кăмăлу пур—çапла ăнлан

**Ленă** (хăвăрт çавранса йапаласене пухат).

**Маринĕн** (йăвăррăн сывласа, айкалла). Авă мĕн çинҌен каланă иккен мана Лермăнттăв... (лăпкăн, çиллине Ҍарса). Ну, кайăр... (Ҍĕрĕп пек хутланса пианинă патне пырса тăҌĕ те, тăрук кайалла çаврăнҌĕ). Халех тухса кайăр. (Татах хутланҌĕ, пĕр çӳллĕ ноттăна пусса илҌĕ).

**Ленă** (йапалисене пуçтарса çитерҌĕ, Виктăрăв çине пăхса илҌĕ, Маринĕн патнелле утăмларĕ). Сывпул, Куçма...

**Маринĕн** (Ҍĕнмерĕ, татах паçăрхи ноттăна пусрĕ).

**Ленă.** Сывпул, тетĕп...

**Маринĕн** (татах пусрĕ).

**Ленă** (ним тума пĕлмест, пăлханат, унтан вăрăмăн сывласа илет те, Виктăрăвпа тухса кайаççĕ).

**Маринĕн** (хуллен алăк йенелле çаврăнҌĕ, пĕрик утăм пуссан—ҌарăнҌĕ). Вот... ĕçĕ те пĕтрĕ... (сăмса тутрипе куçне шăлса илҌĕ). Карĕç... Епĕ вăт—йултăм. (Тавралла пăхса илҌĕ, сĕтел çине Ҍавсаланса çывăракан Луккина курса, ун патне пыҌĕ). Тăр, Луккин йулташ. (Хулпуççинҗен силлет). Вăран тетĕп, çитĕ сана. Вăран!

**Луккин** (ăнланмалла мар мăкăргатса илҌĕ). М-м-м...

**Мариңӗн.** Кай, тетӗп. Сирӗннисем кайаççӗ вӗт... Ес кӑна йулатӑн. Ес те кай ӗнтӗ.

(Луккин вӑранмасť. Мариңӗн ӑна хулайӗнђен тытса хуллен тулалла сӗтӗрсе тухаť те, ђасах кайалла керет).

**Мариңӗн.** Ну, пурне те ӑсатрӑм пулас... (тепӗр пулӗмне кайаť, самантран стсенӑ хыçӗнђе „Маңђӑ-ӑ! Мӗн турӑн?“—тесе тискерӗн кӑшкӑрса йараť те, Маңђӑна çӗклесе тухса, алӑкра ђарӑнаť.)

**Мариңӗн** (кӑшкӑраť). Ленӑ! Маңђккӑ çакӑннӑ!

(ĐАРШАВ).

## VI.

## ТĂШМАН ПАЛĂРЂĔ...

Иккĕмĕш карттинри теккоратси. Хыçалта ĕç шавĕ. Сĕтел хушшинђе Саварин ĕçлесе ларат̆.

**Саварин** (çырат̆). Йулашки теккатă хушшинђе... Пĕтĕм рапођђи массăна́ мопилисатсиленипе... Татăклă улшăну пуçланђĕ...

(Телефон ђăнкăртатрĕ).

**Саварин** (трупкăна тытрĕ). Алљо! Епĕ, епĕ. Кам ку, Петуки? Ну, ну... Аван. Тавай, тавай, малалла çĕмĕрттер... Йурĕ, йурĕ, ăна пĕлĕпĕр. Шатăртаттарăр. Не сдавай темпов, не сдавай. Парăнмаççĕиха? Вот, вот, пит аван. Сывпул (трупкăна хурса каллех çырма тытăнат̆). Строиттĕлствăри прикатăсем... Сотсиалисăмлă ăмăрту меттăђĕ çĕне куçнипе... Йулашки кунсенђе ĕçре пољшевикла хăвăртлăхсем кăтартма пуçларĕç...

(Тупăв кĕђĕ).

**Тупăв.** Сторовă, Алекçей Иванђ! (Ал парса ларђĕ).

**Саварин.** Сторов, Ваççук. Ну, ĕçсем мĕнле?

**Тупăв.** Ниђђево, майпен йĕркене кĕретпĕр. Лесопиљнăй тсех тунă çĕрте ĕçлекенсем каллех пуçит тума пуçланă мĕн те, иртсе карĕ. Лăпланђĕç. Пĕтĕм ĕçĕ те столовăйĕнђе кашăксем çитмен пирки тапранса кайнă...

**Саварин.** Шуйттан пĕлет, кашни пустуй йапалах пĕтĕм ĕçе пăсса пăрахма пултарат̆. Акă, пĕр икĕ ерне иртсен, пирĕн çамрăк прикатăсем тĕрекленме пуçласан— ун пекех пулмаст̆ вăл.

**Тупăв.** А есĕ мĕн тăван?

**Саварин.** Райком вађђи информатси çыратăп. Унтан хам та тухса кайатăп акă тсехсем тăрăх...

**Тупăв.** Ниђђево, Алексей Иванђ, ниђђево (ђ ĕ л ĕ м т и в ĕ р т р ĕ). Таккой вĕри ĕçле пуçларăмăрха. Çĕнтерӳ пуласси паллах!

**Саварин.** Хађ çеç пристăнђрен Петук калаçрĕ. Савăнтарђĕха вăл, — во вçу шатăртаттаратпăр, тет.

**Тупăв.** Вăл ађа ухмах мар, пултармалла. Пăртак вĕрирех те ĕнтĕ, çамрăк пирки каçарма тивет...

**Саварин.** Фронт, Ваççук, фронт. Аттаккă вăхăтĕнђе вĕриленни те усăллă. Вăл вĕремен пулсан пристăнђре халех ăмăрту пуçланмастђĕха

**Тупăв** (т ă ђ ĕ). Йурĕ. Епĕ çĕнĕ хыпарсем çуки тесе çех килтĕм. Апат та çименха пайан, столовăйне кайса килмелле. (А л ă к р а ђ а р ă н с а т ă ђ ĕ). Да... Алексей Иванђ. Виктăрăвпа каçхине мĕн пулђĕ санăн?

**Саварин.** Виктарăвпа... Вăл скантал тапратса йађĕ. Ни с того, ни с сего — ман пата килсе кĕђĕ те, рашђот ыйтма тапратрĕ. Манăн авторитгета укертĕр, тек ĕçлеместĕп, тет. Ђылай тавлашмалла пулђĕ.

**Тупăв.** Вара ĕç мĕнпе пĕтрĕ?

**Саварин.** Лăплантартăм еп ăна. Ђиперех тухса карĕ,

**Тупăв.** Апла, ĕçлет еппин?

**Саварин.** Ĕçлемелле ĕнтĕ, мĕн тата?

**Тупăв.** Ну епĕ карăм. Кайарахпа килетĕпха. (Т у х с а к а р ĕ).

**Саварин** (ç ы р а т). Ĕçе кунран кунах... Çирĕп плансем çине куçарнипе, рапођђисен активлăхне хăпартнипе ..

(П р о н и н кĕђе).

**Пронин.** Йурати кĕме?

**Саварин.** Тавай, тавай. Ирт.

**Пронин** Епĕ, Саварин йулташ, прорапа шыраса килтĕм. Кунта пулмарĕ-и вăл?

**Саварин**. Паçăр пулҫĕ те, тухса карĕ... А мĕн пирки?

**Пронин**. Епĕр маçтĕрскойне туса çитертĕмĕр. Пĕлместĕп—комиççи пекки тумалла-и ăна пăхса тухма?

**Саварин**. Вăхăтрах туса çитертĕр еппин, малтан калана пекех?

**Пронин**. Пулса çитрĕ, Саварин йулташ.

**Саварин.** Ну, премă матур есĕр. Еппин, вăл ҫасах ĕçлеме тытăнат?

**Пронин**. Ырантан ĕçлеме пуçлаттарас тетпĕр.

**Саварин.** Питĕ лайăх! Пар аллуна, Пронин йулташ. (А л л и н е ҫ ă м ă р т а т). Спаççипă сире!

**Пронин**. Мĕншĕн спаççипă? Пире ĕçлеме йанă вĕт, пулăшма...

**Саварин.** Йурат. Епĕ халех прорапа туптарса сирĕн пата йарап. Йĕрçсессĕн хам та пыратăп.

**Пронин**. Пошалстă. Пăхса тухмалла та, ĕçе йамалла... Сывпулăр.

**Саварин**. Сывпул, Пронин йулташ.

(П р о н и н карĕ. С а в а р и н уткаласа илҫе, тăилавĕсене сăтаркаларĕ, ҫĕлĕм тивертрĕ).

**Саварин** Халлĕхе ĕçсем аван пыраççĕха. Ех, малалла та çăвнашкалах илсе пырасҫĕ!

(Телефон ҫаккăртатрĕ).

**Саварин** (т р у п к ă н а). Алљо! Кам ку? Маринĕн? (П а у с ă, у н т а н к а р т а х с и к с е, к ă ш к ă р с а й а ҫ ĕ). Мĕ-ĕн? Виктăрăв? Мĕн вăхăтра? Пĕр çур сехет кайалла? Санăн арăмупа? Систермени? Ҫорт! (т р у п к ă н а п ă р а х р ĕ). Виктăрăв ившенер... Савăтран никама пĕлтермесĕр тухса кайнă. Мĕнле ăнланмалла кăна? (Ш у х ă ш а к а р ĕ). Вĕт халĕ ҫи хĕрўллĕ ĕç вăхăҫĕ... Çынсем ахаљ

те çитмеççĕ... А вăл... Ех, ђорт воçми! Халех пĕлтерес пулат Шупашкара. Пускай халех калла таврăнмалла туђђăр. А впрођђĕм... Вăл çапла пулмаллађђĕ те ĕнтĕ. Пире нумайах усă парас çукђĕ вăл. Пирĕнпеђђĕ, анђах пирĕн марђђĕ... Чтож! Обойдемся и без таких...

(А н н а кĕђĕ).

**Анна**. Ыр кун пултăр, Алекçей Иванђ.

**Саварин** (п у с ă р ă н ђ ă к л ă н). Сторов... Мĕнле ыр хыпарпа килтĕн?

**Анна**. Сана кĕçĕр кинона пыма ђĕнме килтĕм.

**Саварин**. А-а, тинех ĕмĕтленнĕ ĕмĕт çитрĕ-имха санăн

**Анна**. Ан та кала, çитрĕ çав. Ђест-ђестйу туса çи-? тертĕмĕр. Пирĕн телейе кино та персе çитрĕ. Малашне ĕнтĕ—во! Ратио лартасси çеç йулђĕ. Ăна та ыран виçмине хута йаратпăр ĕнтĕ.

**Саварин**. Аван, аван. (Ш у х ă ш л ă н). Ĕçлес пулат çав... Хытă ĕçлес пулат... Ĕçлемесен таптаса лапђăтса каçса кайма пултараççĕ... (Т а р ă м ă н с ы в л а с а и л ђ ĕ). Есĕ тепрере килха, санпа калаçăпăр епĕр.

**Анна**. Еп йаланах хатĕр. (Тăђĕ). Каçхине пыр ĕнтĕ!

**Саварин**. Май пулсан, пыма тăрăшăп...

(А н н а тухат, ăна хирĕç М а р и н ĕ н кĕрет. Салхуланса темиçе каç çывăрман çын теслĕ).

**Саварин**. (т ă ђ ĕ). Лар, Куçма Петровђ...

**Маринĕн** (и р т с е л а р а т, п и р у с ђ ĕ р т е т).

**Саварин** (х у л л е н т е р е х). Çапла еппин?

**Маринĕн**. Çапла, Алекçей Иванђ...

(Паусă).

**Саварин** (л а р ђ ĕ). Мĕнех тăвас ĕнтĕ? (К у ç х а р ш и а й ĕ н п ă х а т). Есĕ арăмна хытă йурататтăни?

**Маринĕн** (т ĕ л ĕ н с е п ă х р ĕ, у н т а н а й а к к а л л а п ă р ă н ђ ĕ). Пĕлместĕп... Хăнăхасси—çирĕп хăнăхнăђђĕ.

**Саварин.** Ку вăт—йапăх. Но... ниђђево. Тепĕр ђухне унтан та йапăхрах пулать. Епĕ те тахçан çемйеллĕ çын пулнă. Манăн арăма кулаксен востанийĕ вăхăтĕнђе ђĕррĕнех сенĕк тăррине çĕклесе вĕлернĕ... Хам курман,—фронтра пулнă ун ђухне, вăл волкомра ĕçленĕ. Пĕлсен—пĕр ерне ухмах пек çӳрерĕм, нихăçан та лăпланмастăп пулĕ, теттĕм. Иртсе карĕ... Санăн та иртсе кайать. Сахалтарах шухăшлас пулать ун çинђен. Тем более, есĕр нумайах пурăнман унпа...

**Маринĕн** (с ы в л а с а и л ђ ĕ). Да, пултăр ĕнтĕ. Тољккă... Аван мар ватлăхра...

**Саварин.** Сана епĕ питĕ лайăх ăнланатăп. Анђах та, çакна асту есĕ: ун пек çынсем вĕсем кивĕ тĕнђерен йулнă çӳп-çапă. Вĕсене пурнăç хăйех айакалла сирпĕтсе пырать, мĕшĕн тесен вĕсем çĕнĕ пурнăç тунă çĕрте—ытлашши. Санран уйрăлса кайнипе вăл телейлĕ пулмалла-и?

**Маринĕн.** Ку та тĕрĕс пулĕ...

**Саварин.** Вĕсемшĕн малта нимĕнле çул та курăнмасть, пирĕн çул пит те паллă. Епĕр çав çулпа кайатпăр та. Хаљхи вăхăтра пурнăç тĕлĕ—револљутси ĕçĕшĕн ĕçлесси, урăхла тĕл пулма пултараймасть, а вĕсем вăл тĕле йышăнасшăн мар... Ну, а йышăнмаççĕ тĕк—çăва патне! Ес ытла ан хуйхăр, сур, тепре каласан. Сана епĕр шанатпăр, есĕ пирĕнпе пулнине куратпăр, çавăнпа хапăл тусах йышăнатпăр сана. А епĕр, ху пĕлен—вăй, пирĕнпе пыракан—йаланах çирĕп никĕс çинђе...

**Маринĕн** (т ă ђ ĕ). Йурĕ... Спаççипă, Алексей Иванђыр сăмахушăн (а л ă п а р а т). Акă сана манăн алă,—епĕ мĕн такăнса ӳкиђђенех сирĕнтен уйрăлмастăп...

**Саварин.** Вот и хорошо.

(У л а н к а й ђупса кĕђĕ).

**Уланкай.** Еп кансĕрлемерĕми сире?

**Саварин.** Што ты? Мĕн калаçатăн есĕ?

**Уланкай.** Манăн—васкавлă ĕç... (сĕтел патне ђупса пыђе). Епĕр, Алексçей Иванђ, епĕр... Вретиттĕлствă тупрăмăр!

**Маринĕнпа Саварин** (хăраса). Ăçта? Мĕнле?

**Уланкай.** Çиловой стантсине сўтсе çĕнĕрен купалас пулат!

**Саварин** (Уланкайа аллинђен çавăрса тытрĕ). Мĕншĕн? Мĕн пулнă?

**Уланкай.** Виктăрăв иншенер ăна тсемĕнт çинђе мар, треппĕљнăй раствор çинђе кăна купалаттарнă!

**Маринĕн** (Уланкай патне уткăнђĕ). Не мошĕт пыт!

**Саварин.** Мĕнха вара, мĕн?

**Уланкай.** Треппĕљнăй раствор пĕђĕкрех, ахаљ çуртсем тунă çĕрте çеç йурăхлă вăл. Склатсем, ампарсем тума йурат. Анђах çиловой стантсисене тем каласан та йурăхсăр... Твикăттĕлсене хута йарсан, вăл малтанхи уйăхрах ишĕлсе анма пултарат...

**Маринĕн.** Тĕрĕс, Алексçей Иванђ! Çаплах вăл.

**Саварин.** Йури тунăши вара ăна?

**Маринĕн.** Йури!

**Саварин.** Ăçтан пĕлетĕн?

**Маринĕн.** Унăн никĕсне хунă ђух пирĕн тсемĕнт пулнă, лайăх астăватăп епĕ.

**Саварин** (телефона шанкăртаттарма тытăнђĕ). Арестоват! Задержать! (Трупкăна). Ђукунçул стантсине парăр! Мĕн? Стантсă, тетĕп. Ĕçлемест? Провăт пăсăлнă? Ђорт! (Трупкăна пăрахрĕ). Митук! Автомопиљ илсе тухтар! Милитси ђĕн! Ата, кайатпăр, хам та пыратăп!

(Портфĕлне пуçтарса, кайма хатĕрленет, алăкран Иллепиђђе ђупса кĕрет).

**Саварин.** Сана мĕн?

**Илле пиђђе** (в а с к а с а). Сăмах пур санпа..

**Саварин** Мĕн? Кала ђасрах!

**Илле пиђђе.** Епĕ аса илтĕм! Аса илтĕм! Нумайђђен астăваймарăм та—хаљ астурăм! Çавах вăл, çавах! Паллатăп!

**Уланкай.** Кама, мĕн паллатăн?

**Саварин.** Кала ђасрах, тытса ан тăр.

**Илле пиђђе.** Виктăрăв иншенера палларăм...

**Саварин.** Есĕ ăна ку таранђђен палламанђђĕ-им?

**Илле пиђђе.** Паллană та, урăхла паллană. Хаљ—ђăннипе палларăм!

**Саварин.** Мĕнле?

**Илле пиђђе.** Вăл шурквартейтсă. Ăна халех тытса хупмалла. (К ă к ă р н е у ç с а й а ђ ĕ). Вунтăххăрăмĕш çулта, Çĕпĕрте, шуррисен контр-раçветки аллине лекcессĕн, хĕртнĕ киншалпа... Астăватăри, саççетанире йепле хăраса ӳкрĕ вăл çак хĕресе курсан? Палламаççĕ терĕ пулĕ те—палларăм, пушали сухал ӳстерсе пысăк куçлăх тăхăннă пултăр...

**Саварин.** Çитет! Урăх нимĕн те ан кала! (п у р т е а л ă к п а т н е л л е у т к ă н ђ ĕ ç).

(Ђ А Р Ш А В).

## VII.

## ШТУРĂМ.

Клуп. Плаккатсем, ÿкерђексем. Пианинă. Ăмăрту мĕнле пынине кăтартакан хăма çине рак, тимĕр шаца, сысна, лаша, пăравус, йероплан тунă. Весем айĕнђе—ђыхвăрсем курăнаççĕ.

Урлă—тенкелсем лартса тултарнă.

Анна пукан çинђе тăрса, хуллен темле йурă мăрлатса çтена çумне плаккатсем çыпăçтарат.

**Анна** (сиксе анса хаљ çеç çакнă плаккат çине айакран пăхат). Ку капла пултăрха. Хаљ кăна... (теприне илсе, йурла-йурла çакат).

(Маңђă кĕђĕ).

**Маңђă**. Страстĕ, Никколайĕвă йулташ.

**Анна** (пăхмасăрах). Сторов, Маңђă. Кино курма кил тĕни?

**Маңђă**. Кинона çав (йĕри-тавралла пăхат). Ай-ай, пит хитретлетсе пĕтерне.

**Анна**. Хитрех темелле мар та, пырат ĕнтĕ... Ес пуљнитсăра выртат темерĕçи çав? Хăçан тухрăн?

**Маңђă**. Хаљ çеç... Киле карăм та, никам та çук. Таçта кайнă. Вара кунта килес, терĕм.

**Анна** (пукан çинђен анђĕ). Пит те нађарланса кайнăçке есĕ, Маңђă! (тинкерсе пăхат). Мĕнле пулђĕ вара вăл сан?

**Маңђă**. Хам та пĕлместĕп...

**Анна**. Нга-а... Çапах та, пустуй хытланнă есĕ. Малотушие, теççĕ ăна. А вĕт есĕ пĕртте пуçĕпех çухалнă çын мар. Çамрăк, хаљ çеç ÿссе çитетĕн, вăй пур...

**Маңђă**. Проста... Нимĕн те шухăшламарăм пулас епĕ.

**Анна**. Ака мĕн... Малашне шухăшлама вĕренмелле, йурату çинђен вĕрентекен пăнтăхнă романсене вулама пăрăхса, ĕçе тытăнас пулат.

**Маҍӑ**. Епӗ нимӗнле ӗҫе те пӗлместӗпҫкеха...

**Анна**. А-а, ан кала! Епӗ сана халех ӗҫ тупса пама пултаратӑп. Пире акӑ пиплиоттеккӑр кирлӗ. Килӗшетӗни?

**Маҍӑ** (с а в ӑ н с а). Хаваслансах килӗшетӗп, Никколайӗвӑ йулташ.

**Анна**. Анҍах та—ҍур: штопӑ пур ҫӑмӑлттай шухӑшсене те пӑрахмалла. Каллех Лермӑнттӑв пеккисене...

**Маҍӑ** (ҍ а р а т). Ан кала мана ун ҫинҍен!

**Анна** (т и н к е р с е п ӑ х р ӗ). Ӑна пайан тытса хупнӑ, илтнӗ-и есӗ?

**Маҍӑ**. Мӗншӗн?

**Анна**. Вӑл рапоҍҍисем хушшинҍе контр-револуутси сарнӑ.

**Маҍӑ**. Ҫапла кирлӗ те ӑна! Еп ун ҫинҍен татах каласа кӑтартма пултаратӑп.

**Анна**. Мӗн? Темскер пӗлетӗним?

**Маҍӑ**. Вӑл сана питӗ кураймасҍӗ. Вӑл сана хуликансене тытса парса мӑшкӑлаттарасшӑнҍҍӗ...

**Анна** (т у т и н е ҫ ы р т с а, с ы в л а с а и л ҍ ӗ). Ну, унӑн ӗмӗҍӗ татӑлҍӗ. Сутран вӗҫерӗнсен те, текех вӑл кунта килеймест ӗнтӗ!

(В ӗ ш л е п е В а ҍ к к а кӗҍӗҫ).

**Вӗшле**. Йурати кӗме?

**Анна**. Кӗтӗр тӗк—йурат ӗнтӗ. Есӗр кино курма-и?

**Ваҍкка**. Кино курма.

**Анна**. Кино тепӗр ҫур сехетрен тин пуҫланатха, аҍасем...

**Вӗшле**. Апла пулсан, пирӗн каймалла-и халҍ?

**Анна** (к у л а т). Хӑвӑртан килег вӑл. Таҫта каймалла пулсан...

**Ваҍкка**. Ҫук, пирӗн ниҫта та каймалла мар.

**Анна**. Ну, апла пулсан—йулăр. (**К а й м а   х а т ě р л е н е т**). Столовăй уçăши хаљ, ађасем?

**Вěшле**. Уçă, уçă.

**Анна**. Ата манпа, Маңђă. Пыратăни?

**Маңђă**. Ата. (К а р ě ç).

**Вěшле**. (м а л а р а х   и р т р ě). Кил, Ваңђкка... (т а в р а л л а   п ă х а т). Ну, покранимěр клуп!

**Ваңђкка**. Пирěн колхосринђен иртерет çав...

**Вěшле**. (ă м ă р т у   х ă м и   ç и н е   к ă т а р т с а). Пăхха, пăхха! Вот, сторăвă ку. (в у л а т). Амăрту хăми... Снађђăт, çапла пулат. Кунта (т и м ě р   ш а п а   ç и н е   к ă т а р т р е) тěрлě лотăрсен йађěсем пулаççě, кунта—вěсенђен кăшт аванраххисен йађěсем, ак кунта—сысна пек мěшěлтетекеннисен.

**Ваңђкка**. Сысна кăнтăрлисен!

**Вěшле**. Во-во! Пит тěрěс лекрěн. Кунта пěртак лайăхраххисен, тата лайăхраххисен, совçем лайăххисен... А йероплан çинђе вара...

**Ваңђкка**. Унта камсем пулаççě?

**Вěшле**. Ну, çавна та пěлместěни вара? Ес те çав! Йероплан çинђе.. (х ă й н е   к ă к ă р ě н ђ е н   т ě л л е р ě). Епěр пулатпăр!

**Ваңђкка**. (В ě ш л е н е   х у л п у ç ç и н ђ е н   ç а п р ě). Тěрěс калатăн.

**Вěшле**. (м а л а р а х   и р т р ě). Ой, Ваңђкка, мусăк йур! (Уçрě). Калама йуратши?

**Ваңђкка**. Неснай... А ху пěлетěни калама?

**Вěшле**. Пěлетěп. ШКМ-ра вěреннě ђух ройаљ çинђе хытă каланăшăнах выкăвăр пађěç пěрре...

**Ваңђкка**. Йарапар елпин.

(**Пукансем илсе пианинă патне ларђěç**).

**Вĕшле**. Мĕнлине каласши? (пĕр пӳрнепе пусса „Кай, кай Ивана“ кĕввине майлаштарат).

(Хума, Терентти, Анфис, Марук шавласа кĕҙĕç).

**Терентти**. Сер мĕн тăваҙҙĕ конта?

**Вĕшле**. Пер конта кокăђ пĕçереҙҙĕ.

**Марук**. Айтăрух, клуп туса лартнă...

**Анфис**. Сре илемлĕ, мур илещшĕ...

**Хума**. Ес, Вĕшле, ҙăнаипех выђатăни, ай пăсатăн çеç?

**Ваҙкка**. Ҙиперех калат!

**Марук**. Неснай, Вĕшлеренех пулатши вăл.

**Вĕшле**. Мĕн, Вĕшлене пушăтран тунă тетĕни есĕ?

**Анфис**. Ну, ну, каласа кăтартха.

**Вĕшле**. Пашалстă! Љупой. („Хаз булат“ кĕввине выђаса илет). Куртăра?

**Анфис**. Ара, кунпа йурлама та пулат, мур!

**Ванкка**. А ес мĕн тетĕн?

**Терентти**. Тавай еппин, йорласа пăхар... Сер, Анфис, сомахне пĕлеҙҙĕ вĕт?

**Анфис**. Пĕлеҙҙĕ. Пуçла, Вĕшле...

**Вĕшле**. Пашалстă! (выђама тапратрĕ).

**Анфис** (йурă пуçларĕ)—Комунарсен çемйи...

**Пурте** (хутшăнҙĕç) —Таҙăрах пуçтарнар,
—Хапрăк-савăт лартар,
—Савăнса пурăнар...

(Маринĕн, Илле циҙҙе, Саварин, тата Уçăп, Уланкайа алли-урисенҙен çĕклесе кĕреççĕ те, сак çине хураççĕ. Çамрăксем вĕсем патне ҙупса пыраççĕ).

**Çамрăксем**. Мĕн пулнă?

**Саварин**. Шăп... Ан шавлăр.

**Маринĕн**. Напраснă кунта илсе кĕтĕмĕр, тӳрех пуђнитсана илсе каймаллаҙҙĕ.

**Уçап**. Питĕрнĕ унта, хвершшăл патне ҙупрĕç...

**Саварин** (çамкине тутăрпа шăлса илђĕ). Йун нумай йухрĕха унăн... Ех, йăвăр ан пултăрђђĕ! (куклен се Уланкай аллине тытрĕ).

**Уçап.** Ай-ай-ай... Савăтсенђе миçе çул ĕçлетĕп ĕнтĕ, анђах кун пек пулнине курман. Иншенер иншенера вĕлерет!

**Илле пиђђе** (Маринĕна). Мĕнле пулђĕ вăл? Хăвалана ђухне-и?

**Маринен.** Çавăн ђух çав. Епĕр çывăхах пытăмăр... Арĕслеме тăрсан вăл сасартăк вăрман ăшнелле сикрĕ те, унтан пеме тапратрĕ. Ну, Тимитри Петровиђ хĕрсе карĕ пулмалла—ун патнелле уткăнђĕ. Çавăн ђухне тиврĕ ăна...

**Илле пиђђе.** А хăйне мĕнле? Тытрăри?

**Саварин.** Паллах, вĕçертмерĕмĕр. Патронĕсем пĕтсен нимĕн те тăваймарĕ вара.

(Уланкай пуçне çĕклерĕ).

**Уланкай.** (вăйсăрăн). Шыв... Шыв... (çĕкленме тăђ'ĕ). Мĕн... Мĕн мана?

**Саварин.** (ыттисене). Шыв, ђасрах! (Уланкайа). Нимех те пулман... Акă, перевйаскă тăватпăр та, иртсе кайать. Ес толђккă ан пăлхан, вырт...

**Маринĕн.** Епĕр сана халех пулђнитсана илсе кайатпăр...

**Уланкай.** (сасартăк аса илђĕ). А? А вăл ăçта? Виктăрăв!

**Саварин.** Лăплан... Тартман епĕр ăна, Митук, тытнă. Ăна илсе карĕç ĕнтĕ.

**Уланкай.** Апла пулсан... (выртрĕ).

(Ахмет ђупса кĕђĕ).

**Ахмет.** Туктăр килђĕ.

**Саварин.** Карăмăр еппин. Тыт, Куçма Петровђ... Ађасем, хăшĕ те пулин есĕр те тытăр... Асăрханарах, ыратмалла ан пултăр.

(Уланкайа çĕклесе тухаççĕ).

**Çамрăксем** (Илле пиђђене тытса ђарђĕç). Илле пиђђе, мĕн пулнă, йĕркеллĕн каласа парха.

**Илле пиђђе.** Илтмерĕри вара есĕр? Леш, Виктăрăв тени, савăтра тем те пĕр туса тултарнă та, Маринĕн арăмĕпе тарма тапратнă, ăна сиссе Алексей Иванђсемпе Уланкайсем хăвалама кайнă... Тытнă ђух лешĕ Уланкайа персе амантнă...

**Терентти.** Вот шойттан-ан! Уна хуне çапса пăрахмалла мĕн, ђорта.

**Вĕшле.** Еп пулсан—патĕнђех пантлаттармалла!

**Вађкка.** Ăна хăйне тытнă-и?

**Илле пиђђе.** Тытнă, тет.

**Терентти.** Апла тăк ахалех каçармĕçха.

**Вађкка.** Паллах, ахаљ пулмасť.

**Вĕшле.** А савăтра мĕн тунă лешĕ?

**Илле пиђђе.** Електритсă стантсисене йурăхсăр купалаттарнă тет, хаљ çĕнĕрен тума тивет, тет.

**Вĕшле.** Мĕнле тутарнă?

**Илле пиђђе.** Ђортле-и тен! Лайăхах пĕлеймерĕмха хам та.

**Терентти.** Ну, истори!

**Илле пиђђе.** Истори çав. Ним тума та çук—тăшмансем пуçĕсене çаплах çĕклеççĕха. Вăл вĕт—шуркăвартейтсă пулнăскер. Ман кăкăра та—çав Виктăрăвах.

**Пурте.** Ђăнахи? Ăçтан пĕлетĕн есĕ ăна.

**Илле пиђђе.** Палларăм.

**Пурте.**—Ăçта пулнă вара вăл?

—Хăçан пулнă?

—Каласа кăтартха, Илле пиђђе...

**Илле пиђђе**. Пĕлесех килет пулсан—итлĕр. (ларђĕ). Вăл краштăн вăрçи вăхăтĕнђе, Çĕпĕрте пулђĕ... Епĕр ерне хушши çĕмĕрсе пытăмăр шуррисене. Унтан пĕр вăрман умĕнђе ђарăнмалла пулђĕ. Шуррисем пит вăйлăн йăва туса ларнă, терĕç. Темиçе-кун пĕр вырăнта тăтăмăр. Ну ĕнтĕ, пирĕн малаллах кайас пулатха вĕт. Епĕр виççĕн шуррисем çинђен пĕлме, раçветка. Çĕрле, тĕттĕм, пăрлă çăмăр, сивĕ... Пĕрик çухрăм вăрманпа кайсан, çул çине тухрăмăр. Çав пĕтерђĕ те пирĕ... Сăсартăк...

(Çутă сӳнђĕ, Пăшал сасси).

## ЕППИСОТ (хыçалта).

Шуррисен контр-раçветкин штапĕ. Сĕтел хушшинђе контр-раçветкă пуслăхе, писсăр, тата сĕтел пуçĕнђе шурă офитсер тумĕпе Виктăрăв, хĕç çине ђавсаланса ларат. Алăкра салтак тăрат.

**Нађђалнĕк**. Кĕрт теприне.

**Салтак** (ђеç парса, кĕли çинђе çаврăнса тухса карĕ).

**Виктăрăв**. Ку пуринђен те усал, вашшĕ плахороти. Пĕр сăмах та пĕлеймерĕм епĕ унтан.

**Нађђалнĕк**. Ниђђево, епĕр калаçтарăпăр. Йепле калаçĕшшĕ, пулманнине каласа парĕ.

(Салтак кĕрĕк пиншак тăхăннă, çара пуçлă, аллисене кайалла çыхнă, Илле пиђђене илсе кĕртрĕ).

**Нађђалнĕк**. Ну, молотђĕк, калаçарха епĕр санпа.

**Илле пиђђе**. Манăн сирпе калаçмалли ним те çук.

**Нађђалнĕк** (йури йăвашшăн). Ой! Йепле вара „нимĕн те çук“? Ман шутпа, калаçмалли пит нумай.

**Илле пиђђе**. Нимĕн те çук, пулма та пултараймаст.

**Нађђалнĕк**. Пăрах, пăрах. Сăнран пăхсан, есĕ аван ăслă çын пекçке, е? Непоç, авланнă, ађаллă-пăђаллă пулĕ, а? Киле те кайас килет пуљ, а? Вĕт епĕр иксĕмĕр йăх калаçнинђен нумай килет, ăна пĕлес пулат санăн.

**Илле пиђђе**. Мĕн каламалла вара сире ман?

**Нађђалнĕк**. Нумай мар! Темиçе сăмах... Темиçе сăмах санăн пурнăçна çăлма та, сана телейлĕ тума та пултарат. Ăнланатăни?

**Илле пиђђе**. Тата мĕн?

**Нађђалнĕк**. Нимех те мар... Çакна çеç кала есĕ: во-первых, хăш ђаçрен еçĕ, унта миçе салтак сирĕн, ăçтарах тăратăр, орути миçе... А? Ну, кала...

**Илле пиђђе**. Манран есĕр... Нимĕн те пĕлейместĕр!

**Нађђалнĕк**. Каламастăн, снађђăт?

**Илле пиђђе**. Пĕр сăмах та! Хут вĕлерĕр, çакăр мана!

**Нађђалнĕк** (с и к с е т ă ђ ĕ). Охо! Ав мĕнле кайăк есĕ. Нимĕн те каламастăни еппин?

**Илле пиђђе** (н и м ĕ н т е ђ ĕ н м е р ĕ, п у ç н е а й а л а р а х у с р ĕ).

**Нађђалнĕк**. Апла пулсан, епĕр урăхла калаçтарăпăр сана. (В и к т ă р ă в а). Господин офицер, займитесь! (с а л т а к а). Раздеть!

(Айаккарах кайса тăђе. С а л т а к И л л е п и ђ ђ е н кĕпи тумисене вĕçертсе кăкăрне уçрĕ, В и к т ă р ă в киншал кăларса ăна ламппă çинђе хĕртме тытăнђĕ).

**Нађђалнĕк**. Ну, гадина, сисетĕни мĕн пуласса? Ма ђĕнместĕн? (й а н а х ĕ н ђ е н п ы р с а т ы т р ĕ). Çĕкле пуçна! Калатăни, каламастăни?

**Илле пиђђе**. Сирĕн ирĕк. Вĕлерĕр...

**Нађђалнĕк** (И л л е п и ђ ђ е н е ç у п с а й а ђ ĕ). Молчать, сволочь! Йулашки хут ыйтатăп—калаçатăни?

**Илле пиђђе** (т ă в ă н с а ç и т н и п е х у с к а л с а и л ђ ĕ т е, п у ç н е у с р ĕ).

**Нађђалнĕк**. (В и к т ă р ă в а). Действуй!

**Виктăрăв**. (И л л е п и ђ ђ е к ă к р и н е ы т л а р а х у ç р ĕ т е, к и н ш а л н е ç ы в ă х а х л е ç р ĕ). Кала, йытă! Хăш ђаçрен?

**Илле пиђђе.** Пус ђасрах! Мĕн пăхса тăратăн тата?

**Виктăрăв.** (киншалпа Илле пиђђе кăкăдĕнђен сĕрђĕ). На, ыр кур!

**Илле пиђђе.** Ы-х, йытăсе-ем... (Сулăнса карĕ).

(Çутă сӳнђĕ. Стсенă тепĕр хут çутăлнă çĕре пуртепаçăрхи вырăнта лараççĕ).

**Илле пиђђе.** Текех ĕнтĕ вăл пире сийен тăваймаст, хађ вăл пирĕн алăра! Пушали тем пек ђейеленнĕ пултăр, çапах лекрĕ...

(Анна, Мађă, тата рапођђисемпе рапотнĕтсăсем йышлăн шавласа кĕреççĕ).

**Анна.** Мĕнле йумах йăратăр?

**Вађкка.** Пĕлетĕн пуљ? Çавăн çинђенех калаçатпăр.

**Анна.** Ытлах ан хуйхăрăр... Хвершшăл пăхрĕ те, суран питех хăрушă мар терĕ.

**Илле пиђђе.** Ђăнах та-и?

**Анна.** Ђăнах çапла каларĕ. Йун нумай йухнипе çеç вăйсăрланса çитнĕ тет... (пурне те). Ну, вырнаçса ларăр, йулташсем. Халех кино пуçлатпăр!

**Сасăсем.** — Ларас, ларас...
— Ей, Ентри, кил кунта...
— Сиктер тенкелне.
— Хыçаларах ата, унтан аванрах курăнат...
— Суй! Калăн есĕ!
— Ђăн калатăп!

(Вырнаçса лараççĕ те, çутă сӳнет. Сылтăм çтенари шăтăкран сулахайалла кино çутти ӳкет, кино-аппарат хăлтăртатнă сасă илтĕнет).

**Пурте** (вулаççĕ). Кашни ир, ултă сехет çитсессĕн, Перлинри савăтсем вăрăмăн кăшкăртса, рапођђисене çĕçе йыхăраççĕ...

(Паусă).

...Рихтӗр хуҫа савӑтӗнҫе 30 ҫул ӗҫленӗ Фрис-Мӳллӗр рапоҫҫи те пайан ирех ӗҫе тухма карӗ...

(Паусӑ).

...Анҫах, пайан ӑна савӑт алӑкӗнҫен кӗртмерӗҫ. Ӗнер вӑл ытти рапоҫҫисемпе пӗрле—комуниссен партти орканисатсиленӗ миттӗнкра пулнӑ...

(Паусӑ).

...Ҫавӑншӑн савӑт хуҫи вунултӑ ҫынна савӑтран кӑларса йанӑ...

(Паусӑ).

...Вунпӗр сехетре савӑт хуҫи—Кермӑн Рихтӗр ыйӑхран вӑранҫӗ те, ҫӳреҫине уҫса тутлӑн карӑнса илҫӗ...

**Сасӑ.** Ну, мӑнтӑр сысна та вара!

**Тепри.** Пуссан вунӑ пӑт пулмалла...

**Виҫҫӗмӗш.** Сахал йун ӗҫнӗ-им вӑл, йытӑ.

(Кино-аппарат сасартӑк ҫарӑнҫӗ).

**Мехханӗк сасси.** Мӗншӗн ҫартартӑн?

**Петров сасси.** Ҫар теҫҫӗ сана, вот и вҫо!

**Мехханӗк сасси.** Мӗншӗн? Кам хушрӗ?

**Петров сасси.** Еп хушатӑп!

**Мехханӗк сасси.** А я тебя не признаю!

**Петров сасси.** Нет, признаешь!

**Халӑх хушшинҫен.**— Мӗн пулнӑ унта?

— Кам ҫарса лартрӗ?

— Мӗншӗн ҫаратӑр?

— Кӑтартӑр тавай!

— Кӑтартӑр!

(Халӑх умне Т у п ӑ в тухса пукан ҫине хӑпарса тӑҫӗ).

**Тупӑв** (х а ш к а с а, а л л и н е ҫ ӗ к л е р ӗ). Шӑпланӑр, йулташсем! Кинона епӗр ҫарса лартрӑмӑр...

**Темиҫен.** Мӗншӗн? Кам права паҫӗ сире-е?

**Петров** (сиксе тӑҫӗ). Парӑр калама!

**Сасă**. Пошшол к ђортту!

**Илле пиђђе** (сиксе тăђě). Мěн пулнă тата? Шăпланăр!

**Тупăв** Йулташсем! Пирěн пěр сăмах кăна. Шыв сасартăк тулса кайнипе, йулашки кунсенђе кŷнě маттерйалсем, машшинсем, кирпěђсем, тсемěнт—кěçěр шыва путма пуçланă... Çавсене пирěн халех çăлас пулат, çăлмасан ирђђен темиçе пин тенкěлěх упыткă, сийен пулат. Ăнлантăри?

(Паусă).

**Илле пиђђе**. Апла пулсан... Апла пулсан—кайас пулат.

**Петров**. Кинона кирек хăçан та курма пулат ăна, йулташсем.

**Тупăв**. Йулташсем! Кама савăт хаклă, кам пирěн тăшман мар-атăр пирěнпе Сăр çине! Тепěр сехетрен—кайа йулатпăр епěр.

**Сасă**. Атăр еппин!

**Илле пиђђе**. Пирěн прикатă, кайатпăри?

**Нумайăн**. Кайатпăр!

**Тепěр сасă**. Конешнă, кайас пулат...

**Тупăв**. Ну, кам пыма килěшет?

**Нумайăн**. Пурте пыратпăр!

**Тупăв**. Атăр!

(Сиксе анса алăк патнелле уткăнђě. Ун хыççăн—ыттисем те. Ђасах йурă пуçланђě: „И в битве упоительной“...

**Анна** (куракансем йенелле). Пулмарě манăн кино!

(Ђ А Р Ш А В).

## VIII.

## „ТАТĂКЛĂ ÇАПĂÇУ“...

Рапоҫҫисем пуранакан парак. Икĕ ҫўреҫе. Варринҫе сĕтел. Çтенасем ҫинҫе, малти кĕтесре револҫутси ҫулпуҫĕсен сăнесем, пĕр икĕ лосăнк. Сылтăм çтена ҫинҫе—ратио трупи, сехет.

Каç пулнă. Сĕтел хушшинҫе Ваҥкка ларат,—йўле пилекĕн, урисене ҫăлха çеç тăхăннă. Сулахай аллине марлĕпе ҫыхса мăйĕнҫен ҫакнă. Вăл кĕнеке пăхкаласа, пăхăркаласа ларат.

**Ваҥкка** (к ĕ н е к е н е п ă р а х с а). Тфу, есрелĕ! Тата ик-виçĕ кун ҫакнашкал ухмаха супса лармалла пулсан, пуçпех пĕтетĕп епĕ. Йе ухмаха йерсе кайатăп, йе тата мĕн те пулин пулат! (Т ă р с а у т к а л а т). Йĕркесĕр мăшкăлла йапала пулҫĕ ку манăн! (А н н а к ĕ р е т).

**Анна**. Мĕн çĕмĕрлен, Ваҥкка? (с ĕ т е л п а т н е и р т с е л а р а т).

**Ваҥкка**. Çĕмĕрлме мар, ҫасах акă çтена ҫине сикме пуçлатăп. Курăн!

**Анна**. Ой! Мĕншĕн аплах тата?

**Ваҥкка** (с у р а т). Ахаљ мар ĕнтĕ. (А л л и н е к ă т а р т а т). Çак есрелĕ аллишĕн пулат вăл.

**Анна** (х ă р а с а). Кăшт та тўрленмести-м? Хвершшăл санăн сурану ытла хăрамаллах мар, терĕçке?

**Ваҥкка**. Терĕ... Ухмах вăл сирĕн хвершшăл! Епĕ ăна пайан ир çутăлтарса йарас патнех çитрĕм.

**Анна**. Мĕн пирки?

**Ваҥкка**. Мана тĕрмере усранă пек усранăшăн. Алли ĕнтĕ тўрленсе çитнĕпе пĕрех, шыçни те иртсе карĕ, ыратма та пăрахрĕ... Еп пайан ĕçе тухасшăнҫҫĕ, а вăл... (м ă ш к ă л а с а, с ă м с а в и т ĕ р) „покотитте, молотой

ђоловек, неђҫа-а“... Епĕ ăна апла та калатăп, капла та... А вăл снай сухалне силлет. Тупнă пĕр сăмах—„нелҫа!“ Ђорт!

**Анна.** Ара, вăл сана хăвнах ыр тăвасшăн пулĕ. Тен, халех ĕҫлеме тытăнсан, аллу тепĕр хут ыратма пуҫлаť?

**Ваңкка.** Кĕсре хӳри! Кунта ҫынна ахаљ ҫăкăр ҫитерсе усрама, курорт мар вĕт, кунта ĕҫлес пулаť, ђорт воҫми. Епĕ хам ĕҫлеме пултаратăп тесе калатăп тăк—унăн урăх ĕҫ те ҫук!

**Анна** (п а п к и н е  с ĕ т е л  ҫ и н е  п ă р а х а ť). Ес, Ваңкка, пустуй вĕриленетĕн! Йунна кăштах сивĕтес пулаť. Йĕркесĕр сиксе кайни вăл нихăҫан та усă кӳмест, сийенлет кăна. Аллуна та ҫавăн пиркийех сийенленĕ есĕ.

**Ваңкка.** Мĕншĕ-ĕн?

**Анна.** Усăсăр вĕриленнĕ пирки! Кам шуйттанĕ хушрĕ сана ђемĕнт пиђкипе моски ҫинђен тӳрех сикме? Мĕн, паттăр ĕҫ тăватăп терĕни?

**Ваңкка.** Ес куртăни?

**Анна.** Курман та, ҫынсем каларĕҫ. Сахалтан та пĕр меттăр ҫӳрă ҫӳллĕшĕнђен сикрĕн тет. Ҫапла мари-м?

**Ваңкка** (л ă п к ă р а х). А рас моски ҫийĕпе иртме ҫукђĕ! Ҫăмăрĕ ҫăваť, шывĕ хутшăнаť, маттерйалĕсем шыв ăшне путма пуҫланă, йепле те пулсан ҫăлмалла вĕсене... Халăхĕ лăнк тулђĕ, москипе иртме ҫук, пурне иртерсе йама сахалтан вунă минут кĕтмелле...

**Анна.** Сикрĕн вара?

**Ваңкка.** Сикрĕм.

**Анна.** Вара мĕн пулђĕ?

**Ваңкка** (п ă р ă н с а). Астумастăп.

**Анна.** (м ă ш к ă л а н ă  п е к,  к у л с а). Вот сана—астумастăп! (п ӳ р н и п е  х ă й н е  ҫ а м к а р а н  ш а к к а ť). Йĕркине пĕлмесĕр сикмен пулсан есĕ сахалтан та тепĕр

çирĕм пиђке ђемĕнт кăлараттăн вĕт! Нихăçан та ун пек пуççăр пулма йурамаст, ĕçе хăвăрт тумалла пулсан та ăна йĕркеллĕ тăвас пулат.

**Вађкка** (а л л и п е с у л с а). Калăн есĕ! Хĕрлисем Переккопа илнĕ ђух нимĕн те шухăшламан.

**Анна**. (с и к с е т ă р а т). Ну-уш, шалиш!

**Вађкка**. Мĕн, çапла мари-м?

**Анна**. Конешнă çапла мар. Унта кашни пусăма шухăшласа хунă,кашни утăма мĕнле йарса пусмаллине палăртнă, çавăнпа çĕнтернĕ те.

**Вађкка** (п у ç ĕ п е с у л ђ ĕ). Есĕ ĕнтĕ калаçма ăста!

**Анна**. Ак, тĕсаслĕхшĕн хамăр савăтри ĕçсенех илер. Пĕр уйăх кайарах кунта ĕçсем мĕн тери йапăх пулнине пĕлетĕн есĕ. Çавăн ђухне прорыва хирĕç наступленине пĕлсе, планпа туса пыман пулсан, прорыв çакăн пек хăвăрт пĕтеђђĕ тетĕни? Пĕтмесђĕ!

**Вађкка**. Каларăмçке, сана еп çĕнтерейес çук...

**Анна**. Тĕрĕс калаçмастăн та, паллах, çĕнтерейместĕн... Асту ĕнтĕ малашне: анарххи вăл етеме пĕтерекен йапала.

**Вађкка**. Ну, йурĕ, йурĕ. Çитĕ! (К ă с й и н ђ е н п и р у с к ă л а р с а А н н а п а т н е п ы р а т). Йатлаçас вырăнне—мана ђĕлĕм туртма пулăшха вăт. Усăллăрах пулĕ. Акă сана шăрпăк, ђĕртсе пар (п и р у с н е х ы п с а А н н а н а с п и ђ к ă т ы т т а р а т). Ђĕлĕм те туртаймастăп сирĕн есрелĕ хвершшăлне пула. Хăрах алăпа тем ђухлĕ мекĕрленсен те ђĕртме май килмест.

**Анна**. (ш ă р п ă к а и л с е ç у т а т). Ме, турт... (К у л а р а х). Анарххис!

**Вађкка** (ђ ĕ р т е т). Спаççипă.

**Анна**. Тўррипе, Вађкка, епĕ кунта ĕçпе килнĕђђĕ...

**Вађкка**. Мĕнле ĕçпе?

**Анна**. Ађасемпе калаçса татăлма. Ăçта вĕсем?

**Вањкка.** Пурте ĕçлеме карĕç. Еп кăна уйри тăманалла ухмаха супса ларатăп.

**Анна** (сехет çине пăхат). Вĕсен ĕçĕ пиллĕкре пĕтмеллеçке. Халĕ ентĕ вуннă çитет.

**Вањкка.** А ес пĕлместĕни вара—прорыва пĕтермелли йулашки супотнĕк вĕт пайан.

**Анна.** А-а, ђăнахçкеха! Пиплиоттĕк ваљђи килнĕ кĕнекесемпе тăрмашса—мансах кайнă.

**Вањкка.** Еп манман та—килте ларатăп. Çавăн пирки тоссатнă та.

**Анна.** (кулат). Ниђђево, ĕç малашне те сахал марха... Халех килеймеççĕ ĕнтĕ вĕсем, е?

**Вањкка.** (кĕлесем çинђе çаврăнса илет Вĕсем ĕçленĕ çĕрте ратиостантси çуккипе, вăл хыпар ман иата çитеймерĕха. Халлĕхе епĕ Мускавпа çеç çыхăну тытса тăратăп. (Пукан çине тăрса, ратио трупи хыçĕнђе çаврăккалат, ратио йурлама пуçлат). Пошалстă, конђђерт сана ваљђи!

**Анна** (аллипе сулат). Конђђерђĕ тарамха, вăл халь клупра та лайăх йурлат. (Шухăша кайат). Епĕ ыран сирĕн политкрушока пухасшăн, есĕ калаха ађасене.

**Вањкка.** Йурат, калăп.

**Анна.** Ну, сывпул. (Тухса карĕ).

**Вањкка.** (сĕтел çине пырса ларат те, шăхăркаласа, аллине çыхнине салтма тытăнат). Хвершшăла урăх итлеместĕп ĕнтĕ. Хут те тем пултăр... Ыранран ĕçе тăратăп. (Сулахай аллине выђатат). Нимĕн те мар.

(Сасăсем илтĕнеççĕ: „Тĕлĕнмелле пулђĕха вăл!" „Ним те каламарĕççкеха!" „Темскер пулнах унта!" „Йаснă ахаљ мар!")

**Ваҫкка.** Ой-ой-ой, ҫыхас ҫасрах... (аллине хăварт ҫĕркет). Илле пиҫҫе курсан, тупата пĕтерет мана куншăн.

(Терентти, Хума, Матапайккă, Ахмет тата 2-3 кĕреҫҫĕ. Вĕсем кашни хăйсен криваҫĕсем патнелле пырса, хăшĕ урисене салтаҫҫĕ, теприсем пит ҫума хатĕрленеҫҫĕ, т. ыт. те.)

**Ваҫкка,** Мĕн пулнă, аҫă пăҫа?

**Хума.** Ăҫта?

**Ваҫкка.** Сирĕн патра. Темскер ҫинҫен калаҫса килтĕрҫке есĕр.

**Хума.** Пирĕн Илле пиҫҫепе Вĕшлене тытса карĕҫ.

**Ваҫкка.** Ăҫта тытса карĕҫ?

**Терентти.** Наҫҫалнĕк патне.

**Ваҫкка,** Мĕншĕн?

**Терентти.** Мĕншĕнне пĕлеппĕр пулсан калаҫмастпăрҫĕ те!

**Вҫакка.** Ну, мĕн пулҫĕ еппин?

**Матпайка.** Питех пĕлес килет пулсан—кай та ыйт.

**Ваҫкка.** Кĕсре хўри! Санран ыйтмаҫҫĕ. (Терентти патне пыҫĕ). Калаха, Терентти, мĕн пулҫĕ.

**Терентти.** Ытлашши ним те полман, пер пĕтĕм прикатăпа хаҫ анҫах супотнĕкрен таврăнтăмăр та, столовăйне йашка ҫима кĕтĕмĕр. Апат ҫиса ларнă ҫĕре леш комсомол Петров ҫопса пырҫĕ те, Илле пиҫҫепе Вĕшлейе срошнă ҫĕнеҫҫĕ, тесе хўнпе пĕрле исе карĕ.

**Ваҫкка.** Ма?

**Терентти** (ҫăпатине Ваҫкка сăмси патне илсе пырат). Лепле ес тăнсăр така пек. Калаппăр-ĕҫ, мане пĕлсен пер калаҫмаспăр та ун ҫинҫен. Шохăшла та-топ! (хăй вырăнĕ патнелле кайат).

**Ваҫкка.** Хм! (Айаккалла карĕ).

**Ахмет.** Ман шутпа, унта темскер таса мар йапала пур.

**Хума.** Мĕнле таса мар йапала?

**Ахмет.** Тунă вĕсем мĕн те пулин.

**Хума.** Пустуй калаçатăн, нимĕн те пулма пултараймаст. Ес хăвăн аршăнупа ан виç.

**Матапайкă.** Неснай, темле. Пăркунне пире Ђох-Ђохпа иксĕмĕре ђĕнтерђĕç те—пустуй ђĕнтерменђĕ. Таккуй пĕçерткĕ пађĕç.

**Терентти.** Но-о, ес Илле пиђђийа Ђох-Ђох пек сволăђсемпе ан танаштар. Сер ун ђуне пантит манер полса! Пурат—йосантăн, атту санăн та Ђох-Ђохпа пĕрле вăркăнмалла полађђĕ савăтран.

**Вађкка.** Конешнă, ађасем, кун пирки тавлашса тăмаллийех те çук, тепре каласан. Ну, ђĕнтернĕ тĕк—ђĕнтернĕ. Ĕç пулнă пирки ђĕннĕ ĕнтĕ, ахаљ мар. А хăрушши ним те пулма пултараймаст.

**Хума.** Еп те çаплах калатăп. Пирĕн прикатăна нимĕншĕн те айăплама пултараймаççĕ, а Илле пиђђепе Вĕшле- прикатăран ниçта та уйăрлман. Снађђăт—тођкă!

**Вађкка.** Тĕрĕс.

**Ахмет.** Килсен—пĕлетпĕр акă...

**Вађкка.** Курăпăр!

(Кĕске паусă).

**Хума** (çĕтĕк пушмаккине витĕр ђышкине кăларса). Ну-у, ађа пăђа, конђђал манăн пушмак!

**Ахмет.** Мĕн пулђĕ?

**Хума.** Пăх ара, çăварне кроккотил лађах карса пăрахрĕ. (çавăркалат). Пăтă çийесшĕн, штолĕ... Кантра никамăн та çуки?

**Матапайкă** (малараххтухрĕ). Вăл санăн мĕн... Ес манне пăхха! Малтан пăхсан—йĕм пур. Айаккисенђен пăхсан—тошă йĕм пур, темелле. А хыçалтан пăхсассăн

вара... (ç а в ă р ă н с а ç ĕ т ĕ к н е к ă т а р т а т). Никаккуй йĕм те çук!

**Пурте.** Ха-ха-ха!

**Терентти.** Сана малтипе çитмести вара?

**Матапайккă.** Сахалтарах пек туйăнат çав.

**Ахмет.** Ниђђово, çĕнĕ мотă кăларатăн—утарнĕксем тăхăнмалли мотă!

**Вађкка.** Ес мĕн каласшăн кунпа?

**Ахмет.** Нимех те мар. Пире пуринђен ытла сумахпа тăрантартаççĕ, тетĕп.

**Аерентти.** Лепле сăмахпа? Ес выçă пурăнатăн-им. Хаљ тин каçхи апат пехлесе килтĕн вĕт.

**Матапайккă.** Апађĕ—апат та вăл, тата ўте те витес пулатçкеха. Анне çуратса йанă тумтирпех пурăнма, тата утарлă ĕçлеме хĕнтерех!

**Вађкка.** Есĕр, ађасем, каллех хăвăрăн кив йурра йурлама пăхатăр пулас...

**Ахмет.** Йурласах йурламастпăр та, анђах ђасах акă сивĕ те пулат!

**Вађкка.** Пăрахăр, ађа-пăђа! Мĕнле çав есĕр шухăшламасăр калаçатăр? Рапођђи снапшени пирĕн кутаранђђен мухтанмаллах мар пулђĕ, анђах малашне вăл аванланатех! Прорыв пĕтнĕ, малалла ĕç йĕркеллĕ кайат, кунпа пĕрлех ĕнтĕ таварсем кўресси те, пурте йĕркепе пулса пыма пуçлат! Нумайййине ђăтса иртертĕмĕр, вĕçне çитсе тухрăмăр та—нăйкăшма пăхатпăр.

**Терентти.** Тĕрĕс, Вађкка!

**Хума** (В а ђ к к а н а). Ес кăна мана каларăни çак?

**Вађкка.** Вопше.

**Хума** (к ă м ă л с ă р ă н). Ку сăмахсене йышăнмастăп епĕ. Пушмака епĕ шутшĕн çеç кăтартрăм. Пошалстă малашне мĕнле пулассине лайăх пĕлетĕп епĕ.

**Матапайккă.** Епĕ те ахаљ çеç каларăмçке...

**Ахмет.** А епĕ тĕк вопше ним те каламан...

(Пурте ырăнсем çинђе. Паусă).

**Ваӊкка** (йĕмне хывса труççĕкпе çеç йулђĕ те, ђӳређе патне пырса тулалла пăхрĕ). Е-ех, çанталăк уйартса пăрахрĕ. Уйăх хăпарат, çăлтăрсем тапса тухнă... Ыран пит лайăх ĕçкунĕ пулат. (Хума краваҭĕ çине ларђĕ).

**Хума.** Çанталăкĕ хут нимех те марха вăл. Ĕçлес текене çанталăк ђăрмав мар.

**Ваӊкка** Çапах та, ђипер çанталăкра ĕçлеме аванта-рах ĕнтĕ... Меха, ђĕлĕм ђĕртсе пар (шăрпăк тыт-тарђĕ). Ыран салтса перетĕп уш, йăлăхтарђĕ, шуйттан.

(Шăп. Ратио çеç йурлат. Тĕттĕмленђĕ. Ђӳређерен уйăх ççути ӳкет. Инçетрен сехет вуникĕ хут çапни илтĕнђĕ).

**Ваӊкка** (ђĕлĕм туртат). Ман пата хĕрсем килсе карĕç, Хума.

**Хума.** Марукпа Анфиси?

**Ваӊкка.** Ийа (именет).Марука йуратса пăрахрăм епĕ, Хума... Анђах есĕ никама та ан кала...

**Хума** (кулат). Епĕ те çылăхлă вăл йенђен.

**Ваӊкка.** Мĕнле?

**Хума.** Ес ытла темскер пулнă тесе ан шутла,—ахаљ çеç. Шутсăр килĕшет пĕр хĕр.

**Ваӊкка.** Кам?

**Хума.** Леш... Астăватăни, клупра лартăмăр пĕрре. Çĕмĕрт пек хура çӳçлĕскер, камĕншђĕкре ĕçлет.

**Ваӊкка.** Астăватăп. Ниђђево хĕр...

**Хума.** Йĕркесĕр лайăх! Хăй те килĕштерет мана. Епĕр кĕркунне пĕрле вĕренме кайас тетпĕр.

**Ваӊкка.** Епĕр те Марукпа пыратпăр. (Ђӳређе ани çине ухса ларђĕ). Питĕ лайăх пулат, е? Пĕрле ĕçле-рĕмĕр, пĕрле вĕренетпĕр...

**Хума**. Ан та кала. Пӗлетӗни есӗ, Вађкка, манӑн ђӗрере хаљ кашни кун темӗнле хаваслӑх хӑпарса пыраҭ. Вӑт... Каламалла та мар. Ӗҫлетпӗр, пӗрле пурӑнатпӑр, ӗҫ ӑнаҭ, йулташсем темле аванланса пыраҫҫӗ... Нимӗн те кирлӗ мар! Унтан акӑ вӗренме кӗретпӗр те... Ҫын, настойашђи ҫын пулатпӑр вӗт.

**Вађкка.** (кулаҭ). Та-а, хыта йуратса пӑрахнӑ есӗ...

**Хума**. Мӗн, тӗрӗс каламастӑпи-м?

**Вађкка**. Тӗрӗс мар теместӗп епӗ. Ман хамӑн ӑшра та тӑвӑл санђен кайа мар... Мана епӗр ђи телейлӗ вӑхӑтра пурӑннӑн туйӑнаҭ.

**Хума**. Телейлӗ мари-м? Аттесен иртнӗ пурнӑҫӗпе танаштарсан—питӗ телейлӗ ҫав епӗр!

**Вађкка** (сиксе анђӗ). Ну, ыран ӗҫе тухатӑп. (Хӑрах аллипе „фискуљттурӑ“ туса илет). Выртса ҫывӑрас хаљ.

(Пурте выртаҫҫӗ. Паусӑ. Ђурђерен Илле пиђђепе Вӗшле пуҫӗсем курӑнаҫҫӗ).

**Вӗшле** (шӑппӑнтарах). Мӗнле тӑватпӑр, Илле пиђђе: кунтанах вӑрататпӑри, ай урӑхла?

**Илле пиђђе** (шалалла пӑхса, кулса). Тавай кунтанах!

**Вӗшле**. Ђармастӑни?

**Илле пиђђе**. Йарапар! (Аллипе сулђӗ те, пӑрӑнђӗ).

**Вӗшле** (кӑшкӑраҭ). Встава-ай! Встава-ай! (Кукленђӗ).

(Паракрисем пӗрин хыҫҫӑн сиксе тӑма пуҫлаҫҫӗ).

**Хума**. Мӗн ку?

**Терентти**. Кам ҫонат?

**Вађкка**. Кам кӑшкӑрђӗ?

**Ахмет** (тӱрех вырӑнне пуҫтарса ҫеклерӗ). Ӑҫталла тармалла?

**Вĕшле** (ç ĕ к л е н с е). Урра-а! (К у к л е н ђ ĕ).

**Вађкка** (ђ ӳ р е ђ е  п а т н е  у т к ă н ђ ĕ  т е,  ă н а  х и р ĕ ç  В ĕ ш л е  т ă ђ ĕ). Мĕн кăшкăратăн есĕ? (П у р т е  ђ у п с а  п ы ђ ĕ ç).

**Хума**. Мĕн хуликанит тăватăн?

**Терентти**. Усĕр штолĕ-есĕ?

**Ахмет**. Ма çывăрма памастăн?

**Матапайккă**. Хăлха ђикки шыратни?

**Вĕшле** (ђ ӳ р е ђ е р е н  к ĕ р с е  к р а в а т  ç и н е  т ă-ђ ĕ). Стоп, машшина! Шăп! Ман шутпа, есĕр мана вăрç-ма пултараймастăр...

**Матапайкă**. Што са корођ есĕ?

**Вĕшле**. Короđне корођ мар, но... Как калас сире.. Ур-ра-а! Ур-ра!

**Терентти**. Ес... Ес окмака йерни номай полати?

**Вĕшле**. Ху окмак! Кĕр, Илле пиђђе.

(И л л е  п и ђ ђ е  пĕр тĕрке тумтир, тата пушмаксем çĕклесе кĕрсе сĕтел çине пăрахрĕ. В ĕ ш л е  креват çинђен тӳрех сĕтел çине сиксе хăпарђе).

**Вĕшле**. Куртăри? Çак мĕн вăл? Стой-стой, никам та ним те ан шарла!

**Вађкка**. Преми?

**Хума**. Мĕнле пађĕç?

**Вĕшле**. Стой-стой-стой! Шăп! Сăмах Илле пиђђене паратăп...

**Илле пиђђе** (м а л а р а х  т у х р ĕ). Пире кăна, ађсе-мĕр... Лайăх ĕçленĕшĕн пађĕç... Пĕр пуссăр-мĕнсĕр, парнелле!

**Пурте**. Ђăнахи?

**Вĕшле**. Стой-стой-стой!

**Илле пиђђе**. Мейĕр, матур ĕçленĕшĕн илĕр те, хăвăр ађасене валеçсе парăр, малашне те çавнашкалах ĕçлĕр, терĕç... Парнесене пухура, мĕн пур рапођђисем умĕнђе

параççĕ, анђах пире тӳрех пађĕç, мăншĕн тесен—авă! (сĕтĕк ђĕркуççине кăтартрĕ). Кайран пуху урлă иртереççĕ. Урăх-нимĕн те çук.

**Вађкка**. А мĕнле? Мĕнле пулђĕ вăл?

**Вĕшле**. Ун çинђен ыйту кайран пулат! А халĕ—илĕр тавай! Кашнине пĕрер коçтумпа пушмак.

(Пурте хăвăрт тăхăнма тытăнаççĕ).

**Терентти**. Ну, ку покранимĕр парне!

**Ахмет**. Пик йакшă, иптешлер, пи-ик йакшă!

**Хума**. Епĕ кун пек шалавар ăшне çуралнăранпа та кĕрсе курман.

**Матапэйккă**. Ну, кĕтменђђĕ кăна. Хĕрсем патне каймалли çеç йулђĕ...

**Вађкка** (хăй труççĕкпе, аллине пушмак çĕкленĕ, хулпуççи урлă шалавар çакса йанă) Ађа-пăђа йулташсем! Куратăри, лайăх ĕçлесен мĕн пулат? Прорывĕ те пĕтет, хамăра та тае тăваççĕ. Пайан кунђен епĕр лайăх ĕçлерĕмĕр, анђах халђ, хамăра çакнашкал тав тунă хыççăн,—пирĕн тата вирлĕрех ĕçлемелле... йулташсем...

**Илле пиђђе** (çĕнĕ тумтир тăхăннă). Кăтартар хамăрăн вăйхăвата, ађасем! Леш хайхи, ђăвашсем ĕçлеме пултарайманççĕ, текен Виктăрăв йышшисене пурне те сăмсисене шăлса йарар, мат йево куритсă! Вĕсене кăтартар та, хамăр хыççăн ыттисене те илсе пырар! Пурте вĕренђђĕр утарнĕксем пек ĕçлеме, пурте пиртен пример илђђĕр, йоккăрмаккăр! Çапла-и?

**Пурте**. Çапла!

**Илле пиђђе**. Нашмем лайăхрах, е?

**Пурте**. Нашмем!

(Вађкка купăспа „Яблочко“ кĕввине туртса йађĕ. Пурте ташлама пуçларĕç. Малтан вăраххăн, унтан хăвăртрах... Ташлакă май ала çупаççĕ, шавлаççе).

**Илле пиђђе** (а л л и н е ç ĕ к л е р ĕ). Çитет! Ђарăнăр, ађасем. Ыран ирех ĕçе тухмалла,—кĕçĕр канас пулат. Куратăр—çурçĕр паçăрах иртнĕ. Савăнмалли вăхăтсем—малтаха. Спат!

(Çутă сӳнет. Çутă тепĕр хут çутăлнă çĕре—пурте сывăраççĕ. Ђылай тăрсан У л а н к а й кĕрет. Вăл унталла пахат, кунталла,—такама шырат, анђах тупаймаст, кроват патенђен кроват патне ђупкалат. Йулашкинђен вара И л л е п и ђ ђ е кравађĕ патне пырса тăрат).

**Уланкай** (а й а к а л л а). Пулĕши, пулмĕши? (И л л е п и ђ ђ е н е). Йулташ, вăранха... Илле пиђђе! Вăран, тетĕп... (ђ ы л а й ђ ђ е н в ă р а т м а т ă р ă ш а т).

**Илле пиђђе** (в ă р а н с а т ă р у к т ă р с а л а р ђ ĕ). Мĕн пулнă? Ма килтĕн есĕ кунта?

**Уланкай**. Килмелле пулђĕ, пĕр ĕç пур...

**Илле пиђђе**. Мĕнле ĕç?

**Уланкай** (п ă л х а н а т). Ес пĕлетĕнха вĕт... Прорыв пĕтрĕ ĕнтĕ, ырантан пуçласа пĕтĕм ĕç йĕркеллĕ пулса пымалла, ырантан хăш пĕр тсехсенђе монтташ пуçланмалла...

**Уланкай**. Пĕр йапала пулса çитмен пирĕн.

**Илле пиђђе**. Мĕнле йапала?

**Уланкай**. Ĕнер каçхине стантсăран савăта килекен ђукунçул йуппине туса пĕтерђĕç...

**Илле пиђђе**. Пĕлетĕп... Темскер пăсăлнă-им?

**Уланкай**. Çук, пăсăлман... Хаљ çеç стантсăран телефонпа пĕлтерђĕç: çурçĕр иртсен виç сехетре тимĕр конструксисем тийенĕ пуйăс кăларса йаратпăр, тет. Пилĕк сехет тĕлне вăл кунта пулмалла... А пирĕн çулне туса пĕтерсен нимĕн те пуçтарман. Çулсем çинђе темскер шуйттанĕ те пур... Вăт, çавсене тасатасђĕ тăваттă çурăђђен. Мĕнле шутлатăн ес, е? Май килетши?

**Илле пиђђе** (ш у х ă ш а  к а й н ă  п е к). Çулсене тасатмалла, тетĕн?

**Уланкай**. Çапла çав. Тасатмасан пуйăсăн савăта çитиђђенех ђаранса тăмалла пулат. Кам пĕлет—тен авари те пулма пултарĕ. Çитменнине монтташа пуçласси темиçе кун кайа йулма пултарат. А пире, ху пĕлен, кашни минут хаклă...

**Илле пиђђе**. Так, так... Ирђђени?

**Уланкай**. Да, пиллĕкђен...

**Илле пиђђе** (а л л и н е  п а р а т). Йурĕ! Тăвăпăр! Шанма пултаратăн. Тасататпăр.

**Уланкай**. Питĕ лайăх пулĕђђĕ, йулташ.

**Илле пиђђе**. Тăватпăр!

**Уланкай**. Апла пулсан—епĕ кайатăп. Тата пĕр икĕ прикатăна вăратас пулатха...

(Алăк патнелле уткăнат. Ăна хирĕç  С а в а р и н п а  Т у п ă в  ђупса кĕреççĕ).

**Саварин**. Ну, мĕнле?

**Уланкай**. Лайăх.

**Туп в**. Килĕшрĕçи?

**Уланкай**. Пĕр сăмахсăрах. Сирĕн хăвăрăн мĕнле?

**Саварин**. Çавнашкалах. Виçĕ паракран харăс тухаççĕ.

**Уланкай**. Ну, апла пулсан—карăмăр малалла!

**Саварин**. Карăмăр çав!

(Тухса кайаççĕ. И л л е  п и ђ ђ е  самантлăх шухăша кайат).

**Илле пиђђе** (х ă й н е  т ĕ л л ĕ н). Йепле-ши? Парăнмĕçши манăн ађасем? Вĕт пайан ахаљ те сахалтан вунпилĕк сехет ĕçленĕ (х ы т т ă н). Ађасем! Тăрăр! Тăрăр, тетĕп!

(Çывракансем пĕрин хыççăн тепри сиксе тăраççĕ).

**Темиçен**. Мĕн пулнă, Илле пиђђе?

**Илле пиҗҗе** (аллине ҫӗклерӗ). Нимӗн те ан ыйтăр. Епӗ хам ыйтасшăн сиртен...

**Темиҫен.** Мӗн ҫинҗен?

**Илле пиҗҗе.** Епӗр утарнӗксеми?

**Пурте.** Утарнӗксем!

**Илле пиҗҗе** Епӗр стройккăра пуринҗен вăйлă ҫапăҫма сăмах патăмăри?

**Пурте.** Патăмăр!

**Илле пиҗҗе.** Апла пулсан—пирӗн халех штурма каймалла.

**Темиҫен.** Ăҫта? Пӗтнӗ вӗт прорыв!

**Илле пиҗҗе.** Пӗтнӗ те, пӗтӗмпех мар. Темиҫе сехетрен савăта тимӗр консгруксисем тийенӗ пӗрремӗш пуйăс килмелле, ҫавна ваҗҗи ҫул тасатмалла. Ку ӗнтӗ йулашки, татăклă штурм пулать. Кайатпăри?

**Пурте** (аллисене ҫӗклесе). Кайатпăр!

(Пурте алăк патнелле уткăнҗӗҫ. Ҫутă сӳнҗӗ. Җылай вăхăт „Утарнӗксен маршӗ“ йурă йанрать. Майпен йурă инҫетелле кайса пырать. Вăл илтӗнми пулнă ҫӗре—инҫетрен пуйăс ҫывхарнă сасă илтӗнме пуҫлать. Унпа пӗрлех „Наш паровоз летит вперед“ йурă кӗвви ҫуралать, пăравус сасси вăйланнă май йурă та вăйланать).

**1-мӗш сасă.** Пуйăс киле-ет!

**2-мӗш сасă.** Пӗрремӗш пуйăс!

**3-мӗш сасă.** Ҫывхарсах, ҫывхарсах пырать...

**4-мӗш сасă.** **Никам та, нихăҫан та тытса җарас ҫук пирӗн пуйăса!**

(Пуйăс килнӗ сасă ҫывăхрах. „Интернатсионал“ кӗвви ҫуралса йанрама пуҫларӗ. Пăравус кăшкăртрӗ. Шав җакма пуҫларӗ. Вăл пӗтӗмпех ҫухалҗӗ).

---

# РЕТАКТӐРТАН.

„Хӑват“ авттӑрӑн трамӑллӑ шанӑрпа ҫырнӑ пӗррӗмӗш происветенийӗ.

Ђӑваш ӗҫхалӑхӗ те, комуниссен парттийӗ йертсе пынипе ытти халӑхсемпе пӗрлех сотсиалисӑмлӑ строиттӗлствӑшӑн мӗнле кӗрешнине ҫутатса парса, Л. Аккакӑв хӑйӗн пйессине массӑна тата та ытларах строиттӗлствӑ ыйтӑвӗсем тавра мопилисатсилес шухӑшпа ҫырнӑ. Пайанхи ӗҫпаттӑрӗсене, ӗҫ ӳсӗмне ҫӗклекен ҫӗнӗ майсене, ӗҫе ђӑрмавлакан вӑйсем пуррине йаланах асра тытса вӗсене пит те ҫирӗппӗн кӗрешсе ҫӗнсе пымаллине кӑтартас тенӗ вӑл. Пит те пысӑк ыйтусем. Кирлӗрен кирлӗ темӑ. Ҫавӑнпа ӑна ҫырмашкӑн та пысӑк ӑсталӑх, пысӑк вӑй кирли паллах. Авттӑр хӑйуллӑнах ҫак ыйтусене илсе тӑрӑшса ӗҫлени курӑнаť.

Ҫапах та, пйессӑра кӑлтӑксем сахал мар, пысӑк ҫитменлӗхсемех пур. Вӗсем авттӑр трамӑллӑ происветенисем ҫырма хӑнӑхайманнине, ҫак пысӑк темӑна ҫӗнсех илейменнине палӑртаҫҫӗ.

Анђах „Хӑват“ уншӑн пӗтӗмӗшпех хурласа тӑкмалла происветени мар. Илемлӗ литтераттур фронтӗнђе пуринђен ытла стсенӑ тӗлӗшпе ӗҫлекенсем, ун пирки сотершани тӗлӗшпе те, ӑна мӗнле выљаса кӑтартасси йенђен те сӑмах хускатассӑн туйӑнаť. Ӑраснах стсенӑ ҫинђе кӑтартасси, йалта выљама ђӑрмавлӑхсем ђылайӑи калаҫтарӗ. Хам йенђен епӗ вулакансене кӗскен те пулин ҫакӑн пек кӑтартусем парасшӑн.

Сотершанине вулакан ђасах ӑнланса илмелле. Сотершанипе аван йенӗсем ҫинђен калаҫса тӑмасӑрах, „Хӑват“-ӑн хӑш-пӗр паллӑрах ҫитменлӗхӗсене илер.

Пĕр çитменлĕхĕ—пйессăпа нумай ыйтусене çавăрса илесшĕн пулни, тата пĕр вăхăтрах вăл вуламалли хутошĕствăллă происветени те, стсенă ваљљи те пултăр тени. Ытти çитменлĕхсем ђылайĕшĕ çакăнтан килеççĕ.

Тепĕр çитменлĕхĕ—мĕн савăђĕ тунине пйессăра уççăн кăтартманни, ун çинђен асăнма шикленерех тăрса, „вопшђе“ стройккă тесе карттинăсене иртерсе йани. Савăтне мĕнле маттерйалсенђен туни çинђен, ĕçĕн, пулас савăтăн технĕклă протсесĕсене кăтартма сĕнместĕп епĕ. Строиттĕлствăшăн йепле кĕрешнине, строиттĕлсен сăн-сăпатне кăтартма тăрăшни—ĕçри, клас кĕрешĕвĕнђи етемсен отношенисене мала хурса çырни—тĕрĕс çул авттăрăн. Анђах та мĕнле савăт тунине тӳрех калани пйессăна аванлатнă пулĕђђĕ кăна. Авттăр Ђулхулари автосавăта тунă ђухнехи фактăсемпе усă курнă (хăйĕн „Стройккă паттăрĕсем“ йатлă ођђĕркĕнђи фактсемех). „Хăват“ пĕтĕмĕшпе илсен 1929—31-мĕш çулсем хушшинђи фактсем тавра, Çĕмĕрлери кăмпинат строиттĕлстви ĕçĕсем тавра калăпланни сисĕнет (Хусантан килекен ђукунçул, Сăр хĕрĕнђи маттерйалсем, лесопиљнăй тсеха туса çитерни, ђăвашсем ытларах ĕçлени, тата ытти те). Анђах пйессăри строиттĕлствă пуçлăхĕ (Саварин), партколлектив çекреттарĕ (Тупăв) мĕн савăђĕшĕн вăй хурса ĕçлемеллине асăнмасăр калаçни,—„респуплĕк умĕнђи парăмсем“ кăна тени—вĕсен сăнĕсене „пушăлатса“, вăйсăрлатат. Сăмахсем ывăтма çеç йуратакан типсем пек туса хурат. Рапођђисем хушшинђе кайа йулнă сăйсене, çесоннĕксене утарнĕкле хĕрӳ ĕçе тăма йăхăрни те çавăнпа вĕсен вирлĕн тухаймаст. Пирĕн савăта вăхăтра ĕçе йани промышлĕннăçа та йалхуçалăхне те çавна, çавна парат, çав йенђен пысăк усă кӳмелле... тесе примерсем панă пулсан, тата ĕненгермелле тух ĕђђĕ.

Ытти авттăрсен происветенийĕсем йевĕрлĕ вырăнсем пурри те пйессăн пĕр çитменлĕхĕ пулса тăрат. (Схемăллă шаплон—строиттĕлствă пуçлăхĕ—ђăн-ђăн керой строиттĕл, помошнĕкĕ—тăшман, вретиттĕл, парт-коллектив çекреттарĕ—лайăх тип, профсойусра ĕçлекен—пăсăк, йурату ыйтăвĕсем, т. ыт.).

Пйессăшăн питех паха мар тиалăксене тăсса кайса пйессăна вăрăмлатни, курса ларнă ђухне тунсăхлаттармалларах вырăнсем, вырăсла сăмах çаврăнăçĕсем ытлашширеххи, йуррисем пуррипе пĕрех вырăсли, т. ыт. кăлтăксем те сисĕнеççĕ пйессăра.

Ђи пысăк çитменлĕхĕ—авттăр пирĕн халђхи стсенă уçловийĕсене асра тытманни.

Ку пйессăна хулари пысăк театăрсенђе кăна выђама пулат. Районсенђе, йалти стсенă тĕлĕшпе ĕçлекенсем—халĕ йала валђђи, клупсенђе лартма тем пекех пйессă кĕтсе тăраканскерсем—ку пйессăна вуланă хыççăн малтанах хăраса та кайĕç. Пйессăра выђакан 25 çын кирлĕ, иккĕллĕ стсенăсем, стсенă хыçĕнђи епписотсем, теккоратси улăштарасси, пианинăсем-мĕнсем, т. ыт.

Питех тарăхма, йе хăрама кирлĕ мар куншăн. Происветенийе вуласа усă курнисĕр пуçне, уйрăм пайĕсене илсе, йе кĕскетсе йалта та лартма пулат. Решиççора ĕнтĕ ђăнах та пысăк ĕç тивет. Хам йенђен епĕ, стсенă ĕçне питех пĕлместĕп пулин те, ку пйесса йалти стсенă çинђе çакăн пек улăштарса лартма сĕнĕттĕм.

1-мĕш карттинне кĕскетсе çăмăллатмалла. Иккĕллĕ стсенă кирлĕ мар. Саваринсем пыракан вакунах савăта кайакан колхоçнĕксем кĕрсе вырнаçнă пек тăвас. Вĕсем вырăнсем, полккăсем йышăнса калаçнисене кăларса ывăтмалла. Ку карттина пĕтĕмĕшпех пăрахмасан та, пĕрер сыпăкне çеç выђаса пама йурат.

**I-мӗш карттин** пӗтӗмӗшпех кайма пултарат. Ун ҫумне 4-мӗш карттинран Ђох-Ђохсен, пӗйантсӑ ҫесоннӗксен лађакалӑхне, сийенлекенсен ӗҫне кӑтартакан вырӑнсене куҫарма пулат. Кармэђпе йанраса кайнӑ хыҫҫӑн, стсенӑ хыҫӗнђе: „Ей, хоспота теҫетнӗк",—тенинђен пуҫласа—„Тфу, питсӗрсем" тени таран кӑшкӑрса калаҫђӑр. Хирӗҫнине те кӑштах кӗртме йурат. Саварин алӑкне уҫса сӑмах ђӗннӗ хыҫҫӑн ун пӳлӗмне кӗрсе калаҫђӑр.

Саварин: мӗн пулнӑ унта сирӗн? тесе ыйтат. Мирон: Вӗсем хак пирки... т. ыт. Илле пиђђе те кӗтӗр. Анђах Сαваринӑн ӳкӗтлесе каланӑ сӑмахӗсене, т. ыттисене те кӗскетмелле, унсӑрӑн карттин вӑрӑмланса кайат тата III-мӗш карттина хатӗрленсе илме кирлине манас пулмаст.

**III мӗш карттина** пӗтӗмӗшпех выђаса пама йурат. Ытла та вӑрӑмӑн туйӑнасран пӗр йевӗрлӗн пыракан „токлатсене" кӗскетес пулат. Мӗнле кӗскетессине решиҫҫор хӑйех сиссе, ӑҫта лартассине, пйессӑ курма пыракансем камсем иккенне асра тытса кӗскетме пултарат.

**IV-мӗш карттин** тухса ӳкет. II-мӗш карттина куҫнисемсӗр пуҫне ку карттинра ђи йулашки пайӗ ҫеҫ хаклӑрах. Унпа III-мӗш карттин вӑхӑтӗнђе усӑ курма пӗлсен аванђђӗ.

**V-мӗш карттинне** пианинӑсем вырӑнне киттарсем илкелесе кӑтартма пулат. Ку карттинне ларгмасан та ӗҫ ытлашшийех пӑсӑлас ҫук. Маринӗн иншенер вретиттӗлсемпе кайманнине кӑтартакан вырӑна ҫеҫ сайа йамалла мар. Ӑна Виктӑрпа Ленӑ „...йе мана паллама хӑтланаканне" тесе калаҫнӑ вырӑнтан пуҫласа, „епӗ вӑт йултӑм" тенӗ таран VI-мӗш карттин умне куҫармалла. Мађӑпа Лермӑнттӑв пирки пыракан стсенӑсене пит те кӗскетмелле. Луккин кирлӗ мар. Ку сыпӑк хыҫҫӑн ђар-

шав хупса, çутă сӳнтерсе, кăшт тăмалла та, тӳрех VI-мĕш карттина пуçламалла.

VII-пе VIII-мĕш карттинсем çаплипех йулаççĕ.

Çакăнта каланисене туса иртерме те май çук пулсан, пйессăн уйрăм карттинĕсене лартма йурат. Сăмахран, „Фронт", „Штурм", тата „Татăклă çапăçу" карттинсене лартма сĕнетпĕр.

Вырăнсенђи стсенăсем пысăк пйессăсене лартма çителĕклĕ мар пирки, çуллахи вăхăтра пйессăна тулта, уçă стсенăсем çинђе выљасан аван пулмалла.

Вырăнсенђе пйессăна лартакансем, тата пйессăна ахаљ вулакансем хăйсен шухăшĕсене пĕлтерсен аванђђĕ. Вăл автăршăн та, ытти писсаттĕлсемшĕн те малашнехи ĕçре усă парĕђђĕ. Автăрăн атрĕсĕ: г. Чебоксары, Чебоксарская, 3, Агакову Л.

Ретактăрĕ.

Закончено в наборе 30-го июня. Вышла из печати 17-го июля 1932 г.
Ст. ф. 72×110 с./м. 6/$^3$$_4$ печ. листа· 234.684 печ знаков.

ЧУВАШ
КНИЖНАЯ
г. Чебо... Чуваш...
Асамат..., № 2...

Хакĕ 80 пус
Цена 80 коп.

Х—6

Леонид Агаков

# МОЩЬ

пьеса

Чувашгосиздат Чебоксары 1932